92:К.81Чув-9
С32
Ч-40844

Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

Шупашкар
2007

Национальная библиотека ЧР
4-040844

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ
обозначенного здесь срока

К
Обязат. экз.
92; К 81 Чув-9
С 32

Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳпе ăслăлăх министерстви
Федераллă вĕрентӳ агентстви
Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

*Справочник*

Хушса тӳрлетнĕ 4-мĕш кăларăм

Цр

Шупашкар
2007

ББК 81. 635
С 322

Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви усă курма ирĕк панă

Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева. Чăваш чĕлхи. Справочник. – Шупашкар: И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ, 2007. – 160 с.

Редактор –
филологи ăсăлăхĕсен кандидачĕ
А.Е. Горшков доцент

Рецензентсем:
филологи ăслăлăхĕсен докторĕ
Н.П. Петров профессор,
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ
А.Д. Ахвандерова доцент,
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ
Ю.М. Виноградов профессор

ПРОВЕРЕНО
20 16 МАР 2017

Ч-40844

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Кĕнекере аслă шкулăн чăваш филологи факультетĕнче чăваш чĕлхине вĕрентмелли материалăн паллăрах ыйтăвĕсене таблицăсенче ăнлантарса панă.

© Сергеев Л.П., Андреева Е.А., 2007
© ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева», 2007

## УМСĂМАХ

Ку пособие аслă шкулсенче, училищĕсемпе техникумсенче вĕренекенсене, чăваш чĕлхипе литература учителĕсене, заочник студентсене пулăшас тĕллевпе çырса хатĕрленĕ.

Пособи пуçламăшĕнче Чăваш Республикин саккунĕсенчен — «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» тата «Вĕренӳ çинчен» илнĕ уйрăм статьясене, тăван чĕлхе ыйтăвĕсемпе çыхăннăскерсене, çырса панă. Ун хыççăн чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхи пулнине, чăваш чĕлхине тĕпчес ĕçĕн кĕске историне кăтартакан материалсене вырнаçтарнă.

Кĕнекери тĕп материал лексикологи, фразеологи, лексикографи, фонетикăпа орфоэпи, графикăпа орфогарфи, сăмах пулăвĕ тата морфологи ыйтăвĕсемпе çыхăннă. Кунта чăваш чĕлхин сасă тытăмне, тĕрлĕ пуплев пайĕсен йĕркине, пулăвне, вĕçленӳпе сăпатлану формисене тата ытти тĕрлĕ уйрăмлăхсене таблицăсемпе схемăсем туса кăтартнă. Вĕсен тĕллевĕ — тăван чĕлхе тытăмне, ун факчĕсене лайăхрах ăнланса илме, пĕлĕве тарăнрах çирĕплетме пулăшасси. Кирлĕ çĕрте методика асăрхаттарăвĕсем те панă.

Пособири таблицăсемпе схемăсем аслă шкулта ĕçлекенсене лекцисемпе практика занятийĕсем ирттернĕ чух усă курма юрăхлă. Студентсене вăл практика занятийĕсене хатĕрленнĕ тата тĕрĕслев ĕçĕсене çырнă чух усă кӳрессе шанас килет. Çавăн пекех кунти материал экзаменсемпе зачетсене хатĕрленме те пулăшĕ.

Чăваш чĕлхипе литература учителĕсене те (шкулта ĕçлет-и вăл, училищĕре-и, е пĕр-пĕр техникумра — пурпĕр) çак пособи урока хатĕрленнĕ чухне кирлĕ пулма пултарать. Çавăнпа унăн материалне справочник майлă хатĕрленĕ, тĕслĕхсем панă. Улшăнакан пуплев пайĕсен вĕçленӳпе сăпатланури уйрăмлăхĕсене пурне те çырса кăтартни тĕрлĕ сăмахсене вĕçлеме е сăпатлама пулăшать, сăмахсен грамматика формисене орфографи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырма вĕрентет.

Пособи вĕçĕнче хушса пани пур. Унта фонетикăпа графика, сăмах тытăмĕпе морфологи тишкерĕвĕн йĕркисене çырса кăтартнă, вĕсене тĕслĕхсемпе ăнлантарса панă.

## ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНӖ
## ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЧӖЛХЕСЕМ ҪИНЧЕН

**2 статья. Чӑваш Республикин патшалӑх чӗлхисем**

1. Чӑваш тата вырӑс чӗлхисем Чӑваш Республикин патшалӑх чӗлхисем пулса тӑраҫҫӗ.

Чӑваш тата вырӑс чӗлхисен статусне патшалӑх чӗлхисем вырӑнне хуни Раҫҫей Федерацийӗн Чӑваш Республикинче пурӑнакан ытти халӑхсене тӑван чӗлхепе усӑ курмалли тата аталантармалли прависене хӗсӗрлемест.

2. Чӑваш чӗлхин алфавичӗ кириллица графики ҫинче никӗсленет.

**3 статья. Чӑваш Республикинче чӗлхесем пӗр тан пулмалли тата вӗсене хӳтӗлемелли гарантисем**

1. 1. Чӑваш Республикинче кирек хӑш наци гражданинӗн хӑйӗн тӑван чӗлхине тата культурине аталантарма право пуррине йышӑнаҫҫӗ тата ӑна хӳтӗлеҫҫӗ.

2. Чӑваш Республики ҫынна унӑн йӑх-ӑру несӗлӗ, социалла пурнӑҫӗ, пурлӑхӗ мӗнле пулнине, вӑл мӗнле раса тата наци ҫынни, арҫын е хӗрарӑм пулнине пӑхмасӑр тӑван чӗлхепе усӑ курма, хутшӑнура, воспитани ӗҫӗнче, вӗренӳре тата пултарулӑх ӗҫӗнче кирек мӗнле чӗлхепе те усӑ курма гаранти парать.

**7 статья. Воспитанипе вӗрентӳ чӗлхине суйласа илмелли право**

1. Раҫҫей Федерацийӗн Чӑваш Республикин территорийӗнче пурӑнакан гражданӗсем воспитанипе вӗрентӳ чӗлхине суйласа илме пултараҫҫӗ.

2. Граждансен хӑйсен тӑван чӗлхипе пӗтӗмӗшле тӗп пӗлӳ илме тата вӗрентӳ тытӑмӗ паракан майсен шайӗнче вӗрентӳпе воспитани чӗлхине суйласа илме право пур.

Граждансен тăван чĕлхепе вĕренсе пĕлӳ илмелли правине пурнăçлама тивĕçлĕ вĕренӳ учрежденийĕсем, классем, ушкăнсем кирлĕ чухлĕ уçаççĕ, вĕсене ĕçлеме условисем туса параççĕ.

3. Чăваш Республикинчи мĕн пур вĕренӳ учрежденийĕсенче вĕренĕвĕн ытти чĕлхипе пĕрле чăваш чĕлхине предмет шучĕпе вĕренеççĕ

4. Ачана вĕренӳ учрежденийĕнче вĕрентсе воспитани пама усă куракан ку е вăл чĕлхене суйласа илеси ачасен ашшĕ-амăшĕсенчен е Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн вĕсем вырăнне юлнă çынсенчен килет.

5. Раççей Федерацийĕн сакунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн вĕренӳ учрежденийĕнче воспитани ĕçне мĕнле чĕлхепе (чĕлхесемпе) вĕренсе йĕркелемеллине вĕренӳ учрежденийĕн учредителĕ (учредителĕсем) тата (е) вĕренӳ учрежденийĕн уставĕпе палăртаççĕ.

## 18. Наукăра усă куракан чĕлхесем

Чăваш Республикинче наука ĕçĕсен чĕлхине ирĕклĕ суйласа илме пулать. Чăваш чĕлхипе наукăра усă курма условисем туса параççĕ.

## 19. Культурăра усă курмалли чĕлхе

Чĕлхе наци культурине пурнăçа кĕртмелли тата аталантармалли никĕс тата хатĕр пулса тăрать. Чăваш Республикинче культурăра Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан мĕн пур халăхсен чĕлхисемпе усă кураççĕ.

2. Чăваш Республики, Раççей Федерацийĕн ытти субъекчĕсемпе килĕшӳсем туса, чăваш культурипе чĕлхине аталантарма пулăшать, наци кадрĕсем хатĕрлес, вĕренӳ литературипе, илемлĕ, наука тата ытти тĕрлĕ литературăпа тивĕçтерес, кулленхи хаçат кăларăмĕсене сарас, телерадиопрограммăсем хатĕрлес ĕçе хутшăнать.

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АСЛĂ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĚ ЧĂВАШ ЧĚЛХИН КУННЕ ТУСА ХУРАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННĂ ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕ çапла йышăнать:

1. Чăваш чĕлхин кунне туса хурас, ăна чăвашсене çутта кăларнă, чăвашсен çĕнĕ çырулăхне йĕркелесе янă И.Я. Яковлев çуралнă кун — ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче паллă тăвас.

2. Чăваш Республикин Халăха вĕрентес ĕç, наукăпа аслă шкул министерствин, Культура министерствин чăваш çырулăхне халалланă мероприятисен ярăмне палăртмалла. Çак тĕллевпе шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсенче, шкулсенче, училищĕсенче, аслă тата специальноçпа вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсенче, культура учрежденийĕсенче, театр-концерт предприятийĕсенче концертсемпе спектакльсем, массăллă культура мероприятийĕсем, кĕнеке выставкисем, поэзи ирĕсем, тематика каçĕсем, вулакансен конференцийĕсем, литературăпа искусство деятелĕсемпе тĕлпулусем тата ытти мероприятисем ирттерессине йĕркелемелле.

3. Чăваш патшалăх телевиденипе радиовещани компанийĕн, хаçатсемпе журналсен редакцийĕсен Чăваш чĕлхин кунне уявланине анлăн çутатмалла.

Чăваш Республикин Аслă Совет
Председателĕн Пĕрремĕш заместителĕ *Б. Яковлев*

Шупашкар хули,
1992 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕ.

# ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН ЙЫШĔ

**Чăваш халăхĕн йышĕ ÿссе пыни**

| Çулсем | Пĕтĕмпе (пин çын) | Вăл шутра хальхи Чăваш Республикинче | Республика тулашĕнче |
|---|---|---|---|
| 1719–1723 | 217,9 | 194,0 | 23,9 |
| 1795 | 352,0 | 233,9 | 118,1 |
| 1897 | 843,8 | 542,4 | 301,4 |
| 1926 | 1117,0 | 667,7 | 449,3 |
| 1979 | 1751,4 | 887,7 | 863,7 |
| 1989 | 1842,3 | 906,9 | 935,4 |

**Чăвашсем ăçта пурăннине кăтартакан таблица**

| Территорисем | Миçе çын | Территорисем | Миçе çын |
|---|---|---|---|
| Раççей | 1773645 | Латви | 1509 |
| Казахстан | 22305 | Молдави | 1204 |
| Украина | 20395 | Эстони | 1178 |
| Узбекистан | 10074 | Литва | 687 |
| Белорусси | 3223 | Грузи | 542 |
| Туркмени | 2281 | Азербайджан | 489 |
| Таджикистан | 2512 | Армени | 123 |
| Киргизи | 2079 | | |

**Атăлпа Урал тăрăхĕнчи чăвашсен йышĕ (1989 çулхи перепись тăрăх)**

| Территорисем | Миçе çын (пинпе) | Пĕтĕм чăваш йышĕн миçе процентчĕ |
|---|---|---|
| Пĕтĕмпе | 1842,3 | 100 |
| Вăл шутра: | | |
| Чăваш Республики | 906,9 | 49,2 |
| Тутар Республики | 134,2 | 7,3 |
| Пушкăрт Республики | 118,5 | 6,4 |
| Самар облаçĕ | 117,9 | 6,4 |
| Ульяновск облаçĕ | 116,5 | 6,3 |
| Оренбург облаçĕ | 21,5 | 1,2 |
| Саратов облаçĕ | 20,6 | 1,2 |
| Пенза облаçĕ | 7,0 | 0,4 |

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ – ТĔРĔК ЧĔЛХИ

**Тĕрĕк чĕлхисем**

| I. Хĕвел анăç тĕрĕк чĕлхисем | II. Хĕвел тухăç тĕрĕк чĕлхисем |
|---|---|
| азербайджан, балкан тĕрĕк, гагауз, казах, караим, каракалпак, карачай-балкар, кумык, крым тутар, нухай, пушкăрт, çĕнĕ уйгур, трухмен, турккă, туркмен, тутар, узбек, чăваш | алтай, камасин, кăркăс, сарă уйгур, тофа, тува, хакас, чулым тутар, шор, якут |

**Тĕрĕк сăмахĕсен танлаштаруллă таблицисем**

| Чĕлхесем | Тĕслĕхсем | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| чăваш | сухал | çӳç | куç | çил | пăр | çĕр | ту | пĕр(ре) |
| азербайдж. | саггал | сач | кэз | ел | буз | ер | даг | бир |
| алтай. | сагал | чач | ко̆с | ер | | | туу | бир |
| пушкăрт | һакал | сэс | кӳз | ел | боз | ер | тау | бер |
| казах | сакал | шаш | ко̆з | жел | мӳз | жер | тау | бир |
| каракалпак | сакал | шаш | козь | жел | муз | жер | тау | бир |
| кăркăс | сакал | чач | коз | жел | муз | жер | тоо | бир |
| кумык | сакӳал | чач | гоьз | ел | буз | ер | тав | бир |
| нухай | сакал | шаш | коьз | ел | буз | ер | тав | бир |
| тутар | сакал | чэч | кӳз | жил | боз | жир | тау | бер |
| тува | сал | бущдуту | карак | хат | дош | чер | даг | бир |
| туркмен | сакгал | сач | гэз | ел | буз | ер | даг | бир |
| узбек | сокол | соч | куз | ел | муз | ер | тог | бир |
| уйгур | сакал | чач | кэз | йел | муз | йэр | таг | бир |
| хакас | сагал | сас | харах | чил | пус | чир | таг | пир |
| якут | бытык | ас | харах | тыал | муус | сир | сыыр | биир |

**Фонетика уйрăмлăхĕсем**

| Мĕнле уйрăмлăхсем | Тĕслĕхсем |
| --- | --- |
| I. Ылмашусем:<br>1) у(о) ~ а | пуç–баш, паш, пас<br>улттă–алты, алды<br>сухал–сакал, сагал<br>сулхăн–салкын, салгын<br>урпа–арпа, арба |
| 2) х ~ к | а) сăмах пуçламăшĕнче:<br>хурлăхан–корлыган, карлыган<br>хытă–каты, гаты<br>хура–кара, кора<br>хут–кат<br>хурама–карама<br>ă)сăмах варринче тата вĕçĕнче:<br>сурăх–сарык, хурах–карак,<br>уксах–аксак, хăях–кыяк |
| 3) р ~ з | хĕр–кыз, кыс, хыс, хур–каз, газ, кас, хас<br>хуран–казан, газан, хазан, пăр–буз, боз, пос,<br>тăвар–тоз, туз |
| 4) й ~ к | юр–кар, гар, гор, юн–кан, ган, кон, йĕтĕн–кетен, каден, кеден |
| 5) л ~ ш | хĕл–кыш, гыш,кыс, кĕмĕл–кӳмӳш, кцмеш, кумуш, гӳмӳш, утмăл–алтмыш, алтмыс, олтмиш |
| 6) ç ~ й, дь, джь, ч | çул–йол, йул, жол, дьол; çĕр–йир, йэр, жер, дьер, чер; çĕнĕ–йэни, йени, яны, яна, çăка–йцке, чōке, юке; çил–йил, йел, ел, дьел, жил; çи–йи, йе, же, дьи, чи; çук–йок, йук, дьок |
| II. **К** сасă сăмах вĕçĕнче тухса ӳкни | хăйма–каймак, каймаг, коймак; хăна–кунак, кунок, конак; алă–элик, елык, илик, хăйра–кайрак; пӳрне–бармак, бармок, пармак |
| III. Сăмах пуçламăшĕнче **в** хупă сасă кĕрсе ларни | вăл–ол, ул, о, у; вăрман–урман, орман, урмон; вырăн–орын, орун; вучах–очак, одак, учак, очок; вăрçă–уруш, урыс, вăтăр–утыз, отуз, отыз; вĕç–уч, оч, ос, уш |

**Морфологири тӗп уйрӑмлӑхсем**

| Мӗнле уйрӑмлӑхсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| 1. Нум. хисеп аффиксӗ чӑваш чӗлхинче — **-сем,** ытти тӗрӗк чӗлхисенче **-лар (-лер)** тата унӑн фонетика варианчӗсем | вӑрмансем — урманнар, юлташсем — йолдашлар, ачасем — балалар, урамсем — урамнар, хӗрсем — кызлар, кыздар, студентсем — студенттер |
| 2. Чӑваш чӗлхинче пару тата тӑву падежӗсен аффиксӗсем пӗрпекленнӗ, пӗр падеж пулса тӑнӑ | сӗтеле, лашана, юлташа, вӑрмана — танл.: урманга (*чӑв.* вӑрмана) — пару пад., урманны (*чӑв.* вӑрмана) — тӑву пад. |
| 3. Чӑваш чӗлхинче ҫӗнӗ падежсем аталанса кайнӑ:<br>пӗрлелӗх падежӗ<br>ҫуклӑх падежӗ<br>пирке падежӗ<br>Ытти тӗрӗк чӗлхисенче ун пек падежсем ҫук. | <br><br>лашапа, кӗнекепе, юлташпа<br>лашасӑр, кӗнекесӗр, юлташсӑр<br>лашашӑн, кӗнекешӗн, юлташшӑн |
| 4. Камӑнлӑх форминчи сӑмахсенче нум. хисеп аффиксӗ яланах камӑнлӑх аффиксӗ хыҫҫӑн хушӑнать. Ытти тӗрӗк чӗлхисенче камӑнлӑх аффиксӗ нум. хисеп аффиксӗ хыҫҫӑн тӑрать. | хӗрӗмсем — кызларым<br>аллӑмсем — кулларым<br>аппамсем — апаларым<br>аппусем — апаларын<br>аҫусем — бабаларын<br>ҫырӑвусем — хатларим |
| 5. Чӑваш чӗлхинче хушу наклоненийӗн ҫуклӑх форми **ан** татӑкпа пулать. Ытти тӗрӗк чӗлхисенче ку формӑн ятарлӑ аффикс пур — **-ма (-ме)** | ан пыр — барма, барыма<br>ан кил — келма (*узб*)<br>ан илчӗр — алмасыннар<br>ан килӗр — келманглар (*узб*)<br>ан пуҫла — бошлама (*узб*) |

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЕ ТĔПЧЕНИН КĔСКЕ ИСТОРИЙĔ

## 1. Раççей тĕпчевçисем

### XVIII—XIX ĕмĕрсем

**Вениамин Пуцек-Григорович** (1706—1782)

Чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматикине («Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка». СПб, 1769) çырас ĕçе ертсе пыраканĕ. Кĕнекере морфологин хăш-пĕр ыйтăвĕсене тĕпченĕ. Кашни пуплев пайĕ вĕçĕнче чăвашла-вырăсла словарь пур.

**Дамаскин (Руднев Дмитрий Семенович)** (1737—1795)

11115 сăмахлă пилĕк чĕлхеллĕ словаре («Словарь языков разных народов, в Нижегородской епархии обитающих, именно: россиян, татар, чувашей, мордвы и черемис...») çырса хатĕрлес ĕçе ертсе пынă (1784—1785). Словарь пичетленсе тухман, алçырăвĕ халлĕн упранать: пĕри — Чулхула область архивĕнче, тепри, таса куçарса çырни, — Питĕрти М.Е. Салтыков-Щедрин ячĕпе хисепленекен библиотекăра.

**Виктор Петрович Вишневский** (1804—1885)

Чăваш чĕлхин иккĕмĕш грамматикин («Начертание правил чувашского языка и словарь, составленные для духовных училищ Казанской епархии». Казань, 1836) авторĕ. Кĕнекере фонетикăпа морфологие тишкернĕ. Вĕçĕнче чăвашла-вырăсла словарь панă.

**Николай Иванович Ильминский** (1822—1891)

Çĕнĕ чăваш çырулăхне тума хавхалантараканĕ тата пулăшаканĕ. «О фонетических отношениях между чувашскими и тюркскими языками» (1865) статйинче чăваш чĕлхинчи хăш-пĕр сасăсем ытти тĕрĕк чĕлхисенчи сасăсене тӳр килнине çырса кăтартнă.

**Николай Иванович Золотницкий** (1829—1880)

Чӑваш фонетикине тӗпчесе ҫырнӑ икӗ статйинче («Заметки для ознакомления с чувашским наречием. Вып. 1. Отдел звуковой». Казань, 1871, «Особенности чувашского языка, зависящие от изменения и выпуска согласных гортанных звуков». Казань, 1877.) чӑваш сӑмахӗсенчи сасӑсем хытӑлӑхпа ҫемҫелӗх тӗлӗшӗнчен килӗшсе тӑнине, хупӑ сасӑсем янӑраканнисем тата янӑраманнисем пулнине, хупӑ сасӑсем ытти тӗрӗк чӗлхисенчи хӑш сасӑсене тӳр килнине ҫырса кӑтартнӑ. 1875 ҫулта тӗпчевҫӗн «Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен» ятлӑ кӗнеки пичетленсе тухнӑ. Ку вӑл—хӑйне евӗрлӗ пирвайхи этимологи словарӗ. Ун ҫумне чӗлхепе этнографи ыйтӑвӗсене ҫутатакан 20 ытла очерк хушса панӑ.

**Александр Иванович Добролюбов** (?—?)

Чӑваш чӗлхин фонетикипе морфологине тишкерсе ҫырнӑ вӗренӳ пособийӗн («Ознакомление с фонетикой и формами чувашского языка посредством разбора и переводов оригинальных чувашских статей». Казань, 1879) авторӗ. Пособие Н.И. Золотницкий редакциленӗ.

**Никанор Алексеевич Лебедев** (1862—?)

Чӑваш чӗлхин пичетленсе тухнӑ виҫҫӗмӗш грамматикин («Пособие к изучению чувашского языка». Казань, 1894) авторӗ. Пособире сӑмах пулӑвне, ят сӑмахсен вӗҫленӗвне, глагол сӑпатланӑвне ҫырса кӑтартнӑ, хыҫсӑмахсене асӑннӑ. Тури чӑвашсен калаҫӑвӗнче *-са* (*-се*) аффикслӑ деепричасти анатри диалектри *-нӑ* (*-нӗ*) аффикслӑ причастисене тӳр килнине асӑрханӑ.

**Иван Яковлевич Яковлев** (1848—1930)

Ҫӗнӗ чӑваш ҫырулӑхне йӗркелесе яраканӗ. Малтанхи чӑвашла букварӗн авторӗ. Букварь умсӑмахӗнче («Предуведомление») чӑваш чӗлхин орфоэпи, орфографи тата лексики нормисем мӗнле пулмаллине ҫырса кӑтартнӑ.

## XX ӗмӗр

**Николай Иванович Ашмарин** (1870—1933), *профессор, СССР Наукӑсен Академийӗн член-корреспонденчӗ.*

Чăваш чĕлхин историне, фонетикипе морфологине тата синтаксисне тĕпченĕ. 17 томлă чăваш словарĕн авторĕ. Чăваш диалектологин тĕпчевне пуçараканĕ. Вăлах чăваш тата тĕрĕк чĕлхисенчи евĕрлев сăмахĕсене тĕпчес ĕçе никĕслекенĕ пулса тăрать.

Пичетленсе тухнă:

1. Материалы для исследования чувашского языка. Часть 1. Учение о звуках (фонетика); часть 2. Учение о формах (морфология). Казань, 1898.

2. Опыт исследования чувашского синтаксиса. Часть 1. Казань, 1903; часть 2. Симбирск, 1923.

3. Словарь чувашского языка. Вып. I—XVII. Казань—Чебоксары, 1928—1950.

4. Болгры и чуваши. Казань, 1902.

5. Заметки о чувашской диалектологии //Материалы по чувашской диалектологии. Вып. 1. Чебоксары, 1960. С. 65—79.

**Николай Васильевич Никольский** (1878—1961), *истори ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

XVIII ĕмĕрти чăваш çырулăхĕн палăкĕсене тĕпчекенĕ; лексикографи ыйтăвĕсемпе те ĕçленĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Конспект по грамматике чувашского языка. Казань, 1919.

2. Русско-чувашский словарь. Казань, 1910.

3. Краткий чувашско-русский словарь. Казань, 1919.

Алçырăвĕсем:

1.Чăвашла-вырăсла словарь (1903—1914).

2.Вырăсла-латинла-чăвашла словарь (1926).

Икĕ алçырăвĕ те ЧПГĂИ архивĕнче упранать.

**Василий Георгиевич Егоров** (1880—1974), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш чĕлхин пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсене, чĕлхе историне, фонетикипе лексикине, морфологине тĕпченĕ. Словарьсем, учебниксем çырса кăларнă.

Пичетленсе тухнă:

1. Введение в изучение чувашского языка. Москва, 1930.

2. Современный чувашский литературный язык в сравнительно-историческом освещении. Чебоксары, 1954; 2-изд., 1971.

3.Чăвашла-вырăсла словарь. Шупашкар, 1935, 2-мĕш кăларăм, 1954.

4. Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1964.

5. Русско-чувашский словарь. Чебоксары, 1960; 2-изд. 1972.

6. Библиографический указатель литературы по чувашскому языку. Чебоксары, 1931.

**Тимофсей Матвеевич Матвеев** (1884—1943)

Диалектологи тĕпчевĕсене пуçарса яраканĕ. Шкул учебникĕсен авторĕ (Ф.Т. Тимофеевпа пĕрле). Н.И. Ашмарин словарĕн наука редакторĕ (VI—IX кăларăмсем). Вырăсла-чăвашла словарь (1931) авторĕсенчен пĕри тата редакторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Грамматика чувашского языка. Симбирск, 1919.

2. Краткий обзор чувашских диалектов //Яфетический сборник, VI. Москва, 1930. Каярах ку ĕç «Материалы по чувашской диалектологии». Вып.1, кĕнекере тепĕр хут пичетленнĕ. Шупашкар, 1960. С. 8—64.

3. Некоторые особенности чувашских числительных // Вопросы чувашского языка, литературы и искусства. Чебоксары. 1966. С. 3—14.

**Федор Тимофеевич Тимофеев (Тимухха Хĕветĕрĕ)** (1887—1941)

Чăваш чĕлхин орфографине, чĕлхе ăслăлăхĕн терминĕсене йĕркелекенĕсенчен пĕри. 1—4, 5—7-мĕш классенче вĕренмелли чăваш чĕлхин фонетикине, морфологийĕпе синтаксисне тĕпченĕ. Куçару ĕçĕпе те нумай ĕçленĕ.

Чăваш чĕлхине тĕпчекенсем валли ятарласа «Чăваш чĕлхийĕн грамматики» пичетлесе кăларнă (Шупашкар,1924), каярахпа ку кĕнекене хушса-тӳрлетсе иккĕмĕш хут пичетленĕ (Шупашкар,1928). Чăваш чĕлхин наука грамматикине хатĕрленĕ (1937). Алçырăвĕн халлĕн ЧПГĂИ архивĕнче упранать.

**Семен Петрович Горский** (1897—1975), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш чĕлхин синтаксисĕпе пунктуацине, орфографине, литература чĕлхин историне тĕпченĕ. Шкулта вĕренмелли синтаксис учебникĕн авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Очерки по истории чувашского литературного языка дооктябрьского периода. Чебоксары, 1959.

2. Хальхи чăваш литература чĕлхин синтаксисĕ. Шупашкар, 1970.

3. Чăваш чĕлхинчи чарăну паллисем лартас йĕрке. Шупашкар, 1971.

**Наум Андреевич Андреев** (1891—1984)

Чăваш чĕлхин лексикологийĕпе фразеологине, синтаксисне, морфологине тĕпченĕ. Чăвашла терминсем, словарьсем тăвас ĕçе активлă хутшăннă. Вырăсларан чăвашла нумай куçарнă.

Пичетленсе тухнă:

1. Чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1961.

2. Чăваш чĕлхин стилистики. (Очерксем). Пĕрремĕш пайĕ. Шупашкар, 1958.

3. Чăваш чĕлхин стилистики. (Очерксем). Иккĕмĕш пайĕ. Шупашкар, 1964.

4. Чăваш чĕлхин стилистики. (Очерксем). Виççĕмĕш пайĕ. Шупашкар, 1966.

5. Русско-чувашский словарь общественно-политических терминов. Чебоксары, 1960.

**Алексей Иванович Иванов** (1898—1983)

Чăваш чĕлхин историне, морфологине, орфографи ыйтăвĕсене тĕпченĕ. Орфографи словарьне хатĕрленĕ (1963). Вăтам шкулта вĕренмелли чăваш чĕлхи учебникĕн (фонетикăпа морфологи) авторĕсенчен пĕри.

Пичетленсе тухнă:

1. К вопросу о падежах в чувашском языке в связи с изучением специфики его //Учен. зап. ЧНИИ. Чебоксары, 1953. Вып. 8. С. 167—192.

2. Несколько слов об образовании форм спряжения в чувашском языке //Учен. зап. ЧНИИ. Чебоксары, 1958. Вып. 16. С. 158—176.

3. Склонение и его роль в чувашском языке //Учен. зап. ЧНИИ. Филология. Чебоксары, 1967. Вып. 34. С. 67—99. Чебоксары, 1969. Вып. 39. С. 106—126.

4. Об относительной хронологии некоторых аффиксов и грамматических форм чувашского языка //Учен. зап. ЧНИИ. Филология. Чебоксары, 1970. Вып. 49. Чебоксары, 1970. С. 61—90.

5. Чувашский язык в урало-алтайской семье языков //Чувашский язык, литература и фольклор. Сб. ст. ЧНИИ. Чебоксары, 1972. Вып. 1. С. 3—53.

## Хальхи чăваш чĕлхеçисем*

**Иван Андреевич Андреев** (1928 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш чĕлхин морфологийĕпе синтаксисне, орфографийĕпе пунктуацине тĕпчекенĕ, аслă шкулпа вăтам шкул учебникĕсемпе программисен тата методика кăтартăвĕсен авторĕ. Терминологипе диалектологи тата антропонимика ыйтăвĕсене те тĕпченĕ. Чăвашла-вырăсла (1961, 1982), вырăсла-чăвашла (1971) словарьсен авторĕсенчен пĕри.

Пичетленсе тухнă:

1. Причастие в чувашском языке. — Чебоксары, 1961.
2. Чăваш орфографийĕн çĕнĕ правилисем. — Шупашкар, 1963.
3. Чувашский язык //Языки народов СССР. Т. II. Тюркские языки. — М., 1966. — С. 43—65.
4. Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем. I пайĕ. — Шупашкар, 1973; II пайĕ. — Шупашкар, 1975.
5. Çын ячĕсем. — Шупашкар, 1983.
6. Чăваш пунктуацийĕ. Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1989.
7. Чăваш пунктуацийĕ: иртни, хальхи, пуласси. Шупашкар, 1990.
8. Учебник чувашского языка для русских. — Чебоксары, 1992.
9. Учебники чувашского языка для V (1995), VI (1998), VII (1999), IX (2000) классов русских школ.
10. Чăваш чĕлхи. Синтаксис. VIII—IX классем валли. — Шупашкар, 2001.
11. Чăваш чĕлхи. 10—11 классем валли. — Шупашкар, 2003.
12. Чăваш пунктуацийĕ. — Шупашкар, 2004.

**Евдокия Александровна Андреева** (1958 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхин сăмах пулăвне, синтаксис ыйтăвĕсене тĕпчекенĕ, вăтам шкул учебникĕн авторĕ, аслă шкул программисен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Çыр та пĕлсе çыр: Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1998 (В.В.Андреевпа пĕрле).

---

* Ку список, паллах, тулли мар. Тĕрлĕ сăлтавсене пула, хăш-пĕр чĕлхеçсен хушамачĕсем унта кĕреймерĕç.

2. Чăваш чĕлхипе литератури сăмахлăхĕ, культурипе историйĕ: Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1999 (В.В.Андреевпа пĕрле).

3. Аффиксальное глагольное словообразование в чувашском языке: Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 2002.

4. Чăваш чĕлхи. V класс учебникĕ. — Шупашкар, 2002 (ытти авторсемпе пĕрле).

5. Чăваш чĕлхи: Текстсен пуххи. — Шупашкар, 2004.

6. Чăваш чĕлхи. Синтаксис. — Шупашкар, 2004.

**Валерий Васильевич Андреев** (1956 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Сăмах пулăвĕпе морфемика, пуплев культурипе стилистика, этнопсихолингвистика, тăван ен культурипе историйĕн, илĕртӳллĕ чĕлхе пĕлĕвĕн ыйтăвĕсене тĕпчекенĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Чăваш чĕлхи. Сăмах пулăвĕ: программăпа методика кăтартăвĕсем. 1987.

2. Отглагольное имяобразование в чувашском языке: Учебное пособие. 1990.

3. Чăваш чĕлхипе литератури, сăмахлăхĕ, культурипе историйĕ. 1997.

4. Çыр та — пĕлсе çыр. 1998.

5. Язык: внутренняя структура и функционирование. 1998.

**Василий Алексеевич Андреев** (1960—2002 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш тата тĕрĕк чĕлхисен морфологи пайрăмĕсене танлаштарупа, истори меслечĕпе тĕпчекенĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Туркă чĕлхин графики, фонетики тата орфографийĕ. Меслет кăтартăвĕсем. 1987.

2. Основной падеж в системе склонения чувашского языка. 1986.

3. Хальхи туркă чĕлхи: грамматика парадигмисемпе формисем. 1992.

4. Чăваш чĕлхи. 1998.

5. Чăваш чĕлхине халалланă тĕпчев. 1998.

**Алина Давыдовна Ахвандерова** (1973 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, аслă преподаватель.*

Национальная библиотека Чувашской Республики
Ч-40844

Чăваш чĕлхи диалектологийĕн ыйтăвĕсене тĕпчекенĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. «Глагол» темăна вĕреннĕ чухне вырăнти калаçу сăмахĕсенчен хăтăласси //Чувашский язык и литература: теория и методика: Сборник статей по чуваш. и рус. яз. — Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук, 1999.

2. Çеçпĕл хайлавĕсенчи глагол формисене сăнанинчен // Вестник Чуваш. гос. пед. ун-та им. И.Я.Яковлева. — Чебоксары, 2000.

3. Из истории изучения категории времени личных форм глагола в чувашском языкознании //Сборник научн. трудов докторантов, научных сотрудников, аспирантов и студентов. Вып. 9. — Чебоксары: Чувашгоспедуниверситет им. И.Я.Яковлева, 2001.

4. Категория времени глагола в говорах чувашского языка. Автореф. дис. ... канд. филол. наук. — Чебоксары, 2003.

**Елизавета Федоровна Васильева** (1934 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхин лексикологийĕпе историне тĕпчекенĕ, тĕрлĕ чĕлхесене харпăр хăй тĕллĕн вĕренмелли пособисен, тĕрлĕ словарьсен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Пуçламăш классенче ачасен чĕлхине аталантарасси. — Шупашкар, 1981.

2. Синонимсен словарĕ. — Шупашкар, 1983.

3. Пайăр ятсем. — Шупашкар, 1991.

4. Омонимсен словарĕ. — Шупашкар, 1996.

5. Русско-чувашский словарь. — Чебоксары, 1999 (в соавторстве).

6. Самоучитель турецкого языка. Учебное пособие. — Чебоксары, 2001.

7. Хальхи чăваш чĕлхи: Лексикологи. Фразеологи. Лексикографи. — Шупашкар, 2002.

8. Турецко-чувашский картинный словарь. — Чебоксары, 2002 (в соавторстве).

9. Самоучитель чувашского языка. — Чебоксары, 2003.

10. Удмурт-чуваш кылмокаш. — Чебоксары, 2003.

11. Тернистый путь. — Чебоксары, 2004.

**Юрий Михайлович Виноградов** (1946 ç.), *филологи ăслă-лăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхин синтаксисĕпе пунктуацине, графикипе орфографине тĕпчекенĕ. Вăтам шкул учебникĕсемпе вĕренӳ пособийĕсен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Графикăпа орфографи //Хальхи чăваш чĕлхин фонетики, графики тата орфографийĕ. — Шупашкар, 1978. — С. 116—150.

2. Графика и орфография //Современный чувашский литературный язык. Т. I. — Чебоксары, 1990.

3. Орфографи //Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем. — Шупашкар, 1991. — С. 19—34 (ытти авторсемпе пĕрле).

4. Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ: Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1993. — 96 с. (И.А.Андреевпа пĕрле).

5. Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ (Тĕрĕс çырмалли правилăсем) //«Хыпар» кĕнеки, 12 №. — Шупашкар, 1995. — 16 с. (ытти авторсемпе пĕрле).

6. Сăмах майлашăвĕ тата хутсăр предложени: Практика занятийĕсен ыйтăвĕсемпе хăнăхтарăвĕсем. — Шупашкар, 1995. — 48 с.

7. Хутлă предложени. Пунктуаци: Практика занятийĕсен ыйтăвĕсемпе хăнăхтарăвĕсем. — Шупашкар, 1997. — 48 с.

8. Чăваш чĕлхи: Тăваттăмĕш класс валли. — Шупашкар, 2000. — 223 с. (ытти авторсемпе пĕрле).

9. Орфографи словарĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем. — Шупашкар, 2002. — 304 с. (Г.М.Виноградовăпа пĕрле).

**Ирина Геннадьевна Герасимова** (1976 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, аслă преподаватель.*

Чăваш чĕлхи лексикологийĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсене тĕпчекенĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Сăмах диктанчĕсем. Вăтам шкул валли. — Шупашкар, 2003 (Л.П.Сергеевпа пĕрле).

2. К.В.Иванов пултарулăхĕнчи апат-çимĕç ячĕсем //Чăваш чĕлхипе литературин ыйтăвĕсем. Статьясен пуххи. — Шупашкар, 2001.

3. Из опыта исследования названий напитков в чувашском языке //Сборник научных трудов докторов, научных сотрудников, аспирантов и студентов. Вып. 9. — Чебоксары: Чувашгоспедуниверситет им. И.Я.Яковлева, 2001.

**Анатолий Ермолаевич Горшков** (1931 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхин лексикологийĕпе орфоэпине, пуплев культурин ыйтăвĕсене тĕпчекенĕ. Чăвашла-вырăсла словарь (1982) авторĕсенчен пĕри.

Пичетленсе тухнă:

1. Чăваш чĕлхи лексикин аталанăвĕ. (Совет тапхăрĕ.) — Шупашкар, 1960.

2. Роль русского языка в развитии и обогащении чувашской лексики. — Чебоксары, 1963.

3. Чăваш чĕлхин кĕске орфоэпи словарĕ //Чĕлхе культурин ыйтăвĕсем. 2-мĕш кĕнеке. — Шупашкар, 1972.

4. Мĕнле каласан тĕрĕс? Словарь-справочник. — Шупашкар, 1973.

5. Илемлĕ литература чĕлхине тĕпчес ĕçĕн хăш-пĕр задачисем //Чăваш илемлĕ литература чĕлхи. — Шупашкар, 1978.

6. Чĕлхе законĕсем тата терминологи //Чăваш терминологийĕн ыйтăвĕсем. — Шупашкар, 1979.

7. Центр гуманитарных наук Чувашии. — Чебоксары, 1980 (в соавторстве с Изоркиным А.В.).

8. Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ. — Шупашкар, 1981.

9. Çĕнетӳ тата тăван чĕлхе //Тăван чĕлхе ик чĕлхелĕх тапхăрĕнче. — Шупашкар, 1991.

10. Чăваш чĕлхи: лексика, фразеологи, пуплев культури. Вĕренӳ пособийĕ. Студентсем валли. — Шупашкар, 1997.

**Геннадий Анатольевич Дегтярев** (1960 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Лексикăпа семантика тата куçару ыйтăвĕсене тĕпчекенĕ. XX—XXI ĕмĕрсен чиккинчи чăваш чĕлхине халалланă статьясен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Чувашский язык для начинающих. — Чебоксары: НИИ при Совете Министров ЧАССР, 1991.

2. Изучаем чувашский язык. — Чебоксары, 1995.

3. Чувашско-турецко-русский разговорник. — Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 1996 (в соавторстве).

4. Чувашская народная агроботаническая терминология. — Чебоксары: ЧГИГН, 2002.

5. Чăваш чĕлхин çĕнĕлĕх словарĕ. I том. А—П. — Шупашкар: ЧПГĂИ, 2003.

**Юдит Дмитриева** (1953 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.*

Чăваш тата венгр чĕлхисен хутшăнăвĕсене, чăваш чĕлхинчи ӳсен-тăран ячĕсене, топонимикăпа диалектологи ыйтăвĕсене тĕпчекенĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Имеется ли венгерский пласт в топонимике Чувашии? // Вестник Чувашской национальной академии /Чăваш наци академийĕн ăслăлăх хыпарĕсем. — Чебоксары, 1994. — № 2. — С. 128—132.

2. Чувашские народные названия дикорастущих растений. Studies in Linguisticsof the Volga region. University of Debrecen. Volume I. Debrecen, 2001. — 211 с.

3. HUNGARO-TSCHUWASHICA. Аннотированный библиографический указатель исследований венгерских ученых XIX—XX вв. Чебоксары, 2001. — 239 с. (в соавторстве).

4. О некоторых чувашских диалектизмах татарского происхождения //Тюркологик мәҗмуга (Филология факультетының гыйльми язмалары) I чыгарылыш. — Елабуга, 2003. — С. 54--57.

**Надежда Васильевна Доброва** (1968 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.*

Чăваш чĕлхин морфологийĕпе синтаксис ыйтăвĕсене тĕпчет.

Пичетленсе тухнă:

1. Хальхи чăваш чĕлхи. Программа, методика кăтартăвĕсем, тĕрĕслев ĕçĕсем. — Шупашкар, 1995.

2. Чăваш чĕлхинчи татăксен предложенири функцийĕ. — Шупашкар, 1996.

3. Предложенири шухăш тĕшши тата ăна палăртмалли ятарлă татăксем. — Шупашкар, 1998.

4. Предложенин шухăш пайĕсене уйăрасси. — Шупашкар, 1998.

**Алевтина Петровна Долгова** (1967 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.*

Чăваш чĕлхин грамматикипе диалектологийĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсене тĕпчес, словарьсем çырса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлет.

Пичетленсе тухнӑ:

1. Ыйтуллӑ предложени интонацийӗн хӑш-пӗр уйрӑмлӑхӗсем //Словесность в школе. — Чебоксары, 1998.

2. Çынна палӑртакан япала ячӗсене словарьте ӑнлантарасси //Чӑваш чӗлхе пӗлӗвӗ: Статья пуххи. — Шупашкар: ЧПГӐИ, 1999.

3. Краткий русско-чувашский психиатрический словарь. — Чебоксары, 2003 (в соавторстве).

4. Об особенностях говора чувашей Самарской Луки // Чуваши Самарской Луки. — Чебоксары, 2003.

5. Этноязыковая культура: диалекты и социолингвистические процессы //Симбирско-Саратовские чуваши. — Чебоксары, 2004 (в соавторстве).

**Николай Иванович Егоров** (1949 ç.), *филологи ӑслӑлӑхӗсен докторӗ, профессор.*

Чӑваш чӗлхи историйӗпе этимологине, топонимикипе антропонимикине тӗпчекенӗ. Аслӑ шкул программисен авторӗ.

Пичетленсе тухнӑ:

1. Историческое развитие чувашской лексики //Современный чувашский литературный язык. Т. 1. — Чебоксары, 1990. — С. 128—145.

2. Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства (ЧНТИ тӗпчев ӗçӗсен кӑларӑмӗсем. 1979, 1981—1985).

3. Оногуры, савиры, булгары, угры и их взаимоотношение в первой половине I тысячелетия н.э. (ЧНТИ тӗпчев ӗçӗсен кӑларӑмӗсем. 1987—1988).

4. Историческое развитие общетюркского **а** первого слога в булгаро-чувашском языке (ЧНТИ тӗпчев ӗçӗсен кӑларӑмӗсем. 1983, 1985, 1986).

5. Чӑваш календарӗ. «Ялав» журнал, 1989.

6. Чувашские праздники и обряды. — Чебоксары, 1992.

**Александра Семеновна Канюкова** (1919 ç.), *филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ, доцент.*

Чӑваш чӗлхин диалектологине, пуплев культурин ыйтӑвӗсене тӗпченӗ.

Пичетленсе тухнӑ:

1. Чувашская диалектология. (Краткие очерки.) — Чебоксары, 1965.

2. Чăвашла тĕрĕс те илемлĕ калаçар. Иккĕмĕш кăларăм. Шупашкар, 1968; Виççĕмĕш кăларăм, 1975.

3. Чăваш диалектологийĕн хрестоматийĕ. Филолог-студентсемпе учительсем валли хатĕрленĕ вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1970.

**Геннадий Емельянович Корнилов** (1936 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш чĕлхин историйĕпе этимологийĕ, диалектологийĕпе топонимика тĕпчевĕсен авторĕ. Фонетика ыйтăвĕсене те тĕпченĕ. Вырăсла-чăвашла словарь (1971) авторĕсенчен пĕри.

Пичетленсе тухнă:

1. Евразийские лексические параллели. К уточнению объема и характера булгаро-чувашско-венгерских лексических параллелей. — Чебоксары, 1973.

2. Имитативы в чувашском языке. — Чебоксары, 1984.

3. Пробные статьи этимологического «Словаря собственных имен Поволжья и сопредельных территорий» //Диалекты и топонимия Поволжья. Вып. 2. — Чебоксары, 1973. — С. 3—29; вып. 3. 1975. — С. 123—152; вып. 4. 1976. — С. 64--83.

**Виталий Иванович Котлеев** (1939—1989), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхин сасă тытăмне фонологи енчен пуçласа тĕпчекенĕ. Аслă шкул учебникĕпе программин авторĕ. Диалектологи ыйтăвĕсемпе те интересленнĕ, чăвашла-вырăсла словарь (1982) авторĕсенчен пĕри.

Пичетленсе тухнă:

1. Чăваш чĕлхин сасă тытăмĕ. Фонологи очеркĕ. — Шупашкар, 1981.

2. Фонетика //Хальхи чăваш чĕлхин фонетики, графики тата орфографийĕ. — Шупашкар, 1978. — С. 3—115.

3. Чăваш чĕлхи. Учебник. Пединститут студенчĕсем валли. — Шупашкар, 1988; 2-мĕш кăларăм. — Шупашкар, 1993 (Л.П.Сергеевпа пĕрле).

4. Фонетика //Современный чувашский литературный язык. Т. 1. — Чебоксары, 1990. — С. 13—84.

**Елена Алексеевна Лебедева** (1951 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматикине, чăваш чĕлхин историне, чăваш мифологине тĕпчекенĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. К этимологии чувашских названий рыболовных снастей, 1981.

2. Семантика чувашских цветовых обозначений в культурно-историческом аспекте, 1992.

3. К.В.Ивановăн «Тимĕр тылă» балладинчи чăвашсен традициллĕ тавракурăмĕн йĕрĕсем, 1996.

4. Внутренняя семантика яковлевской «Сармантейĕн сарă чăххи», 1998.

**Ираида Васильевна Мукина** (1957 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент*.

И.Я.Яковлевăн эткерне тĕпчекенĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. И.Я.Яковлев — переводчик Библии, 1997.
2. И.Я.Яковлев — куçаруçă, 1997.
3. И.Я.Яковлев куçарăвĕнчи мăшăр сăмахсем, 1997.
4. Библи куçарăвĕсем — литература чĕлхин никĕсĕ, 1998.
5. И.Я.Яковлевăн куçару чĕлхи (чăваш чĕлхинчи камăнлăх падежĕпе камăнлăх категорийĕн тулли формисем), 1998.
6. И.Я.Яковлев çинчен хунă чăн сăмах, 1998.
7. Корифей чувашской тюркологии М.Р.Федотов, 1999.

**Иван Павлович Павлов** (1928—2002), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхин морфологийĕпе синтаксисне, морфонологийĕпе орфографине тĕпчекенĕ, аслă шкулпа вăтам шкул учебникĕсемпе кăтарту пособийĕсен авторĕ. Чăвашла-вырăсла (1961, 1982), вырăсла-чăвашла словарьсен (1951, 1971) авторĕсенчен пĕри.

Пичетленсе тухнă:

1. Н.И.Золотницкий пурнăçĕпе ĕçĕсем. — Шупашкар, 1958.

2. Хальхи чăваш литература чĕлхи. Морфологи. — Шупашкар, 1965.

3. Краткий очерк морфонологии современного чувашского языка //Чувашский язык, литература и фольклор. Сб. статей ЧНИИ. Вып. 4. — Чебоксары, 1974. — С. 3—44; Чувашский язык и литература /Труды ЧНИИ. Вып. 53. — Чебоксары, 1975. — С. 3—18.

**Леонид Порфирьевич Петров** (1957 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхин историллĕ лексикологийĕпе, ономастикипе, диалектологийĕпе çырнă статьясен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. К этимологии чувашских орнитонимов, 1982—1987.
2. Из истории чувашских дохристианских имен, 1988.
3. Личные имена закамских чувашей-язычников, 1986—1991.
4. Этимология чувашских дохристианских имен, 1987—1988.
5. Из истории чувашских названий хищных птиц, 1986.

**Николай Петрович Петров** (1929 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш литература чĕлхин историйĕпе стилистикине, терминологийĕпе лексикографине тĕпчекенĕ, аслă шкулпа вăтам шкул учебникĕсемпе вĕренӳ пособийĕсен авторĕ. Диалектологи ыйтăвĕсемпе те интересленнĕ. Чăвашла-вырăсла (1961, 1982) тата вырăсла-чăвашла словарьсен (1971) авторĕсенчен пĕри.

Пичетленсе тухнă:

1. Хумма Çеменĕ. Суйласа илнисем. — Шупашкар: Чăваш госиздат, 1960. — 235 с. [Пухса хатĕрленĕ. Умсăмахĕпе асăрхаттарусене çырнă.]

2. Революцичченхи чăваш писателĕсен произведенийĕсем. — Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1962. — 183 с. [Пухса хатĕрленĕ. Умсăмахĕпе асăрхаттарусене çырнă.]

3. Русско-чувашский словарь /Под ред. И.А.Андреева и Н.П.Петрова. — М.: Советская энциклопедия, 1971.

4. Чăваш çырулăхĕ (Çĕнĕ çырулăх пуçланни 100 çул çитнĕ май). — Шупашкар, 1971.

5. Русско-чувашский словарь технических терминов. — Чебоксары, 1971.

6. Чăваш чĕлхи. VIII класс валли. — Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1974 (ытти авторсемпе пĕрле).

7. Чăваш литература чĕлхин историйĕ. Яковлевченхи тапхăр. Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1978.

8. Чувашская терминология. Учебное пособие. — Чебоксары, 1979.

9. Чувашский язык в советскую эпоху. Развитие социальных функций и литературных норм. — Чебоксары, 1980.

10. Развитие фонетики и норм произношения чувашского литературного языка в советскую эпоху. Учебное пособие. — Чебоксары, 1982.

11. Нормализация чувашского литературного языка. Учебное пособие. — Чебоксары, 1988.

12. Магистр богословия В.П.Вишневский и его роль в истории чувашской письменности и литературного языка. — Чебоксары, 2004.

**Галина Николаевна Семенова** (1951 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхинчи икĕ хут калакан, мăшăр тата хутлă сăмахсене тĕпчекенĕ, чăваш чĕлхипе аслă классенче вĕрентмелли меслетсемпе мелсене тĕпчесе çырнă статьясен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Чăваш чĕлхине вĕрентмелли меслетсемпе мелсем. Методика кăтартăвĕсем, 1986.

2. Чĕлхе пĕлĕвĕн программисем (чăваш чĕлхине V—IX классенче вĕрентесси), 1993.

3. Чăваш чĕлхи методикин пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсем, 1995.

**Виталий Иванович Сергеев** (1941 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш чĕлхи морфологийĕпе лексикологине тĕпчекенĕ, аслă шкул учебникĕсемпе вĕренӳ пособийĕсен авторĕ. Чăвашла-вырăсла словарь (1982) авторĕсенчен пĕри.

Пичетленсе тухнă:

1. Чăваш чĕлхинчи япала ячĕ. Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1990.

2. Развитие лексической семантики чувашского языка (Основные тенденции). — Чебоксары, 1991.

3. Хальхи чăваш чĕлхи. Морфологи. Вĕренӳ кĕнеки. — Шупашкар, 1992.

4. Хальхи чăваш чĕлхин лексикологийĕ. — Шупашкар, 1978. (Ку кĕнекери 10 статьяна В.И.Сергеев çырнă.)

5. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Лексика лексикологи. Семантика семасиологи. Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 2000.

6. Морфемика тата морфонологи. Лекцисен конспекчĕ. — Шупашкар, 2001.

7. Чувашско-тунгусо-маньчжурские лексико-семантические параллели. — Чебоксары, 2001.

8. Морфологические категориальные и некатегориальные формы чувашского языка. — Чебоксары, 2002.

**Леонид Павлович Сергеев** (1929 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш чĕлхин диалектологийĕпе топонимикине, морфологийĕпе лексикологине тĕпчекенĕ, аслă шкулпа вăтам тата пуçламăш шкул учебникĕсемпе программисен, кăтарту пособийĕсемпе дидактика материалĕсен, методика кăтартăвĕсен авторĕ. Вырăсла-чăвашла (1971), тӳнтер (1985) словарьсен авторĕсенчен пĕри. Диалектологипе орфографи словарĕсен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Чăваш чĕлхин вырăнти калаçăвĕсем. — Шупашкар, 1969.

2. Чăваш сăмахĕ. VII—X классенче факультативра вĕренмелли кĕнеке. — Шупашкар, 1978.

3. Грамматика вăййисем. — Шупашкар, 1982.

4. Чăваш чĕлхи. Учебник. Пединститут студенчĕсем валли. 1-мĕш кăларăм. — Шупашкар, 1988; 2-мĕш кăларăм. — Шупашкар, 1993 (В.И.Котлеевпа пĕрле).

5. Кивĕ чăваш çырулăхĕ. Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1988.

6. Чăваш чĕлхи методикин ыйтăвĕсем. — Шупашкар, 1989.

7. Грамматика вăййисем. I—IV классем валли. — Шупашкар, 1991 (В.Е.Ефимовпа пĕрле).

8. Чăваш диалектологийĕ. Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1992.

9. Чăваш чĕлхине пуçламăш шкулта вĕрентесси хăш-пĕр ыйтăвĕсем. — Шупашкар, 1998.

10. Чăваш чĕлхи методики. Пуçламăш шкул учителĕсемпе вĕсене хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли. — Шупашкар, 2002.

11. Чăваш чĕлхин пирвайхи грамматикисем. Вĕренӳ кĕнеки. — Шупашкар, 2003.

12. Япала ячĕ. Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 2004.

**Михаил Иванович Скворцов** (1933 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш чĕлхин историйĕпе этимологине, лексикологийĕпе лексикографине тĕпчекенĕ, аслă шкул вĕренӳ пособийĕсен,

нумай программăсен авторĕ. Вырăсла-чăвашла (1971) тата чăвашла-вырăсла (1982, 1985) словарьсен авторĕсенчен пĕри. Шкул ачисем валли ятарласа пичетленсе кăларнă чăвашла-вырăсла, вырăсла-чăвашла словарьсен, калаçу кĕнекисен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. К вопросу о принципах составления русско-национальных словарей //Уч. зап. ЧНИИ. Вып. 26. 1963.

2. Чăваш чĕлхин пурнăçри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ тата терминологи ĕçĕн задачисем //Уч. зап. ЧНИИ. Вып. 89. 1979.

3. Инструкция и пробные статьи «Этимологического словаря чувашского языка». — Чебоксары, 1980.

4. Русско-чувашско-венгерский разговорник. — Чебоксары, 1981 (в соавторстве с Л.Захемски).

5. Вырăсла-чăвашла куçару теорийĕпе практики. — Шупашкар, 1984.

6. Чăваш лексикографийĕ. — Шупашкар, 1985.

7. Русско-чувашский общественно-политический словарь. — Чебоксары, 1973, 1986.

8. Чувашский языковой материал в «Писцовой книге Казанского уезда» 1602—1603 годов //Межъязыковое взаимодействие в Волго-Камье. — Чебоксары, 1988.

9. Русско-чувашский словарь. — Чебоксары, 2002 (в соавторстве с А.В.Скворцовой).

10. Чувашско-русский и русско-чувашский словарь. — Чебоксары, 1999, 2003 (в соавторстве с А.В.Скворцовой).

11. Русско-чувашский словарь социальной лексики. — Чебоксары, 2004.

**Михаил Романович Федотов** (1919--2003), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш чĕлхин историйĕпе этимологине, морфологине, чăваш чĕлхин урал-алтай чĕлхисен йышĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшне тĕпчекенĕ. Аслă шкул учебникĕсемпе вĕренӳ пособийĕсен тата программăсен авторĕ.

Нимĕç чĕлхине чăваш шкулĕсенче вĕрентмелли методика пособийĕсен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Средства выражения модальности в чувашском языке. — Чебоксары, 1963.

2. Исторические связи чувашского языка с языками угро-финнов Поволжья и Перми. — Чебоксары, 1965.

3. Исторические связи чувашского языка с волжскими и пермскими финно-угорскими языками. — Чебоксары, 1968.

4. История чувашского языка. I. Звуки. — Чебоксары, 1971.

5. Древнетюркский язык. Учебное пособие по сравнительному изучению языка орхоно-енисейских памятников. — Чебоксары, 1973.

6. Сравнительная грамматика тюркских языков. Учебное пособие. — Чебоксары, 1975.

7. Чувашский язык в семье алтайских языков. I. — Чебоксары, 1980; II. 1983; III. 1986.

8. Чăваш чĕлхин историйĕ. 1-мĕш пайĕ. Сасăсем. 2-мĕш кăларăм. Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 1979.

9. Исследователи чувашского языка. — Чебоксары, 1987.

10. Чувашско-марийские языковые взаимосвязи. Изд-во Саратовского университета. Саранский филиал. 1990.

11. Этимологический словарь чувашского языка в 2-х т. — Чебоксары: ЧГИГН. Т. 1. А—Р. — 1996; Т. 2. С—Я. — 1996.

**Атнер Петрович Хузангай** (1948 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Араб чĕлхин синтаксисне тишкерсе статьясем пичетленĕ. Социолингвистика ыйтăвĕсене, поэзи чĕлхине тĕпчекенĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Поиск слова. — Чебоксары, 1987.

2. Проблема языкового существования чувашского этноса и перспективы языковой политики //Проблемы национального в развитии чувашского народа. — Чебоксары: ЧГИГН, 1999.

3. Поэт Айги и художники (Опыт философской интерпретации поэтического и художественного сознания). — Чебоксары, 1998.

4. Путешествие по периферии к центру языка //Библиотека журнала «Халăх ăс-хакăлĕ». № 5 (9). — Чебоксары, 2003.

5. Тексты, метатексты и путешествия. — Чебоксары, 2003.

**Раиса Ионовна Цаплина** (1920—1990), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхин диалектологине тĕпчекенĕ, тăван чĕлхене чăваш шкулĕсенче вĕрентмелли методика пособийĕсен авторĕ.

Чăваш чĕлхине пуçламăш шкулта вĕрентмелли фонохрестомати, чăвашла-вырăсла (1961, 1982) словарьсен авторĕсенчен пĕри.

Пичетленсе тухнă:

1. Обучение орфографии чувашского языка в диалектных условиях. — Чебоксары, 1966.

2. Оканье в чувашском языке //Родной и русский язык в национальной школе. — М., 1962. — С. 40—67.

**Мефодий Федорович Чернов** (1930 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор.*

Чăваш чĕлхин фразеологийĕпе лексикологине, синтаксисĕпе пунктуацине, лексикографине тĕпчекенĕ, фразеологи словарĕсен авторĕ. Аслă шкул вĕренӳ пособийĕсен авторĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Обособленные члены предложения в современном чувашском языке. — Чебоксары, 1963.

2. Краткий русско-чувашский фразеологический словарь. — Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1975. — 180 с.

3. Чувашско-русский фразеологический словарь. Глагольно-именные фразеологизмы. — Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1985. — 176 с.

4. Фразеология современного чувашского языка. — Чебоксары, 1985.

5. Современный чувашский язык. Слово, фразеологизм и свободное сочетание слов. — Чебоксары, 1988.

6. Чувашские словари. Учебное пособие для студентов. — Чебоксары, 1992.

7. Лексика. Фразеология //Современный чувашский литературный язык. Т. 1. — Чебоксары, 1990. — С. 97—224.

8. Предложенин уйрăмтăран кĕçĕн членĕсем //Известия НАНИ ЧР. — Чебоксары, 1997. — № 1. — С. 127—148

9. Çеçпĕл Мишши поэзийĕн чĕлхинчи сăнарлăх мелĕсем // Революция в художественном сознании начала XX века и поэзия Михаила Сеспеля. II. — Чебоксары: ЧГИГН, 2001. — С. 49—70.

10. Хальхи чăваш чĕлхи. Сăмах майлашăвĕнчи грамматика çыхăнăвĕн мелĕсем. — Шупашкар: Изд-во Чуваш. ун-та, 2001. — 104 с.

11. Русско-чувашский фразеологический словарь. — Чебоксары: Изд-во Чуваш ун-та, 2003. — 536 с.

**Петр Яковлевич Яковлев** (1950 ç.), *филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент.*

Чăваш чĕлхин просодика тытăмĕпе фонологине тĕпчекенĕ.

Пичетленсе тухнă:

1. Ударение в русских и интернациональных словах, заимствованных в чувашский язык //Чувашский язык. Труды ЧНИИ. Вып. 66. — Чебоксары, 1976.

2. Чĕлхе, сăвă тата аллитераци //Чăваш илемлĕ литература чĕлхи. ЧНИИн статья пуххи. — Шупашкар, 1978.

3. К истории изучения ударения в чувашском языке // Вопросы истории и грамматики чувашского языка. Труды ЧНИИ. Вып. 74. — Чебоксары, 1977.

4. Чăваш фонетики. — Шупашкар, 1995.

## II. Ют çĕр-шыв тĕпчевçисем

**Филипп Иоганн Страленберг** (1676—1747), швед тĕпчевçи.

1730 ç. хăйĕн «Северная и восточная части Европы и Азии...» кĕнекинче пирвайхи хут 28 чăваш сăмахне пичетленĕ.

**Герард Фридрих Миллер** (1705—1783), нимĕç тĕпчевçи.

1791 ç. Питĕрте пичетленсе тухнă «Описание живущих в Казанской губернии языческих народов, яко-то: черемис, чуваш и вотяков...» кĕнекен хушма пайĕнчи çичĕ чĕлхеллĕ словарĕнче 300 яхăн чăваш сăмахне пичетленĕ. Маларах ку кĕнеке нимĕçле пичетленсе тухнă (1758—1759 çç.) унта чăваш сăмахĕсене нимĕç саспаллийĕсемпе çырса панă. Тĕпчевçĕ чăваш сăмахĕсен пуçламăшне *в* протеза (*вăрман—урман)* кĕрсе ларнине асăрханă.

**Вильгельм Шотт** (1807—1899), нимĕç тĕпчевçи.

«De Lingua tschuwaschorum» (Чăваш чĕлхи), 1842, кĕнеке авторĕ.

Ку вăл — пĕрремĕш наука грамматикин (фонетикăпа морфологи) кĕске очеркĕ. Тĕпчевçĕ чăваш чĕлхинчи ротацизмпа зетацизма (терминĕсене асăнмасăр) пуçласа асăрханă.

**Антал Регули** (1819—1858), венгр тĕпчевçи.

Тури чăвашсем хушшинче чĕлхе, этнографи, фольклор материалĕсене чылай пухнă. Ку ĕçре ăна С.М.Михайлов пулăшнă.

**Йожеф Буденц** (1836—1892), венгр тĕпчевçи.

«Чăваш чĕлхи очеркĕсем» (1862—1863) — чăваш чĕлхи морфологине тĕпчесе çырнă пирвайхи наука грамматики. Антал Регули пухнă материалсемпе усă курса хатĕрленĕ.

**Август Э. Альквист** (1826–1889), финн тĕпчевçи.

Тури тата анатри чăвашсем хушшинче фольклор материалĕ пухнă. Хайĕн статйисенче морфологи ыйтăвĕсене тишкернĕ. Вырăсла-чăвашла тата чăвашла-шведла словарьсем хатĕрленĕ (алçырăвĕсем Хельсинки архивĕнче упранаççĕ).

**Густав Ион Рамстедт** (1873—1950), финн тĕпчевçи.

Алтай чĕлхисене танлаштаруллă-историллĕ меслетпе тĕпчес ĕçе пуçараканĕ. Чăваш чĕлхинчи ламбдаизмпа ротацизм ыйтăвне тĕпчесе ĕнентерӳллĕ ăнлантарса панă.Чăваш чĕлхин ытти чĕлхесем хушшинчи вырăнне палăртнă.

**Золтан Гомбоц** (1877—1935), венгр тĕпчевçи.

Чăваш чĕлхипе хытă интересленнĕ: венгр чĕлхинчи авалхи пăлхар (чăваш) сăмахĕсене тĕпченĕ (1912), чăвашла-венгрла словарь çырнă (1906), чăваш чĕлхинчи хальхи-пулас вăхăт формин аталанăвне уçса панă (1924).

**Арво Мартти Октавиан Рясянен** (1893—1976), финн тĕпчевçи.

Уралпа алтай, тĕрĕк чĕлхисене, çав шутрах чăваш чĕлхине тетĕпченĕ. Тĕрĕк чĕлхинчи ротацизмпа зетацизм, ламбдаизмпа сигматизм пулăмĕсен аталанăвне ăнлантарса панă.

1920 ç. мари чĕлхисенчи чăваш сăмахĕсене ятарласа тĕпчесе çырнă ĕçĕ пичетленсе тухнă. Тĕпчевçĕн «Опыт этимологического словаря тюркских языков» кĕнеки (1969) тĕрĕк тĕнчинче пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**Чăваш чĕлхин пирвайхи грамматикисем XVIII—XIX ĕмĕрсем**

| Автор | Кĕнеке ячĕ | Хăçан пичетленнĕ |
|---|---|---|
| В.Пуцек-Григорович (1706—1783), ертсе пынипе Ермей Рожанский чăваш çырнă. | Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка. СПб. | 1769 |

| | | |
|---|---|---|
| В.П.Вишневский (1804—1885) | Начертание правил чувашского языка и словарь, составленные для духовных училищ Казанской епархии. Казань. | 1836 |
| Вильгельм Шотт (1807—1899) | De lingua tschuwaschorum (Чувашский язык). Берлин. | 1842 |
| Йозеф Буденц (1836—1896) | Czuvas közlesek es tanulmanyok (Очерки по чувашскому языку). Будапешт. | 1862—1863 |
| Н.И.Золотницкий (1829—1880) | Заметки для ознакомления с чувашским наречием. Выпуск 1. Отдел звуковой. Казань. | 1871 |
| А.И.Добролюбов (?—?) | Ознакомление с фонетикой и формами чувашского языка посредством разбора и перевода оригинальных чувашских статей. Под ред. Н.И.Золотницкого. | 1879 |
| Н.А.Лебедев (1862—?) | Пособие к изучению чувашского языка. Казань. | 1894 |
| Н.Е.Ефимов | Материалы по грамматике чувашского языка. (Алçырăвĕ. ЧПГĂИ наука архивĕнче упранать). | 1895 |
| Н.И.Ашмарин (1870—1933) | Материалы для исследования чувашского языка. Часть I. Учение о звуках (фонетика). Часть II. Учение о формах (морфология). Казань. | 1898 |

## XVIII ĕмĕрти чăваш словарĕсем

| Палăк ячĕсем | Хăçан пичетленнĕ е хатĕрленĕ |
|---|---|
| Русско-татаро-чувашско-мордовский словарь. Алçырăвĕ. В.Н.Татищев историк хушнипе Чĕмпĕр кĕпĕрнинче çырса хатĕрленĕ. | 1737—1738 |
| Русско-чувашско-марийско-мордовский словарь. Алçырăвĕ. В.Н.Татищев историк хушнипе Чĕмпĕр кĕпĕрнинче çырса хатĕрленĕ. Асăннă икĕ словарь пирки çак ĕçе вуласа пĕлме пулать: В.Д.Димитриев. Два описания чувашей и чувашские словари второй четверти **XVIII века** //Учен. зап. ЧНИИ. Чебоксары, 1960. Вып. XIX. С.270—298. | 1737—1738 |
| Словарь языка чувашского. Алçырăвĕ. Кам хатĕрлени паллă мар. Питĕрти М.Е.Салтыков-Щедрин ячĕпе хисепленекен библиотекăра упранать. | 1785 |
| Словарь языков разных народов, в Нижегородской епархии обитающих, именно: россиян, татар, чувашей, мордвы и черемис. По высочайшему соизволению и повелению Ея императорского величества премудрой Государыни Екатерины Алексеевны императрицы и самодержицы всероссийской по алфавиту Российских слов расположенной и в Нижегородской семинарии от знающих оныя языки священников и семинаристов под присмотром Преосвященного Дамаскина Епископа Нижегородского и Алаторского сочиненной 1785 года.<br>Ку словаре икĕ экз. çырнă: пĕри Чулхула область архивĕнче, тепри (таса куçарса çырни) Питĕрти библиотекăра упранать. | 1785 |
| Сравнительные словари всех языков и наречий собранные десницею всевысочайшей особы. Часть I. СПб., 1787., часть II. СПб., 1789. | 1787, 1789 |

| | |
|---|---|
| Сравнительный словарь всех языков и наречий по азбучному порядку расположенный.<br>Часть I. А–Д<br>Часть II. Д–Л<br>Часть III. Л–С<br>Часть IV. С–Ф | <br><br>1790<br>1791<br>1791<br>1791 |
| Речи для переводу на чувашский язык. — Сумах зам казя жин чуваш чилга зине.<br>Ермей Рожанский проповедник чăвашла куçарнă. Алçырăвĕ. Питĕрти библиотекăра упранать. | 1788–1791 |
| Слова взятые из французских разговоров Российские с чувашскими расположенные по урокам. Алçырăвĕ. Ку вăл вырăсла-чăвашла словарь. Григорий Рожанскипе Иван Русановский семинаристсем чăвашла куçарнă. Питĕрти асăннă библиотекăра упранать. | 1789–1791 |

# ЛЕКСИКОЛОГИ

Чӗлхе наукин сӑмахсене (лексикӑна) тӗпчесе вӗренекен пайне лексикологи теççӗ (терминӗ грек чӗлхинчи *лексикос* «сӑмах» тата *логос* «вӗрентӳ» сӑмахсенчен пулнӑ).

**Сӑмахсене пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен ушкӑнлани**

| Ушкӑнсем | Пуплев пайӗ | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| Синонимсем | Япала ячӗ | уй–хир, лаша–ут, çӑл–пусӑ, хӗн–асап, терт–хурлӑх, мулкач–куян, пушӑ–чӑпӑркка |
| | Паллӑ ячӗ | пысӑк–катмар–мӑнӑ–шултра, илемлӗ–хитре–чипер–маттур–хӳхӗм, çивӗч–йӑрӑс, тӳрккес–кӑнттам–чурӑс, симӗс–ешӗл |
| | Глагол | пӑшӑрхан–кӳрен, савӑн–хӗпӗрте–хаваслан, ывӑн–ӗшен, хисепле–чысла, калаç–пупле–сӑмахла–юмахла–халапла, ват–çӗмӗр, çи–кӳп |
| | Наречи | куллен–ялан–пӗрмай, ӗлӗк–авал, сасартӑк–тӑрук–сарӑмсӑр, часах–кӗçех, хуллен–ерипен–майӗпен, чалӑшшӑн–хӑяккӑн |
| Антонимсем | Япала ячӗ | савӑнӑç–хуйхӑ, суту–илӳ, лару–тӑру, ир–каç |
| | Паллӑ ячӗ | пысӑк–пӗчӗк, çамрӑк–ватӑ, лайӑх–япӑх, хура–шурӑ, ансӑр–анлӑ |
| | Глагол | кай–кил,сут–ил, лар–тӑр, савӑн–хурлан, хӑпар–ан |
| | Наречи | халӗ–ӗлӗк, çулла–хӗлле, çуркунне–кӗркунне, хӑвӑрт–вӑрах, ирхине–каçхине, нумай–сахал |
| | Хыççӑмах | тӑрӑх–урлӑ |
| Омонимсем | | шӑпӑр (метла)–шӑпӑр (муз. инстр.), çул (дорога)–çул (год), çӗр (ночь)–çӗр (земля) |

**Синонимсем**

| Синонимсене пĕлтерĕш тăрăх ушкăнлани | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Тулли синонимсем | кўршĕ–пускил, пушă–чăпăркка, çăва–масар, çытар–минтер, пуянлăх–мул, тутăр–явлăк, кахал–наян, йĕр–макăр, улăх–хăпар |
| 2. Çывăх пĕлтерĕшлĕ синонимсем(идеографи синонимĕсем) | хăюллă–паттăр–харсăр–сатур–чăрсăр, хăрушлăх–шик, пысăк–шултра–мăнă–капмар, макăр–йĕр–ĕсĕкле, хăват–вăй–хал–хавал–хевте |
| 3. Стиль синонимĕсем | çурт–кермен, лаша–урхамах, сĕт–тўттў, çăкăр–мемме, калаç–пакăлтат–сўпĕлтет, каччă–йĕкĕт, хĕр–пике |

**Антонимсем**

| Мĕнле пĕлтерĕшлисем пулаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Пахалăх пĕлтерĕшлисем | лайăх–япăх, шурă–хура, савăн–хуйхăр, çутă–тĕттĕм, телей–инкек |
| Вăхăт пĕлтерĕшлисем | ир–каç, çулла–хĕлле, çуркунне–кĕркунне, кăçал–пĕлтĕр, халĕ–ĕлĕк, кăнтăрла–çĕрле, халь–ўлĕм |
| Хисеп пĕлтерĕшлисем | пĕрре–тепре, пĕри–тепри, сахал–нумай |
| Вырăн пĕлтерĕшлисем | кăнтăр–çурçĕр, малта–кайра, кунта–лере, анатра–тура |

**Антонимсен тĕсĕсем**

| Антонимсен тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Тĕрлĕ тымартан пулнă антонимсем | пысăк–пĕчĕк, хура–шурă, малта–кайра, лутра–çўллĕ, тура–анатра, ĕлĕк–халь, кай–кил, хăпар–ан, пар–ил, çулла–хĕлле, ир–каç |
| Пĕр тымартан пулса кайнисем | анлă–ансăр, вăйлă–вăйсăр, майлă–майсăр, илемлĕ–илемсĕр, телейлĕ–телейсĕр |

**Омонимсем**

| Омонимсен ушкăнĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| тулли омонимсем | тар (пот)–тар (порох), çул (дорога)–çул (год), шăпăр (метла)–шăпăр (муз. инстр.), сып (пить)–сып (прививать), йăва (гнездо)–йăва (кушанье) |
| тулли мар омонимсем: | çил вĕрет (*вĕр* глаголтан)–яшка вĕрет (*вĕре* глаголтан), ывăлсем (упăшкин шăллĕ)–ывăлсем (*ывăл* сăмахăн нум. х. форми) |
| а) омофонсем | суд (яп.я.)–сут (глагол), виçсе пар (виçĕ тенке пар)–виççе пар (виçсе пар), хушша хур (пĕр-пĕр япала хушшине хур)–хушша хур–(хушса хур), Илпек (пайăр ят)–илпек (пайăр мар ят) |
| ă) омографсем | тир (кожа)–тир (пăшал пемелли ырăн), касса (укçа ещĕкĕ)–касса (*кас* глаголăн деепричасти форми), каска (йывăç муклашки)–каска (хурçă шлем) |
| б) омоформăсем | çул (яп.я.)–çул (гл), çирĕм (хис.я.)–çирĕм (глагол), çыр (яп.я.)–çыр (глагол), çулăм (яп.я., тĕп пад.)– çулăм (яп.я., камăнлăх ф., 1-мĕш сăп), хурăн (яп.я., тĕп пад.)–хурăн (яп.я., хур сăмахăн *кам.* пад) |

**Чăваш чĕлхи лексикине**
**пулса кайни енчен ушкăнлани**



Тĕп чăваш сăмахĕсене ушкăнлани

| Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Пĕрлехи тĕрĕк сăмахĕсем | пуç, куç, ура, атте, анне, тăван, хурăнташ, çурт, тӳшек, чӳрече, хĕвел, пĕлĕт, уйăх. çил, тинĕс, ут, ĕне, йытă, така, пулă, çăка, чăрăш, хурçă, ылтăн, кĕмĕл, сĕт, хăйма, шыв, кĕрĕк, сăхман, ată, пăчкă, хăйра, сунтал, çип, йĕке, урапа, çуна, çул, хура, тутлă, çĕвĕ, ака, сӳре, кĕреçе, атма, вăлта |
| 2. Чăваш тата хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан сăмахсем | упа, тута, туна, пăр, хум. тĕтре |
| 3. Чăваш чĕлхинче хăйĕнче пулса кайнă сăмахсем (чăн чăваш сăмахĕсем) | асатте, асанне, кукамай, кукаçи. хĕрарăм, арçын, хĕр ача, тăхлачă, сăмса, кăвапа, чавса, çивĕт, тĕпел, урай, пусма, сысна, автан. кăвакал, çерçи, кăсăя, шăпчăк, йăпăлтак, кăртăш, тулă, вир, пашалу, ватă, кукăр, симĕс, макăр |

Йышăннă сăмахсем

Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем

| Хăçан тата мĕнле йышăннă | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| I. Калаçу урлă кĕнĕ сăмахем: | |
| 1) XVI ĕмĕрĕччен йышăннă сăмахсем | вырăс, кăмпа, кĕленче, ыраш, Мускав, Кейӳ, (Киев) |
| 2)XVI–XIX ĕмĕрсенче йышăннă сăмахсем | кĕрепле, суха, авăн, кĕлет, çенĕх, мачча,апат, чуста, кĕрпе, ăсла, пиншак, карттус, чăлха, шапа, кушак, çемье, ратне, мăнук, пăт, кире, лавкка, кĕнеке, шкул. кĕсле, кĕпĕрне, вулăс, уретник т. ыт. те |
| II. Çыру урлă йышăннă сăмахсем | революци, совет, парти, депутат, актив, делегат, министр, республика, колхоз, совхоз, комбайн, инженер, техник, каменщик, композитор, пианино, театр, балет, физика, грамматика, хими, лексика, морфологи, наука т. ыт. те |

Урăх чĕлхесенчен йышăннă сăмахсем

| Хăш чĕлхесенчен йышăннă | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| араб | авал, айван, айăп, ахах, аслă, вăхăт, ĕмĕр, калăп, лайăх, масар, меслет, мĕскĕн, мыскара, намăс, перекет, салам, самана, сехет, сунтал, сунтăх, тамаша, телей, тĕнче, халăх, харам, хут, халат, хак, хисеп, шерпет, элек, этем т. ыт. те |
| перс | асамат, ансат, аçтаха, ĕмĕт, кĕсье, йĕтес, йĕтĕн, кахал, кашăк, кĕрепенкке, кимĕ, кӳкĕрт, наркăмăш, начар, нарăс, пай, патша, сăнчăр, сенкер, сехре, сиен, сулă, сурпан, çăхав, тар, тараса, тăшман, тӳс, тӳшек, хастар, хăяр, хуçа, чаршав, чей, чĕлĕм, чĕрĕк, чипер, чӳрече, шӳрпе, эрне, т. ыт. те. |
| | пӳрт, кăшкар, ленкес, пĕрне, ама, аçам, шупăр, |
| мари | кукăль, юсман, пăши, кăткă, лĕпĕш, нăрă, ӳпре, мăян, шăлан, капăр, каччă, лапра, лĕкĕ, лутра, нӳрĕ, шупка т. ыт. те |
| мордва | кала, вула, тачка, панча |
| удмурт | пĕрне, кĕтмел, лапа, пукан, чĕкеç |
| тутар | акăш, алка, капкăн, карчăк, халха, йăваш, йăмшак, йăлăн, тăкăс, тикĕс, йăмран, ялан, янах, юлташ, юлхав, ют, янах, яш, явлăк, ясмăк |
| монгол | тырă, тулă, икерчĕ, турăх, ача, тутăр, тăхлан. нар, какай, чул, хăйăр, хавшак, сăлтав, хурав, çыр т. ыт. те |

Сăмахсен йышĕ усă курас енчен сийленни

| Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| I.Пĕтĕм халăх усă куракан лексика | атте, анне, пичче, йăмăк, куç, пуç, çăвар, чĕлхе, пӳрт, çурт, ампар, мулкач, тилĕ. ĕне, сурăх, курак, куккук, йăмра, вĕрене, пилеш. çĕр улми, кишĕр, сухан, çăкăр, аш |
| II. Халăхăн пĕр-пĕр йышĕ усă куракан лексика: | |
| 1) вырăнти калаçу (диалект) лексики | паранкă, маçак, мамак, аттика, атетте. салакайăк, кăрис, тупа, марта, шĕкĕнтĕр, |

| | |
|---|---|
| | коршак, павар, çерккăл, моркка, çӳç тони, тару, лукша, храмуй, пăталук, серете, вăткасси, калай, сысна чĕппи, яхтă т. ыт. те |
| 2)ятарлă лексика:<br>а) терминсем | грамматика, морфологи, падеж, хисеп, глагол, междомети, предложени, подлежащи, дополнени, сăпат, залог, наклонени, вăхăт, хальхи вăхăт, пулмалли наклонени,<br>хими, кислород, водород, азот, реакци, ядро, катализатор, атом, окись |
| ă)профессионализмсем | утар, пыл хурчĕ, ама хурт, ĕç хурчĕ, сăрă хурт, хурт яр, ама хуранĕ, çăвăр уйăр, çăвăр сап, тул хурт<br>учитель, отметка, дневник, журнал, мел, доска, циркуль, урок, перемена, каникул, звонок, расписани |

Лексикăн стиль сийĕсем

| Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Пур стильре те усă куракан сăмахсем | атте, анне, пӳрт, сарай, çĕр, шыв, сăрт, вăрман, хура, шурă, симĕс, вăйлă, пĕрре, иккĕ, вуннă, пин, эпĕ, эсĕ, вăл, ĕçле, лар |
| 2. Калаçура усă куракан сăмахсем (калаçу лексики) | |
| а) пуплешӳ лексики *(разговорная лексика)* | хуçкалан, муталан, çăмламас, кӳп, чĕрĕл, пакăлтат |
| ă)ахаль калаçу лексики (*просторечная лексика)* | лапăртат, лăпăртат, мĕшĕлтет, шаплат, чаплаттар «чупту», сăпрам, măран, танкка, кӳпке, çатăртат, çăмăлттай, вăрăнтар, йăкăртат, тĕр «сăхланса çи» |
| б) диалект лексики | паранкă, шĕкĕнтĕр, măн хăяр, крысса, явлăк, марта, купалек, алай, хăнча, чĕп çури, кушак чĕппи |
| 3. Çыру лексики: | |
| а)наука лексики | зоологи, ботаника, тычинка, лепесток, гербари. анализ, синтез, шухăшлав, ăнлав, матери, тĕпчев, диссертаци, ученăй |

| | |
|---|---|
| ă) официаллă лексика<br><br><br>б) чаплă лексика | постановлени, указ, закон, приказ, сесси, съезд, конференци, отчет, доклад, резолюци, кун йĕрки, протокол, акт<br>иксĕлми, эреветлĕ-теветлĕ, арканми, сӳнми, асран кайми, кермен, урхамах, çилçунат, çăтмах, ахах, мерчен, ешĕл, ĕнчĕ, симпыл |

Активлă тата пассивлă лексика

| Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Ялан усă куракан сăмахсем (активлă лексика) | атте, анне, ура, вите, лаша, ĕне, сурăх, тырă, сĕт, уйран, çу, шурă, хĕрлĕ, пĕчĕк, пысăк, сарлака, эпир, эсир, кашни, паян, ĕнер, ĕçле, тăрăш. вĕрен, пиллĕк, улттă, çитмĕл, валли, пирки |
| 2.Сайра усă куракан сăмахсем (пассивлă лексика) | |
| кивелнĕ сăмахсем:<br>а) архаизмсем | ант (тупа), антăх (тупа ту), ăрăм (меслет), ăрăмçă (асамçă), им, им-çам (эмел), ип (усă), ăрăс (телей), калем (перо), касамат (тĕрме), кăрлач (январь), нарăс (февраль), ситрел (сӳтĕл), сыхчă (хурал), элем (ялав), чалка (лента) |
| ă) историзмсем | кĕпĕрне, уес, вулăс, страшник, пурмис, мăскал, патман, нӳкер, тĕкĕрç, укçу, ясыр, ясак, кантур, айпăлта, хăрт, тăмха, хырăç, сутник, станувуй |
| 3. Çĕнĕ сăмахсем (неологизмсем) | ăслăлăх (чаплăлăх, мухтавлăх), астăвăм (асăмлăх, асăну), вĕрентĕш (професси ăсталăхне вĕрентекен ятарлă шкул, училище), ĕмĕтçĕ (ĕмĕтленме юратакан, романтик), вулавăш (библиотека), пăралав (çĕре пăраласа шăтарни, хăвăллани), питьен (мальен, пиччĕн) |

## ФРАЗЕОЛОГИ

Чĕлхери уйрăлми тачă çыхăннă сăмах çаврăнăшĕсене тĕпчесе вĕренекен ăслăлăха **ф р а з е о л о г и** теççĕ (терминĕ грек чĕлхинчи *фразис* «сăмах çаврăнăшĕ» тата *логос* «вĕрентӳ» сăмахсенчен пулнă).

**Фразеологизмсен омонимлăхĕ**

| Фразеологизм | Ирĕклĕ сăмах майлашăвĕ |
|---|---|
| шултра ала (пустуй калаçакан çын) | шултра ала, вĕтĕ ала, пысăк ала, пĕчĕк ала (мĕнле ала?) |
| хĕрлĕ автан (пушар) | хĕрлĕ автан, шурă автан, чăпар автан (мĕнле автан?) |
| шăши куçĕ (кантăксăр çунакан краçын лампи) | шăши куçĕ, хур куçĕ, автан куçĕ, сурăх куçĕ (мĕн куçĕ?) |
| турти кĕске (час çилленекен çын) | турти кĕске ( вăрăм мар) |

**Фразеологизмсен синонимлăхĕ**

| Пĕлтерĕшĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| ултала | чике тăршшĕ ларт, пуртти аврипе тыттар, тăм шăхличĕ тыттар, шĕвĕртсе хăвар, куçа тĕтĕм яр, шăвăç чуманпа яр (леç) |
| хăвăрт | куç хупса иличчен, пуля пек, çил пек |

**Фразеологизмсен грамматика тытăмĕ**

| Мĕн евĕрлĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Сăмах майлашăвĕ евĕрлĕ: | |
| а) ят сăмах çаврăнăшĕсем | кукăр алă, ыйхă чăпти, ӳкĕте кĕр, пуçа каçăрт, тăм писмен, турти кĕске |
| ă) глагол сăмах çаврăнăшĕсем | куçран пăх, укçа çап, ӳкĕте кĕр, пуçа каçăрт, пăлахая пер, шă-хăрса юл |
| 2. Предложени евĕрлисем | ял кулать, çӳç вирелле тăчĕ, ăш вăркать, пит пиçрĕ |

**Фразеологизмсен синтаксисри вырӑнӗ**

| Мӗнле член пулать | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| Сказуемӑй | Чӗлхемӗр ӗнтӗ пирӗн пыл та ҫу. *(Я. Ухсай)* Полк иртнӗ аслӑ ҫул ҫинче пуҫ хучӗҫ юлташсем. *(Алка)* |
| Дополнени | Асатте каларӗ пулсан, пулатех! пуш сӑмах авӑртма юратмасть вӑл, ху пӗлен. *(А. Арт.)* |
| Определени | Паҫӑр хуп турттарнӑ пулеметчик хӑй тавра пилӗк-ултӑ ҫын пухнӑ та вӗсене тем каласа асӑрхаттарать |
| Обстоятельство | Панфилӗ, чӑн та, ытла каласма юратакан ҫынах мар, ҫапах та эп ӑна, унтан-кунтан тӗккелесе, пурпӗр ҫӑвара шыв сыпнӑ пек лартмастӑп. *(Л.Агак)* |

**Фразеологизмсен ушкӑнӗсем**

| Пӗлтерӗш пӗрлӗхӗ енчен мӗнлисем пулаҫҫӗ | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| 1.Фразеологи пӗрлешӗвӗсем (выр. *фразеологические сочетания)* | йӗпкӗн хура, йӗпкӗн хӗрлӗ, ташша ҫап, халап ҫап, пӳкле вилӗм, вӗри чӗре, сӗрме купӑс, ҫӗрме пуян, тута тӑс, ҫӑкӑр ҫӗрт, пуҫа ват, тутӑ тыт, тытса чарми, шартлама сивӗ, сӑмах хускат |
| 2. Фразеологи пӗрлӗхӗсем (выр. *фразеологические единства*) | йӗпе сӑмса, турти кӗске, ӗнсе чикки, сехре хӑппи, кӗҫҫе пит, асат хуҫнӑ, вӗре ҫӗлен, тӑм пӑшал, пите кӗҫҫе ҫӗле, шултӑра ала, кӑвак хуппи, нӳхреп куҫ, йӑл ил |

## ЛЕКСИКОГРАФИ

Чӗлхе ӑслӑлӑхӗн словарьсем тӑвас ӗҫе тишкерекен пайне лексикографи теҫҫӗ (терминӗ грек чӗлхинчи *лексикос* «сӑмах» тата *логос* «вӗрентӳ» сӑмахсенчен пулнӑ).

**Словарьсен ушкӑнӗсем**

I. Филологи (е чӗлхе, лингвистика) словарӗсем

II. Энциклопеди словарӗсем

**I. Филологи (чӗлхе) словарӗсем**

**1. Куҫару словарӗсем.**

Чӑвашла-вырӑсла словарь. М., 1961.

Чӑвашла-вырӑсла словарь. М., 1982; М., 1985.

*В.Г.Егоров*. Вырӑсла-чӑвашла словарь. Шупашкар, 1972.

*В.Г.Егоров*. Чӑвашла-вырӑсла словарь. Шупашкар, 1954.

Вырӑсла-чӑвашла словарь. М., 1971.

*М.И.Скворцов*. Чӑвашла-вырӑсла словарь. Вӗренекенсем валли. Шупашкар, 1989.

*М.И.Скворцов*. Русско-чувашский словарь. Для учащихся. Чебоксары, 1992, 1997.

*М.И.Скворцов*, *А.В.Скворцова*. Чӑвашла-вырӑсла тата вырӑсла-чӑвашла словарь. Шупашкар, 2003.

*Л.П.Сергеев*, *Е.Ф.Васильева*. Тематический русско-чувашский словарь. Для 1—4 классов русских школ. Чебоксары, 1998.

*Л.П.Сергеев*, *Е.Ф.Васильева*. Русско-чувашский словарь. Чебоксары, 1999.

**2. Ӑнлантаруллӑ словарьсем.**

*Г.А.Дегтярев*. Чӑваш чӗлхин ҫӗнӗлӗх словарӗ. I том. А—П. Шупашкар, 2003.

**3. Орфографи словарӗсем.**

Чӑваш чӗлхин орфографи словарӗ. Шупашкар, 1963.

Чӑваш чӗлхи орфографийӗн кӗске словарӗ. Шупашкар, 1967.

*Л.П.Сергеев*. Орфографи словарӗ. Вӑтам шкулта вӗренекенсем валли. Шупашкар, 1990.

*Л.П.Сергеев.* Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ. 1—4 классем валли. Шупашкар, 1995.

Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ. А.А.Алексеев пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, 2002.

*Ю.М.Виноградов*, *Г.М.Виноградова*. Орфографи словарĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем. Вăтам тата аслă шкулта вĕренекенсем валли. Шупашкар, 2002.

**4. Орфоэпи словарĕсем.**

*А.Е.Горшков.* Чăваш чĕлхин кĕске орфоэпи словарĕ //Чĕлхе культурин ыйтăвĕсем. Иккĕмĕш кĕнеке. Шупашкар, 1972.

**5. Этимологи словарĕсем.**

*В.Г.Егоров.* Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1964.

*М.Р.Федотов.* Этимологический словарь чувашского языка. Т. I—II. Чебоксары, 1996.

**6. Терминсен словарĕсем.**

*М.К.Костин.* Ялхуçалăх терминĕсен вырăсла-чăвашла словарĕ. Шупашкар, 1976.

*Н.П.Петров.* Русско-чувашский словарь технических терминов. Чебоксары, 1971.

*М.И.Скворцов.* Русско-чувашский общественно-политический словарь. 2-е изд., перераб., допол. Чебоксары, 1986.

*М.И.Скворцов.* Русско-чувашский словарь социальной лексики. Чебоксары, 2004.

*Н.Г.Григорьев.* Русско-чувашский словарь медицинских терминов. Чебоксары, 1996.

*А.Д.Плетнева-Соколова* и др. Русско-чувашский словарь названий растений. Чебоксары, 1963.

*Н.Г.Игнатьев*, *И.П.Павлов.* Чĕр-чун ячĕсен чăваш-вырăслатин словарĕ. Шупашкар, 1993.

*А.В.Голенков*, *А.П.Долгова.* Краткий русско-чувашский психиатрический словарь. Чебоксары, 2000.

**7. Диалектологи словарĕсем.**

*Л.П.Сергеев.* Диалектологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1968.

*Л.П.Сергеев.* Словарь чувашских народных говоров //Материалы по чувашской диалектологии». Вып. 4. Чебоксары, 1971.

**8. Ятарлă словарьсем:**

а) фразеологи словарĕсем

*М.Ф.Чернов.* Краткий русско-чувашский фразеологический словарь. Чебоксары, 1974.

*М.Ф.Чернов.* Чăвашла-вырăсла фразеологи словарĕ. Шупашкар, 1982.

*А.Е.Горшков.* Вырăсла-чăвашла кĕске фразеологи словарĕ // Мĕнле каласан тĕрĕс? Словарь-справочник. Шупашкар, 1973.

*Л.П.Сергеев.* Чăваш фразеологизмĕсен кĕске словарĕ // Актуальные проблемы обучения и воспитания в чувашской школе. Чебоксары, 1980.

*Л.П.Сергеев.* Фразеологи словарĕ. Вăтам шкулта вĕренекенсем валли. Шупашкар, 1995.

*М.Ф.Чернов.* Русско-чувашский фразеологический словарь. Чебоксары, 2003.

ă) синонимсен словарĕсем

*Е.Ф.Васильева.* Синонимсен словарĕ. Шупашкар, 1983.

*Л.П.Сергеев.* Синонимсемпе антонимсен кĕске словарĕ. 1—4 классенче вĕренекенсем валли. Шупашкар, 1995.

б) омонимсен словарĕ

*Л.П.Сергеев, Е.Ф.Васильева.* Омонимсен словарĕ. Вăтам шкул валли. Шупашкар, 1996.

в) тӳнтер словарь

*Л.П.Сергеев* т.ыт. Чăваш чĕлхин тӳнтер словарĕ. Шупашкар, 1985.

г) ют чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсен словарĕсем.

**9. Калаçу словарĕсем.**

*М.И.Скворцов.* Русско-чувашско-венгерский разговорник. Чебоксары, 1981 (Л.Захемскипе пĕрле).

*М.И.Скворцов.* Русско-чувашский разговорник. Чебоксары, 1989; 2-е изд. 1992.

## II. Энциклопеди словарĕсем

*Г.А.Алексеев.* Чувашская медицинская энциклопедия. Т. I. А—М. Чебоксары, 1997; Т. II. Н—Я. Чебоксары, 1998.

Краткая чувашская энциклопедия. Чебоксары, 2001.

*Л.П.Сергеев.* Моргаушский район. Краткая энциклопедия. Чебоксары, 2002.

*Л.П. Сергеев.* Чăваш чĕлхи. Энциклопеди словарĕ. Шупашкар, 2004.

## ДИАЛЕКТОЛОГИ

Чӗлхе ӑслӑлӑхӗн вырӑнти калаҫӑвӗсене тишкерсе тӗпчекен пайне д и а л е к т о л о г и теҫҫӗ (терминӗ грек чӗлхинчи *диалектос* «калаҫу» тата *логос* сӑмахсенчен пулнӑ).

**Чӗлхепе вырӑнти калаҫусен шайлашӑвӗ**

Чӗлхе — Диалект — Вырӑнти калаҫу — Вак калаҫу — Уйрӑм ял(сен) калаҫӑвӗ

**Чӑваш чӗлхин диалекчӗсем**

I. Тури диалект:
1) Сӗнтӗр калаҫӑвӗ
2) Муркаш–Етӗрне калаҫӑвӗ
3) Шупашкар калаҫӑвӗ
4) Хӗрлӗ Чутай калаҫӑвӗ
5) Калинино–Элӗк калаҫӑвӗ

II. Анатри диалект

III. Хутӑш диалект
1) Ҫӗрпӳ–Сӗнтӗрвӑрри калаҫӑвӗ
2) Кӗҫӗн Ҫавал калаҫӑвӗ
3) Вӑрмар калаҫӑвӗ

**Вырӑнти калаҫусем вак калаҫусене уйрӑлни**

I. Тури диалект
1) Сӗнтӗр калаҫӑвӗ: а) Сӗнтӗр вак калаҫӑвӗ
ӑ) Пушкӑрт вак калаҫӑвӗ
2) Муркаш–Етӗрне калаҫӑвӗ: а) Муркаш вак калаҫӑвӗ
ӑ) Етӗрне вак калаҫӑвӗ
б) Ишлей вак калаҫӑвӗ

**Диалектизмсем**

| Диалект сăмахĕсен тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Фонетка диалектизмĕсем | опа, орам, çок, тоттăр, коккăль, хцел, çоар, вурăс, пусăк, хăнча, мă°кă°р, сахат, çамçа, шулчă, молча, путяк, ста, таста, вă°рмон, шу (шыв), ça (çавă), ан (авăн), çӳçĕ (çĕвĕç), сорăк (сурăх), т.ыт. те. |
| 2. Грамматика диалектизмĕсем | çынсам (çынсем), лашасам (лашасем), лашайа (лашана), ĕнейа (ĕнене), пăруйа (пăрăва), лашасама (лашасене), вулат (вулать), вулатĕ (вулать), каймас (каймасть), пĕлмес (пĕлмест), туйăн (тăвăн), çуйăн (çăвăн), калимас (калаймастăп), ĕçлеттĕр (ĕçлетĕр), хусамăр (хăвăр), эп вуласа (эп вуларăм, эпĕ вуланă) |
| 3. Лексика диалектизмĕсем | маçак, атетте, атикка, т´от´т´о, папай (асатте), мамак, апикка, эпи (асанне), шĕкĕнтĕр, моркка, мyркав (кишĕр), явлăк (тутăр), кулюкка (кăвакарчăн), павар (лаç), тупа (çатма), çерккăл (куçкĕски), кулата (пусă) |
| 4. Семантика диалектизмĕсем | чĕпĕ «цыпленок»—выр. калаçура «чăх» пĕлтерĕшлĕ, нихçан «никогда» — выр. калаçура «ялан» пĕлтерĕшлĕ, ӳрĕк «проворный»—выр. калаçура «кахал» пĕлтерĕшлĕ |

**Тутарстанри чăвашсен выранти калаçăвĕсем**

1. Çурçĕр калаçăвĕ
2. Çĕпрел калаçăвĕ
3. Пăва-Теччĕ калаçăвĕ
4. Саккам калаçăвĕ

# ФОНЕТИКА

Фонетика — чӗлхе ӑслӑлӑхӗн сасӑсем ҫинчен вӗрентекен пайӗ (*фонэ* гр. сӑмахӗ, «сасӑ» тенине пӗлтерет).

**Чӑваш фонетикин тӗп законӗсем**

| Фонетика законӗсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| 1. Сингармонизм законӗ — сасӑсен юнашарлӑх килӗшӗвӗ: | |
| а) сыпӑк сингармонизмӗ (сыпӑкри уҫӑ сасӑсемпе хупӑ сасӑсем хытӑлӑхпа ҫемҫелӗх тӗлӗшӗнчен килӗшсе тӑни) | ҫӗ-мӗрт, ла-ша, ҫит-мӗл, хурӑн, ҫӗн-те-рӳ, ху-ра-ма, пӗлӗт-лӗ, кӑн-тӑр-ла |
| ӑ) рет килӗшӗвӗ (сӑмахри уҫӑ сасӑсем рет тӗлӗшӗнчен килӗшсе тӑни — е пурте малти ретрисем, е пурте кайри ретрисем) | а) ҫӗмел, кӗмӗл, вӗренетӗп, ӗнер, эпир, пӗлтерӳ (уҫӑ сасӑсем пурте малти ретрисем), ӑ)кӑвар, тӑхӑрвуннӑ, шатраллӑ, ӑмӑртмалла, хамӑр, ыран (уҫӑ сасӑсем пурте кайри ретрисем) |
| 2. Шавлӑ хупӑ сасӑсем икӗ уҫӑ сасӑ хушшинче тата янравлӑ хупӑ сасӑпа уҫӑ сасӑ хушшинче янӑраса илтӗнни. | а)лаша [лажа], кӗнеке [кӗнеге], апат [абат] ӑ) урпа [урба], касӑ [казӑ], кантӑр [кандӑр], пӗкӗ [пӗгӗ] |
| 3. Сӑмах пуҫламӑшӗнче тата вӗҫӗнче шавлӑ хупӑ сасӑсем янраманнисем кӑна пулни | кас, пӗлӗт, сис, тӗлӗк, хисеп, чӑкӑт |
| 4. Янравлӑ хупӑ сасӑ умӗнче хупӑ сасӑсем янраманнисем кӑна пулни | кӗсре, хутлӑх, такмак, тытнӑ, ҫӗпре, апла, упра, касмӑк |
| 5. Уҫӑ сасӑсем ударениллӗ тата ударенисӗр сыпӑксенче пахалӑх енчен пӗр пек пулни | ака́, упа́, кура́к, самана́, ыра́ш, пыса́к, иле́м, ки́вӗ |

### Уҫӑ фонемӑсен таблици

Чӑваш литература чӗлхинче пурӗ 8 уҫӑ фонема.

| Рет палли / Пусӑм (ҫӳллӗш) палли | Малти рет | Вӑта рет | Кайри рет |
|---|---|---|---|
| Ҫӳлти пусӑм | *и ӳ* | *ы* | *у* |
| Вӑта пусӑм | э ӗ | *ӑ* | |
| Аялти пусӑм | | *а* | |

А с ӑ р х а т т а р у. Сингармонизм законне (уҫӑ сасӑсен рет килӗшӗвне) пула чӑваш чӗлхинчи уҫӑ сасӑсем икӗ ушкӑна пайланаҫҫӗ: а) кайри ретри уҫӑ сасӑсем (*а, ӑ ы, у*), ӑ) малти ретри уҫӑ сасӑсем (*и, э, ӳ, ӗ*).

Фонетикӑпа графика разборне тунӑ чухне вара кашни уҫӑ сасса ҫӳлерех кӑтартнӑ таблицӑри пек ӑнлантарса памалла, тӗслӗхрен, «выльӑх» сӑмахри *ы* уҫӑ фонемӑна вӑта ретри сасӑ тетпӗр.

### Янракан тата янраман уҫӑ сасӑсем (фонемӑсемпе фонемоидсем)

| | | |
|---|---|---|
| янраман фонемӑсемпе фонемоидсем | *к п с т т´ х ш*<br>*ҫ ч* | *п´ к´ х´ ш´* |
| янракан фонемӑсемпе фонемоидсем | *г б з д д´ү ж z´*<br>*д´ ж´* | |
| янравлӑ фонемӑсемпе фонемоидсем | *в в´ j л л´ м м´*<br>*н н´р р´ в: j: л:*<br>*л´ м: н: н´: р:* | |

### Вӑрӑм тата кӗске сасӑсем (фонемӑсемпе фонемоидсем)

| | | |
|---|---|---|
| Вӑрӑм фонемӑсем | *в: j: л:л´ м: н: н´: р:* | |
| Кӗске фонемӑсемпе фонемоидсем | *в j л л´м н н´ р* | *в´ м´ р´* |

**Хупă фонемăсен таблици**

| Пуплев органĕсем (вырăн палли) | Тутапа калакан хупă сасăсем | | Чĕлхепе калакан хупă сасăсем | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Пулу мелĕсем (мел палли) | икĕ тутапа калакан х.с. | тутапа шăлпа калакан х.с. | чĕлхе тӳрчĕн малти пайĕпе кал. х.с. | чĕлхе тӳрчĕн варрипе кал. х.с. | чĕлхе тӳрчĕн хыçалти пайĕпе кал. х.с. |
| Шавлă хупă сасăсем Питĕрĕнчĕк хупă сасăсем | п п’ б | | т т´ д д´ | | к к´ г |
| Хĕсĕнчĕк хупă сасăсем | | ф ф´ | с ш ш´ з ж | ç z´ | х х´ г |
| Аффрикатăсем | | | ц ч д´ж´ | | |
| Янравлă хупă сасăсем Хĕсĕнчĕк хупă сасăсем | | в в´в: | | j j: | |
| Çурма питĕрĕнчĕк хупă сасăсем | м м´ м: | | л л´ н н´ л: л: н: н:´ | | |
| Чĕтренчĕк хупă сасăсем | | | р р´ р: | | |

А с ă р х а т т а р у. Ку таблицăра пуплевре тĕл пулакан чылай сасă çук. Тĕслĕхрен, *атте* [ат´:э,], *аппа* [ап:а], *кукка* [кук:а], *иккĕ* [ик:ь], *ашшĕ* [аш´ь], упи [уб´и] т.ыт. те. Ку сăмахсенче *т´, п,к, к´, ш´, б´* сасăсене мĕнле хакламалла-ши? Таблицăра вĕсем çук, апла пулсан, вĕсем фонема та, фонемоид та пулмаççĕ. Унашкал сасăсене чĕлхе наукинче а л л о ф о н с е м теççĕ. «Атте» сăмахри [т´:] çемçе [т´] фонемăн аллофонĕ шутланать. Çавăн пекех ыттисем те тĕрлĕ фонемăсемпе фонемоидсен аллофонĕсем шутланаççĕ: *аппа* сăмахри *п:* вăрăм хупă сасă [п] фонемăн аллофонĕ, *кукка* сăмахри *к:* вăрăм хупă сасă [к] фонемăн аллофонĕ пулать. «Упи» сăмахра çемçе *б´* сасă [б] фонемăн аллофонĕ пулса тăрать.

Фонетикăпа графикăра тишкерĕвĕ тунă чухне çак асăрхаттарăва манмалла мар.

## Хупă фонемăсен системи

### Тĕп чăваш сăмахĕсенче 33 хупă фонема тата 8 фонемоид. Йышăннă фонемăсем 3

| | |
|---|---|
| фонемăсем | *в j к л л́м н н́ п р с ё т т́ х ч ш б г д ж з ź ɣ д́ж́ в:j: л: л́: м: н: н́: р* |
| фонемоидсем | *в́ д́ ќ м́ п́ р х́ ш́* |
| йышăннă фонемăсем | *ф ф́ ц* |

### Хытă тата çемçе сасăсем (фонемăсемпе фонемоидсем)

| | | | |
|---|---|---|---|
| Хытă фонемăсем | *в п т д к х ш л м н р л : н:* | с з б ж г ɣ в: м: р: | |
| Çемçе фонемăсемпе фонемоидсем | *в п т д к х ш л м н р л: н:* | | j j: ç ź ч д́ж́ |

### Хупă сасăсем

| Шавлă хупă фонемăсемпе фонемоидсем | | | | Янравлă хупă фонемăсемпе фонемоидсем | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Янраканнисем | | Янраманнисем | | Кĕскисем | | Вăрăммисем | |
| Хытă | çемçе | Хытă | çемçе | Хытă | çемçе | Хытă | çемçе |
| б | | п | *п’* | в | в’ | в: | |
| г | | к | *к’* | | j | | j: |
| д | д’ | т | *т’* | л | л’ | л: | л’: |
| ж | | ш | *ш’* | м | м’ | м: | |
| з | z’ | с | | н | н’ | н: | н’: |
| ɣ | | ç | *р* | р’ | р: | | |
| | д́ж́ | х | *х’* | | | | |
| | | | *ч* | | | | |
| | | | *ф́* | | | | |

**Фонемăсем пуплевре улшăнни**

| | |
|---|---|
| Юнашарлăх улшăнăвĕсем | 1. *j, ç, ч, д́ж, z'* сасăсем хыççăн е умĕн тăракан уçă сасăсен пуçламăшĕ е вĕçĕ çемçерех илтĕнеççĕ (çав çемçе хупă сасăсем витернипе): *çапла, jур, чăм, хачă, ка'ză*<br>2) хытă сăмахсенче *и* сасă хăйне икĕ тĕрлĕ тытать:<br>а) *п, б, м, в, к, г, х, γ* хупă сасăсем çемçелеççĕ: *çава—çав́и уба—уб́и, куба—куб́и, çагă—çаѓи (çакă-и)*<br>ă) *т, д, л, н, р, с, з, ш, ж* хупă сасăсене ун пек пăхăнтараймасть (вĕсем кăшт çеç çемçелеççĕ) *тудă—туди, пулă—пулли, лажа—лажи, адă—атти.* |
| Позици улшăнăвĕсем | 1) уçă сасăсем ударенисĕр сыпăксенче кĕскелеççĕ: *лажа, т΄эл΄эй, çив΄ит΄:и,*<br>2) э сасă сăмах пуçламăшĕнче тата вĕçĕнче сарлакарах, анлăрах илтĕнет — *эб̆ĕ, эз̆ĕ, эр́нэ, п΄ўр́нэ, ќĕлд́э,*<br>3) сăмах вĕçĕнче тăракан янравлă хупă сасăсем сăмах варринчи янăраман хупă сасăсем хыçĕнче тăнă чухнехи пек янăравсăртарах илтĕнеççĕ: *сунтал*—танл. *капла, вăрман*—танл. *утнă, тудăр—кăтра,*<br>4) янăракан хупă сасăсем икĕ уçă сасă хушшинче чухне янăравсăртарах илтĕнеççĕ: *уба, тажă, узă, адă,* янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче тăнă чух янăравлăрах илтĕнеççĕ *вăлда, кăмба, хăмзар, унгă* |

**Фонемăсен ылмашăвĕ**

| Ылмашу тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1.Фонетика ылмашăвĕсем | ывăл—ывăл΄ĕ (*л [ л΄)*<br>вулатпăр—вулап:ăр (*т[ п)*<br>чĕг΄эçсем΄—чĕг΄эç:эм΄ *(ç [с)*<br>вуласшăн—вулаш:ăн *(с [ш)*<br>тажă—ташла (*ж [ ш)*<br>тап—табăр *(п [ б)*<br>çип΄—çиб΄ĕ *(п [ б)* |
| 2. Истори ылмашăвĕсем | п΄иç—п΄ĕz΄эр΄, в΄ил΄—в΄ĕл΄эр΄, кур—кăдарт, шыв—шăвар, к΄ĕр΄ к΄ўр΄т΄ |

Асăрхаттару. Фонетика ылмашăвĕсен тĕсĕсем кунта кăтартнинчен нумайрах, вĕсене учебникра тĕплĕ çырса кăтартнă.

Сăмах чиккинчи улшăнусем

| Мĕнле улшăнусем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Çыхăнтарса калакан сăмах чиккинче икĕ уçă сасă хушшинче е янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче тăракан шавлă хупă сасăсем янăраса илтĕнни | мана пар>манабар, пӳрт урлă> пӳрдурлă, яш ача> яжача, катăк уйăх>кадăгуйăх, çак этем> çагэдем, ун пекех >унбегех |
| 2. Çыхăнтарса калакан сăмахсен пĕрлешĕвĕнче малти вырăнта *ă,ĕ* сасăсемпе пĕтекен сăмах тăнă чухне çав уçă сасăсем тухса ӳкни (кунашкал тĕслĕхсенче *ă,ĕ* умĕнчи сасă янăрамасăр илтĕнет) | вудă хут> вутхут, узă кур >ускур, çичĕ çын> çичçын, вадă çын> ватçын |

Сыпăк

Уçă сыпăксем: ла-жа, ĕ-н′э, к′ĕ-н′э-г′э, пĕ-дĕ, в ′ĕ-р′э-н′э.
Хупă сыпăксем: вăр-ман, кăм-рăк, п′ĕл′-д′ĕр.
Витĕнтернĕ сыпăксем: к′ĕ-н′э-г′э, п′ĕ-л′ĕт′, çĕр′-жыв.
Витĕнтермен сыпăксем: ă-ман, ĕ-л′ĕк′, ых-ра, ă-жă, ир′-б′э.

# ГРАФИКА

«Графика» терминпа чӗлхе наукинче икӗ пӗлтерӗшпе усӑ кураҫҫӗ (grapho – грек сӑмахӗ, вӑл «ҫыратӑп, ӳкеретӗп, йӗрлетӗп» тенине пӗлтерет): 1) алфавитри сас паллисене ҫырмалли йӗрке, 2) чӗлхери сасӑсене сас паллисемпе кӑтартмалли мел, сас паллисене вуламалли йӗрке, сас паллисен сасӑ пӗлтерӗшӗсем.

Ҫырура усӑ куракан сас паллисен йышӑннӑ ҫирӗп йӗрки пур. Ӑна чӗлхе наукинче а л ф а в и т теҫҫӗ (*Алфавит* – грек сӑмахӗ, ӑна авалхи грексен ҫырӑвӗнчи пуҫламӑш икӗ сас паллин ячӗсенчен – *альфа* тата *вита* – пулнӑ). Чӑваш алфавитӗнче 37 сас палли, вӗсен кашнин хӑйӗн ячӗ, ҫирӗп вырӑнӗ тата ҫырмалли сӑн-сӑпачӗ (ӳкерчӗкӗ) пур.

## Чӑваш алфавичӗн историйӗнчен

1. Чӑваш чӗлхин пӗрремӗш грамматикинче («Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка», 1769 ҫ.) вырӑс алфавитӗнчен илнӗ 31 сас паллипе усӑ курнӑ: *а,б, в, г, д, е, ж, з, и, і, к, л, м, н, о, п, р, с, т, у, х, ч, ш, ь, ы, ъ, ять, й, э, ю, я.*

Унсӑр пуҫне, кӗнекере латин алфавитӗнчен илнӗ *g* сас палли пур.

2. С. Элпидин хатӗрленӗ букварь (1832 ҫ.) алфавитӗнче ҫакӑн пек сас паллисемпе усӑ курнӑ: *а, б, г, гг, д, е, ж, з, и, і, іô, і^у, к, л, м, н, о, п, р, с, т, у, х, ч, ш, ъ, ы, ^ь, Ь^и, я, ю, э.*

(Алфавитра *й* сас палли ҫук, апла пулин те букварь тексчӗсенче вӑл саспаллипе усӑ курнӑ).

3. Н.И. Золотницкин «Чуваш кнеге» букварӗпе (1867 ҫ.) «Сӧлдалык кнеге» календарӗнче 32 сас паллипе усӑ курнӑ: *а, я, э, е, ы, и,і, о,ŏ, у,ӳ,ю, й, ь, п, б, с, з, т, д, ш, ж, к, г, х, і, в, р, л, н, м, ч.*

## И.Я. Яковлев алфавичӗ

1. Алфавитӑн пӗрремӗш вариантӗнче (1871 ҫ.) 47 сас палли: *Аа, Бб, Б′б′, Вв, В′в′, Гг, Г′г′, FF, F′F′ Дд, Д′д′, Д″д″, Ее, Жж, Ж′ж′,*

*Зз, З'з', Ии, Йй, Кк, К'к', Лл, Л'л',Мм, М'м', Нн, Н'н'. Оо, Пп, П'п', Рр, Р'р', Сс, С'с', Тт, Т'т',Т"т". Уу, Ӳӳ, ФФ, Хх, Х'х'. Шш, Ш'ш', Ъъ, Ьь, Ыы.*

2. Алфавитăн иккĕмĕш варианчĕ (1872 ç.) 27 сас паллирен тăрать: *Аа, Пп ,Вв, Кк, Тт, Т'т', Ћћ, Ее, Шш, Сс, Çç, Ии, Jj, Лл, Љљ, Мм, Нн, Њњ, Оо, Рр, Уу, Ӳӳ, Фф, Хх, Ъъ, Ьь, Ыы.*

3. Алфавитăн виççĕмĕш варианчĕ (1873 ç.) çакăн пек:

*АА, Ӑă, Уу, Ыы, Ее, Ĕĕ, Ӳӳ, Ии, Йй, Лл, Љљ, Мм, Нн, Њњ, Рр, Сс, Çç, Шш, Вв, Кк, Хх, Пп, Тт, Ťť, Ћћ.*

Ку алфавитпа ним улăштармасăр 60 çул хушши усă курнă.

### Совет влаçĕ вăхăтĕнче алфавита улшăнусем кĕртни

| Хăш çулта | Мĕнле улшăнусем |
|---|---|
| 1923 | *О* сас палли кĕртнĕ |
| 1926 | *ф* сас палли кĕртнĕ |
| 1933 | *б, г, д, ж, з, ц* сас паллисене хушнă, *Ћ* сас палли вырăнне *ч* çырма йышăннă |
| 1938 | *э, ю, я, щ, ъ, ь* сас паллисене кĕртнĕ, *љ, њ, ť* сас паллисене кăларнă |
| 1949 | *ё* сас палли кĕртнĕ |

### Хальхи чăваш алфавичĕ

*А, ă, б, в, г, д, е, ё, ĕ, ж, з, и, й, к, л, м, н, о, п, р, с,ç, т, у, ӳ, ф, х, ц, ч, ш, щ, ъ, ы, ь, э, ю, я.*

### Сас паллисен пĕлтерĕшĕ

| Мĕнле сас паллисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Пĕр усă сасса пĕлтерекеннисем | *а, ă, ĕ, и, о, у, ӳ, ы, э* |
| 2. *й* сасăпа усă сасă пĕрлешĕвне кăтартаканнисем | *е, ё, ю, я* |
| 3.Хупă сасăсене пĕлтерекеннисем | *б, в, г, д, ж, з, й, к, л, м, н, п, р, с, ç, т, ф, х, ц, ч, ш, щ* |
| 4.Хупă сасăсен çемçелĕхне кăтартакан паллă | *ь* |
| 5. Пĕлтерĕшсĕр паллă | *ъ* |

Хупă сасăсен çемçелĕхне палăртни

| Мĕнле майпа | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. çемçелĕх паллипе, кайри ретри сасăсемлĕ сăмахсенче<br>2. *е, ĕ, и, ÿ, э, ю, я* саспаллисемпе | *кукăль, мăкăнь, шукăль, супăнь, сурать, юрать, вылььăх*<br>*килет, вĕрен, çĕнĕ, Петюк, атя, этем, Санюк, пÿлĕм, кĕтÿ* |

*Й* сасса палăртни

| Мĕнле паллăсемпе | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. *й* саспаллипе | а) сăмах пуçламăшĕнче (*ă, ĕ, ÿ, ы* уçă саспаллисем умĕн): *йăва, йĕлтĕр, йÿçĕ*<br>ă) сăмах вĕçĕнче: *телей, кай, сакай, вăй*<br>б) сăмах варринче (хупă сасă умĕнче): *пайтах, уйрăм, хăйма* |
| 2. *е, ĕ, ю, я* саспаллисемпе | 1) сăмах пуçламăшĕнче: *ешĕл* (йешĕл), *ёлка* (йолка), *юман* (йуман), *япала* (йапала)<br>2) сăмах варринче:<br>а) уçă саспалли хыççăн *паян* (пайан), *хăю* (хăйу), *тиет* (тийэт)<br>ă) *ъ, ь* хыççăн: *пьеса* (пйэсă), *съезд* (сйэст), *мăрье* (мăрйэ) |

Хупă сасăсен янравсăрлăхне палăртасси

1. Янракан шавлă хупă сасăсем чăваш сăмахĕсенче икĕ çĕрте тĕл пулаççĕ:

а) икĕ уçă сасă хушшинче – атă [адă], усă [узă], упа [уба], вĕтĕ [вĕдĕ], эпĕ [эбĕ], ăшă [ăжă];

ă) янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче – калта [калда], кăмпа [кăмба], кĕрпе [кĕрбе], кĕлте [кĕлде], пĕлтĕр [пĕлдĕр];

Çырура янăраканнисене те, янăраманнисене те *к, п, т. с, ç, х, ч, ш* саспаллисемпе палăртма йышăннă.

2. Янăраман шавлă хупă сасăсем сăмахăн çак позицийĕсенче тĕл пулаççĕ:

1) сăмах пуçламăшĕпе вĕçĕнче – *палăк, пĕлĕш, кулăш, сасартăк, шăпчăк;*

2) сăмах варринче, янăравлă сасăсем умĕнче – *ÿпре, капла, касрĕ, сукмак, шăплан, куçлă, тăпра;*

3) сăмах варринче юнашар икĕ шавлă хупă сасă пулсан – *ăста, шутсăр, йăптăх, каска.*

# ОРФОГРАФИ

Орфографи — чӗлхе ӑслӑлӑхӗн сӑмахсене тӗрӗс ҫырассине тӗпчесе йӗркелекен пайӗ (терминӗ *orfhos* «тӗрӗс» тата *grapho* «ҫыратӑп» сӑмахсенчен пулнӑ).

## Орфографи правилисен ушкӑнӗсем

1. Сасӑсене палӑртасси.
2. Тӗрлӗ сӑмах ушкӑнӗсене ҫырасси (пуплев пайӗсем тӑрӑх).
3. Пӗрле, дефиспа е уйрӑм ҫырасси.
4. Сӑмаха пысӑк сас паллипе пуҫласа ҫырасси.
5. Сӑмахсене кӗскетсе ҫырасси.
6. Сӑмах пайӗсене пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарасси.

## Орфографи принципӗсем

1. Морфологи принципӗ: ***чӑвашсем*** (чӑвашшем), ***виҫшер*** (вишшер), ***тӑрӑшса*** (тӑрӑшша), ***пӗлесшӗн*** (пӗлешшӗн), ***вулатпӑр*** (вулаппӑр), ***вӗренетчӗ*** (вӗренеччӗ), ***калаҫса*** (калаҫҫа).

2. Фонема принципӗ: *сурт, алӑ, ҫӳҫ, чӗре, ура, йӑмра, шыв, йӑмӑк, ыраш, хӑйма, алӑк, хӑма, лӑпкӑ, ясмӑк, юмах.*

3. Традици принципӗ: *хӗрарӑм, ҫулталӑк, туmmир, урай, сакай, мӗнле* (мӗлле; танл. *куллен* < *кунлен*).

# МОРФЕМИКА

Сăмахсен, сăмах формисен пĕлтерĕшлĕ пайĕсене тĕпчекен чĕлхе ăслăлăхĕн пайне *морфемика* теççĕ.

**Морфемăсем**

*Морфема* — сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк пайĕ.

| Морфемăсен тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Тымар морфема (сăмах тымарĕ) | куç, пуç, çӳç, сăмса, алă, хăлха, ура, тир, çĕр, хĕвел, пĕлĕт, çул, юр, çумăр, кай, кил, тыт, тар, сут, пĕл, ыră, пĕчĕк, аван, эпĕ, эсĕ, вăл |
| 2. Аффикс морфема (аффикссем е суффикссем) | куç+**лăх**, куç+**сăр**, куç+**сем**, куç+**шăн**, куç+**па**, кала+**в**, кала+**в**+**çă**, кала+**кан**, кала+**т**+**ăп**, кала+**нă** |
| 3. Префикс морфема (префикссем) | а) **ни**-кам, **ни**-мĕн, **ни**-мĕнле, **ни**-епле, **ни**-хăш<br>ă) **ни**-хăçан ~ **ни**-хçан (нар.)<br>б) **та**-кам, **те**-мĕн ~ **те**-м, **те**-мĕнле ~ **те**-мле, **те**-пле, **та**-хăш, **те**-миçе (мест.)<br>в) **те**-пĕр (мест.)<br>г) **та**-хăçан ~ **та**-хçан (нар.) |

**Тымар морфемăсен тĕсĕсем**

1. Ирĕклĕ тымар морфемăсем: *çын*, *ача*, *тилĕ*, *ула*, *алă*, *ура*, *ир*, *каç*, *кай*, *кил*, *паян*, *ыран*, *шурă*, *сарă*, *эпĕ*, *вăл* т.ыт.те.

2. Çыхăнчăк тымар морфемăсем (радиксоидсем): ***ват***, ***ван***, ***вак***; ***çут***, ***çун***; ***хускат***, ***хускан***, ***хускав***; ***хумхан***, ***хумхат***; ***пăтрат***, ***пăтран***; ***вĕрлĕк***; ***шырлăх***; ***аçлăк***, ***пылăх***.

**Морф, морфема, алломорф**

*Морф* — сăмах тытăмĕн уйрăм пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк пайĕ.

*Морфема* — пĕр-пĕр морф хăйĕн пĕлтерĕшĕпе темиçе сăмахра тĕл пулни.

*Алломорф* — сасă тата пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен пĕр пек, анчах формипе расна морфсем темиçе сăмахра тĕл пулни.

| | |
|---|---|
| Морфсем | юлташ-сем, тăван-ăм-ăр, хула-ран, чуп-ай-ма-р-ăм |
| Морфемăсем: а) **-ăм** | юлташ-**ăм**, тăван-**ăм**, ывăл-**ăм**, ял-**ăм**, тус-**ăм** |
| ă) **-ра** | хула-**ра**, юлташ-**ра**, çырма-**ра**, кино-**ра** |
| Алломорфсем:<br>а) -ăм (-ĕм, -м)<br>ă) -сем (-сен) | тус-**ăм**-сем, ача-**м**-сен-че, çĕлĕк-**ĕм**, пичче-**м**-рен;<br>кĕнеке-**сем**, кĕнеке-**сен**-е, юлташ-сен-че |

Алломорфсем

| Алломорфсен тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Тымар морфемăсен алломорфĕсем | 1) пиç — пĕç-ер; вил — вĕл-ер<br>2) шыв — шăв-ак, шăв-ар<br>3) шӳ — шĕв-ĕ, шĕв-ет<br>4) 10 глаголта: пар — па-тăм, па-чĕ, па-ма-н, па-нă, па-н-и<br>5) ни-мĕн, ни-м, мĕ-скер<br>6) турат — турач-ĕ, хурт — хурч-ĕ |
| Сăмах тăвакан аффикс морфемăсен алломорфĕсем | **-лăх (-лĕх)**: юман-лăх, тус-лăх, пилеш-лĕх, çĕнĕ-лĕх<br>**-çă (-çĕ, -ç)**: пулă-çă ~ пулă-ç, чĕлхе-çĕ ~ чĕлхе-ç, хăмла-çă<br>**-у (-ӳ)**: çыр-у, кĕт-ӳ, пĕл-ӳ, лар-у т.ыт.те |
| Сăмаха улăштаракан (синтаксис) аффиксĕсен алломорфĕсем | **-ра (-ре, -та, -те, -че)**: вăрман-та, кино-ра, кил-те, кĕнеке-ре, ял-сен-че |
| Форма тăвакан аффикссен алломорфĕсем | **-мас (-мес, -ма, -ме, -м)**: çыр-мас-т-ăп, çыр-ма-р-ăм, çыр-м-ăп<br>**-ăм (-ĕм, -м)**: тус-ăм, хĕр-ĕм, лаша-м<br>**-ĕ (-и)**: юлташ-ĕ, ач-и, кĕнек-и т.ыт.те |

Аффикссем

| Аффикссен ушкăнěсем | Тěслěхсем |
|---|---|
| 1. Сăмах тăвакан аффикссем | çыр+у, çыр+у+лăх, тимěр-çě, лар-у, шут+ла, шут+ла+в, шыв-ак, лар-чăк, пěл+ÿ, пěл+ÿ+лěх, юман-лăх |
| 2. Сăмаха улăштаракан аффикссем (çыхăнтару е синтаксис аффиксěсем): | |
| а) падеж аф. | сěтел+ěн, сěтел+е, сěтел+те, сěтел+тен |
| ă) хисеп аф. | сěтел+сем, кěнеке+сем, ял+сем, сăрт+сем |
| б) сăпат аф. | вула+т+ăп, вула+т+ăн, вула+ть; пěл+т+ěм, пěл+т+ěн, пěл+ч+ě |
| в) хисеп аф. | вула+т+п+ăр, вула+т+ăр, пěл+т+ěм+ěр |
| г) сулăну аф. | вăрман+алла, кил+елле, ял+алла |
| д) пурлă ф.афф. | куçлăх-лă, пальто-ллă, ÿкерчěк-лě, машинă-ллă, шěлепке-ллě |
| е) евěрлěх ф.афф. | чăваш-ла, мари-лле, нимěç-ле; пукане-лле, лапта-лла, шашкă-лла |
| ё) тăсăмлăх ф.аф. | каç-чен, ир-ччен, эрне-ччен, вăрçă-ччен, срок-чен; кили-ччен, вули-ччен, пěли-ччен |
| ж) мěнлелěх ф.аф. | ылтăнăн, кěмěлěн, ахахăн; симěссěн, кăваккăн, шултран |
| 3.Форма тăвакан аффикссем (морфологи аффиксěсем): | |
| а) вăхăт аф. | çыр+ат+ăп, çыр+ат+ăн, çыр+ать вула+р+ăм, вула+р+ě, кил+ч+ě |
| ă) наклонени аф. | вул+ăтт+ăм, вул+ăтт+ăн, вул+ěчч+ě |
| б) инфинитив аф. | вěрен+ме, вěрен+мешкěн, çыр+машкăн |
| в) причасти аф. | лар+акан, пěл+нě, çыр+малла, итл+ес |
| г) деепрleft.аф. | кай+са, пěл+се, итле+сен, тыт+сас-сăн, тух+иччен, çыр+массерен |
| д) камăнлăх аф. | кăранташ+ăм, кăранташ+у, кăранташ+ě |
| е) вăйлату аф. | ял-ах, каятăп-ах, паян-ах, вěсем-ех, виççěмěш-ех |
| ж) танлаштаруллă степень аф. | кăвак+рах, çутă+рах, хěрлě+рех, чăмăр+тарах |
| з) иртнě вăхăт аф. | студентчě, вăрмантаччě, хулаччě; ыранччě, паянччě; хăмăрччě, хěрлěччě: эпěччě, вěсенеччě |

Сăмах тымарĕ, тĕпĕ тата аффикссем

| | Сăмах тĕпĕ | | Форма тăвакан аффикс | Синтаксис аффиксĕ |
|---|---|---|---|---|
| | Сăмах тымарĕ | Сăмах тăвакан аффикс | | |
| калавçăна | кала | в+çă | | на |
| вуламалли | вула | | малл+и | |
| юманлăхра | юман | лăх | | ра |
| ирĕклĕх | ирĕк | лĕх | | |
| хăравçăсем | хăра | в+çă | | сем |
| çыруçăран | çырçу+çă | | | ран |
| илемлететпĕр | илем | лет | ет | п+ĕр |
| кăвакарнă | кăвак | ар | нă | |
| шанчăклăрах | шан | чăк+лă | рах | |
| çинçешке | çинçе | шке | | |
| килĕшӳллĕ | килĕш | ӳ+ллĕ | | |
| пĕрлешиччен | пĕр | леш | иччен | |
| тасалăхшăн | таса | лăх | | шăн |

Çыхăнчăк тымарсем

| Ирĕклĕ тымарсем | Çыхăнчăк тымарсем |
|---|---|
| нĕрсĕр, сĕмсĕр<br>вĕтлĕх, çăкалăх<br>ырлăх<br>пурлăх<br>ачалăх<br>сăнăла<br>сăрла<br>хурла | ирсĕр<br>чăтлăх<br>шырлăх<br>аçлăк<br>вула<br>ула<br>кала |

## МОРФОНОЛОГИ

*Морфонологи* — чӗлхе ăслăлăхӗн морфсен ҫӗвӗкӗнчи (морфсен чиккинчи) сасă улшăнăвӗсене тӗпчесе вӗренекен пайӗ.

### Морфонологи пулăмӗсем

Морфонологи пулăмӗсем — сăмахри морфсем пӗрлешнӗ тӗлте (морфсен чиккинче) пулса иртекен пулăмсем:

1. Фонемăсен ылмашăвӗ.
2. Морфсем хушшине фонемăсем кӗрсе ларни.
3. Морфсен хуплашăвӗ.
4. Сăмах тăвакан тӗп ансатланни (кӗскелни).

### Фонемăсен ылмашăвӗ

Фонемăсен ылмашăвӗ — пӗр морфемăн алломорфӗсенче тӗрлӗ фонемăсем пулни. Ылмашу сăмах тӗпӗнче те, аффикссенче те пулма пултарать.

### Уҫă сасăсен ылмашăвӗ

1. Сингармонизм законне пула аффикссенче хытă тата ҫемҫе уҫă фонемăсем ылмашни:

**а ~ е**: уйра — пӗвере, хуларан — ӗҫрен

**ă ~ ӗ**: юлташăн — пӗлӗшӗн, юманăн — пилешӗн

**а ~ ă**: аппа — аппăшӗ, анне (ама) — амăшӗ

**е ~ ӗ**: пичче — пиччӗшӗ, инке — инкӗшӗ

**у ~ ӳ**: шăллу — пиччӳ, ҫырăву — пӗлӗвӳ

2. Падеж аффиксӗсен хытă тата ҫемҫе варианчӗсенчи ылмашусем: *-ăн* (*-ӗн*), *-а* (*-е*), *-та* (*-те*), *-ра* (*-ре*), *-тан* (*-тен*), *-ран* (*-рен*), *-па* (*-пе*), *-пала* (*-пеле*), *-палан* (*-пелен*), *-сăр* (*-сӗр*), *-шăн* (*-шӗн*).

3. **У**, **ӳ** сасăсемпе пӗтекен япала ячӗсен камăнлăхпа пару падежӗсенчи ылмашусем:

**у ~ ă**: лару — ларăвăн, ларăва; ҫыру — ҫырăвăн, ҫырăва

**ӳ ~ ӗ**: пӗлӳ — пӗлӗвӗн, пӗлӗве; кӗрӳ — кӗрӗвӗн, кӗрӗве

4. Камăнлăх форминчи япала ячĕсен сăпат аффиксĕсенчи ылмашусем: *-ăм* (*-ĕм*), *-ăмăр* (*-ĕмĕр*), *-ăмсем* (*-ĕмсем*), *-у* (*-ӳ*), *-ăр* (*-ĕр*), *-ĕ* (*-и*).

5. Уçă сасăпа пĕтекен сăмахсем çумне уçă сасăпа пуçланакан аффикссем хушăннă чухнехи ылмашусем:

**а** ~ нуль сасă, **е** ~ нуль сасă: лаша — лаши, ĕне — ĕни; сарлака — саркакăш, тачка — тачкăш; лаша — лашу; ĕне — ĕнӳ; хупла — хуплу, канашла — канашлу;

**ă** ~ нуль сасă, **ĕ** ~ нуль сасă: тӳрĕ — тӳрем, йӳçĕ — йӳçек, çутă — çутам, хытă — хытанка, вăйлă — вăйламас, тĕклĕ — тĕклемес.

## Хупă сасăсен ылмашăвĕ

1. Сингармонизм законĕпе килĕшӳллĕн аффикссенчи хытă тата çемçе хупă сасăсем ылмашни:

**л** ~ **л'**: сăрла — вĕçле, сухала — сĕрле, çăкалăх — пилешлĕх
**н** ~ **н'**: шăллăмăн — пиччен, сурăхăн — путекĕн
**т** ~ **т'**: тулта — килте, вăрмантан — кервентен, çаптар — пĕлтер

2. Сăмахсем çумне *-и*, *-ăн* (*-ĕн*) аффикссем хушăннă чухне кĕске хупă сасăпа вăрăмми ылмашни: кăвак — кăвакки, симĕс — симĕсси, вăрăм — вăрăмми, сахал — сахалли, хулăн — хулăнни; çăмăл — çăмăллăн, йывăр — йывăррăн, вĕтĕ — вĕттĕн, çепĕç — çепĕççĕн.

3. **Р** ~ нуль сасă: **р** сасăпа пĕтекен 10 глаголта хăш-пĕр аффикссем хушăннă чухне **р** тухса ӳкни: пар — патăм, панă, памалла; кĕр — кĕтĕм, кĕнĕ, кĕмелли.

4. **Н** сасăпа пĕтекен сăмахсен вырăн тата туху падежĕсенчи **р** ~ **т** ылмашу: районта — районра, килтен — килрен, кавăнтан — кавăнран, йĕвенте — йĕвенре.

5. Хăш-пĕр падеж формисенчи **т** ~ **р** ~ **ч** ылмашу: районта — районĕнче, уйран — уйĕнчен, хуларан — хулинчен.

6. *-Лă* (*-лĕ*), *-ла* (*-ле*) аффикслă япала ячĕсенчи кĕске тата вăрăм хупă сасăсен ылмашăвĕ: тутлă — çуллă, тăнлă — пыллă; ӳсĕрле — кивĕлле, черетле — сивĕлле.

## Морфсем хушшине фонемăсем кĕрсе ларни

*Интерфонема* — морфсен чиккинче уçă сасăсене уйăрма кĕрсе ларакан хупă фонема (сасă):

1) **й** интерфонема: çерçи — çерçийĕ, шăши — шăшие (шăшийэ); пăши — пăшийĕм; çи — çиетĕп, çийĕп;

2) **н** интерфонема: лаша — лашана, ĕне — ĕнене, ĕнине, хула — хулана;

3) **в** интерфонема: пăру — пăрăвăн, пăрăва, кĕрӳ — кĕрĕвĕн, кĕрĕве; çу — çăвать, çăвакан, тӳ — тĕвет, тĕвекен; депо — деповĕ, райпо — райповĕ.

### Морфсен хуплашăвĕ

Морфсен хуплашăвĕ тесе морфсен чиккинче (çĕвĕкĕнче) пĕрешкел уçă сасăсем пĕр-пĕринпе хуплашăнса ларнине калаççĕ:

1) вула + акан > вулакан; ĕçле + екен > ĕçлекен;
2) пулă + ăн > пуллăн, сăвă + ăн > сăввăн;
3) вула + атăп > вулатăп, ĕçле + етĕп > ĕçлетĕп;
4) çара + амас > çарамас, милке + емес > милкемес;
5) çавра + ака > çавракa, кăтра + ака > кăтрака;
6) тăрă + ăл > тăрăл, чĕрĕ + ĕл > чĕрĕл, урă + ăл > урăл;
7) пăчă + ăх > пăчăх, вĕчĕ + ĕх > вĕчĕх;
8) çӳллĕ + ĕш > çӳллĕш, анлă + ăш > анлăш;
9) чăмла + ак > чăмлак, хавша + ак > хавшак.

### Сăмах тăвакан тĕп ансатланни

Ку пулăм пулакан е пултаракан тĕпри хăш-пĕр хупă сасăсем тухса ӳкнипе çыхăннă:

1) **кка** тухса ӳкни: сăрна + ккай > сăрнай, тăмса + ккай > тăмсай;

2) пултаракан тĕпри **к**, **м** хупă фонемăсем тухса ӳкни: валак + шка > валашка, пуклак + шка > пуклашка, чармак + шка > чармашка, лапам + шка > лупашка.

Юлашки тĕслĕхре **а** ~ **у** фонемăсен ылмашăвĕ пур.

## СĂМАХ ПУЛĂВĔ

*Сăмах пулăвĕ* — чĕлхе ăслăлăхĕн сăмах пулăвĕн системине тĕпчесе вĕренекен пайĕ.

| Сăмах пулăвĕн мелĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Морфологи мелĕ | тимĕр+çĕ, кăтăк+ла, эрне+лĕх, ӳкер+чĕк, мухта+в, ăс+лă, ĕрет+сĕр, сӳре+ле, тус+лаш, илем+лет, чăваш+ла, нумай+ччен, каç+серен |
| 2. Лексикăпа синтаксис мелĕ (икĕ е виçĕ тымарлă сăмахсем): | |
| 1) хутлă сăмахсем | тумтир, асатте, тавтапуç, çулталăк, тăвайкки, улмуççи, çуртри, кăçатă, хĕрарăм, фотоӳкерчĕк, пĕркун (хальтерех), пĕрмай (ялан). |
| 2) мăшăр сăмахсем | пит-куç, атте-анне, кунĕн-çĕрĕн, атă-пушмак, ир-каç, ик-виç, тăнлă-пуçлă, урлă-пирлĕ, тути-маси, ĕлĕк-авал, ватă-вĕтĕ, хура-шур, ирĕн-каçăн, кунĕн-çĕрĕн, паян-ыран т.ыт.те. |
| 3. Субстантиваци, адъективаци тата вербализаци мелĕсем (пĕр пуплев пайĕнчи сăмах тепĕр пуплев пайне куçни. Урăхла ăна конверси тесе те калаççĕ) | Тĕслĕхсем тепĕр таблицăра. |

**Пĕр пуплев пайĕнчи сăмах**
**тепĕр пуплев пайне куçни**

| Мелсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Субстантиваци мелĕ: | |
| а) паллă ячĕ япала ятне куçни | йăнăш сăмах — вунă йăнăш<br>паттăр çын — ĕç паттăрĕ<br>ырăшăн ырăпа тавăр (ват. сăм.) |
| ă) глагол япала ятне куçни | пăшăх, вĕчĕх |
| б) евĕрлĕв сăмахĕ япала ятне тухни | мекек, пĕтпĕлтĕк, чакак |
| 2. Адъективаци мелĕ: | |
| глагол паллă ятне куçни | варкăш, ялкăш, тиркеш (варкăш çил, ялкăш пакун, тиркеш сăмахсем) |
| 3. Вербализаци мелĕ: | |
| а) евĕрлĕв сăмахĕ глагола куçни | кăнт — кăнтса лар, сĕнк — сĕнксе ларать |
| ă) паллă ячĕ глагола куçни | йăнăш сăмах — ача йăнăшнă<br>тутăх витре — витре тутăхнă |

**Хутлă сăмахсем**

1. Кĕскелсе пулнă хутлă сăмахсем: *анкарти*, *улмуççи*, *асатте*, *асанне*, *вырсарни* (кун), *кăçатă*, *тăвайкки*.

2. Кĕскетсе тунă хутлă сăмахсем: *ялпо* (ялти потребительсен обществи), *электрохунар* (электричество хунарĕ), *райхаçат* (район хаçачĕ), *электропăчкă* (электричество пăчки);

аббревиатурăсем — *ШĔМ* (Шалти ĕçсен министерстви), *РФ* (Раççей Федерацийĕ), *ЧППУ* (Чăваш патшалăх педагогика университечĕ).

**Пултаракан тата пулакан тĕпсем**

| Пултаракан тĕп | Аффикс | Пулакан тĕп |
|---|---|---|
| пулă | -çă | пулăçă |
| чăрăш | -лăх | чăрăшлăх |
| пĕл | -ӳ | пĕлӳ |
| хисеп | -лĕ | хисеплĕ |
| вăрăм | -ăш | вăрăмăш |
| вĕр | -кĕч | вĕркĕч |

**Сăлтавлакан, пултаракан тата пулакан тĕпсем**

| Сăлтавлакан тĕп | Пултаракан тĕп | Пулакан тĕп |
|---|---|---|
| çыр | çыру | çырулăх |
| хыр | хыркăч | хыркăчла |
| суйла | суйлав | суйлавçă |
| çĕнтер | çĕнтерӳ | çĕнтерӳçĕ |
| пурăн | пурнăç | пурнăçла |
| мухта | мухтав | мухтавлă |
| пĕл | пĕлӳ | пĕлӳлĕх |

# МОРФОЛОГИ

Морфологи — чӗлхе ӑслӑлӑхӗн пуплев пайӗсем, грамматика пӗлтерӗшӗ, грамматика категорийӗсемпе формисем ҫинчен вӗрентекен пайӗ (терминӗ грек чӗлхинчи *морфе* «форма» тата *логос* «вӗрентӳ» сӑмахсенчен пулнӑ).

## Пуплев пайӗсем

| Сыхӑнура тӑракан сӑмахсем | | Ҫыхӑнура тӑман сӑмахсем |
|---|---|---|
| Хӑй пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем | Пулӑшу пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем | |
| Япала ячӗ<br>Паллӑ ячӗ<br>Хисеп ячӗ<br>Местоимени<br>Глагол<br>Наречи<br>Еврлев сӑмахӗ | Хыҫсӑмах<br>Союз<br>Татӑк | Междомети |

## ЯПАЛА ЯЧӖ

Япалана (е япалалӑха) пӗлтерекен пуплев пайне япала ячӗ теҫҫӗ. Ыйтӑвӗсем – *кам? мӗн?* Япала ячӗсем хисеп, падеж, сӑпат тӑрӑх улшӑнаҫҫӗ.

| Пӗрремӗшле япала ячӗсем | Иккӗмӗшле япала ячӗсем |
|---|---|
| Вӗсен морфологи палли ҫук, сӑмах тымарӗсем кӑна шутланаҫҫӗ: ача, ӑман, вӑрман, хӗр, шыв, юр, ҫул, юман, ялав, пуҫ, пӑрҫа, чӑх, хӗвел, пӗлӗт | Сӑмах тымарӗ ҫумне тӗрлӗ аффикссем хутшӑннипе пулаҫҫӗ: ачалӑх, юманлӑх, вӑрлӑх, тӗреслӗх, ҫӗнӗлӗх, курайманлӑх, сӑвӑҫ(ӑ), юрӑҫӑ, тимӗрҫӗ, йывӑрӑш, тарӑнӑш |

## Япала ячĕсен пулăвĕ

| Япала ячĕсен пулăвĕн мелĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| I. Морфологи мелĕ (тĕрлĕ аффикссем хушăннипе) | куçлăх, хăвалăх, арпалăх, шĕшкĕлĕх, çăварлăх, патшалăх, пуласлăх, кĕтӳç(ĕ), юмахçă, сунарçă, вăрăмăш, анлăш |
| II. Лексикăпа синтаксис мелĕ (хутлă сăмахсем, мăшăр сăмахсем) | вырсарникун, тунтикун, çăраççи, тумтир, çуртри, тăвайкки, асатте, асанне, сăнӳкерчĕк, электрохунар, электропăчкă, çăкăр-тăвар, уй-хир |
| III. Ытти пуплев пайĕнчи сăмахсем япала ятне куçни (субстантиваци) | çамрăк, ватă, чухăн, пуян, кахал, куштан, маттур, çутă, тĕттĕм, ăшă, суккăр, ăста |

## Иккĕмĕшле япала ячĕсен пулăвĕ

### Тухăçлă аффикссем

| Аффикссем | Мĕнле пуплев пайĕ çумне хушăнаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| -лăх (-лĕх) | Япала ячĕ | хурăнлăх, шурлăх, уйăхлăх, çăварлăх, тĕслĕх, çăкалăх |
| -çă (-çĕ) | Япала ячĕ | пулăçă, атăçă, калавçă, сăнавçă, такмакçă, элекçĕ |
| | 3 | çи-етч-ĕ-ç, кай-атч-ĕ-ç, тăв-атч-ĕ-ç | çи-мес-тч-ĕ-ç, кай-мас-тч-ĕ-ç, ту-мас-тч-ĕ-ç |

| Хисеп | Сăпат | Пултараслăх аспекчĕ | Пултарайманлăх аспекчĕ |
|---|---|---|---|
| Пĕрреллĕ | 1 | çиееттĕм, каяяттăм, тăваяттăм | çиейместĕм, каяймастăм, тăваймастăм |
| | 2 | çиееттĕн, каяяттăн, тăваяттăн | çиейместĕн, каяймастăн, тăваймастăн |
| | 3 | çиеетчĕ, каяятчĕ, тăваятчĕ | çиейместчĕ, кайаймастчĕ, тăваймастчĕ |
| Нумайлă | 1 | çиееттĕмĕр, каяяттăмăр, тăваяттăмăр | çиейместĕмĕр, каяймастăмăр, тăваймастăмăр |
| | 2 | çиееттĕр, каяяттăр, тăваяттăр | çиейместĕр, каяймастăр, тăваймастăр |
| | 3 | çиеетчĕ, каяятчĕ, тăваятчĕ | çиейместчĕç, каяймастчĕç, тăваймастчĕç |

### 3. Малтан иртнĕ вăхăт

Аффикссем

Вăхăт — -сатт (-сетт,-сачч,-сечч)

Хирĕçлев асп. — -ма (-ме)

| Хисеп | Сăпат | Çирĕплетӳ аспекчĕ | Хирĕçлев аспекчĕ |
|---|---|---|---|
| Пĕрреллĕ | 1 | çи-сетт-ĕм(ччĕ), кай-сатт-ăм(ччĕ), ту-сатт-ăм(ччĕ) | çи-ме-сетт-ĕм, кай-ма-сатт-ăм, ту-ма-сатт-ăм |
| | 2 | çи-сетт-ĕн(ччĕ), кай-сатт-ăн(ччĕ), ту-сатт-ăн(ччĕ) | çи-ме-сетт-ĕн, кай-ма-сатт-ăн, ту-ма-сатт-ăн |
| | 3 | çи-сечч-ĕ, кай-сачч-ĕ, ту-сачч-ĕ | çи-ме-сечч-ĕ, кай-ма-сачч-ĕ, ту-ма-сачч-ĕ |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Нумайлă | 1 | çи-сетт-ĕм-ĕр(ччĕ), кай-сатт-ăм-ăр(ччĕ), ту-сатт-ăм-ăр(ччĕ) | çи-ме-сетт-ĕм-ĕр, кай-ма-сатт-ăм-ăр, ту-ма-сатт-ăм-ăр |
| | 2 | çи-сетт-v-ĕр(ччĕ), кай-сатт-v-ăр(ччĕ), ту-сатт-v-ăр(ччĕ) | çи-ме-сетт-v-ĕр, кай-ма-сатт-v-ăр, ту-ма-сатт-v-ăр |
| | 3 | çи-сечч-ĕ-ç, кай-сачч-ĕ-ç, ту-сачч-ĕ-ç | çи-ме-сечч-ĕ-ç, кай-ма-сачч-ĕ-ç, ту-ма-сачч-ĕ-ç |

### Ĕмĕт наклоненийĕ

Аффикссем
Наклонени – -ăтт (-ĕтт)
Хирĕçлев асп. – -м
Пултараслăх асп. – -ай (-ей)
Пултарайманлăх асп. – -ай -м (-ей-м)

| Хисеп | Сăпат | Çирĕплетӳ аспекчĕ | Хирĕçлев аспекчĕ |
|---|---|---|---|
| Пĕрреллĕ | 1 | çи-йĕтт-ĕм(ччĕ), кай-ăтт-ăм(ччĕ), тăв-ăтт-ăм(ччĕ) | çи-м-ĕтт-ĕм(ччĕ), кай-м-ăтт-ăм(ччĕ), ту-м-ăтт-ăм(ччĕ) |
| | 2 | çи-йĕтт-ĕн(ччĕ), кай-ăтт-ăн(ччĕ), тăв-ăтт-ăн(ччĕ) | çи-м-ĕтт-ĕн(ччĕ), кай-м-ăтт-ăн(ччĕ), ту-м-ăтт-ăн(ччĕ) |
| | 3 | çи-йĕчч-ĕ, кай-ĕчч-ĕ, тăв-ĕчч-ĕ | çи-м-ĕчч-ĕ, кай-м-ĕчч-ĕ, ту-м-ĕчч-ĕ |
| Нумайлă | 1 | çи-йĕтт-ĕм-ĕр(ччĕ), кай-ăтт-ăм-ăр(ччĕ), тăв-ăтт-ăм-ăр(ччĕ) | çи-м-ĕтт-ĕм-ĕр(ччĕ), кай-м-ăтт-ăм-ăр(ччĕ), ту-м-ăтт-ăм-ăр(ччĕ) |
| | 2 | çи-йĕтт-v-ĕр(ччĕ), кай-ăтт-v-ăр(ччĕ), тăв-ăтт-v-ăр(ччĕ) | çи-м-ĕтт-v-ĕр(ччĕ), кай-м-ăтт-v-ăр(ччĕ), ту-м-ăтт-v-ăр(ччĕ) |
| | 3 | çи-йĕчч-ĕ-ç, кай-ĕчч-ĕ-ç, тăв-ĕчч-ĕ-ç | çи-м-ĕчч-ĕ-ç, кай-м-ĕчч-ĕ-ç, ту-м-ĕчч-ĕ-ç |

| Хисеп | Сăпат | Пултараслăх аспекчĕ | Пултарайманлăх аспекчĕ |
|---|---|---|---|
| Пĕрреллĕ | 1 | çи-ей-ĕтт-ĕм, кая-й-ăтт-ăм, тăв-ай-ăтт-ăм | çи-ей-м-ĕтт-ĕм, кая-й-м-ăтт-ăм, тăв-ай-м-ăтт-ăм |
| | 2 | çи-ей-ĕтт-ĕн, кая-й-ăтт-ăн, тăв-ай-ăтт-ăн | çи-ей-м-ĕтт-ĕн, кая-й-м-ăтт-ăн, тăв-ай-м-ăтт-ăн |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | 3 | çи-ей-ĕчч-ĕ, кая-й-ĕчч-ĕ, тăв-ай-ĕчч-ĕ | çи-ей-м-ĕчч-ĕ, кая-й-м-ĕчч-ĕ, тăв-ай-м-ĕчч-ĕ |
| Нумайлă | 1 | çи-ей-ĕтт-ĕм-ĕр, кая-й-ăтт-ăм-ăр, тăв-ай-ăтт-ăм-ăр | çи-ей-м-ĕтт-ĕм-ĕр, кая-й-м-ăтт-ăм-ăр, тăв-ай-м-ăтт-ăм-ăр |
| | 2 | çи-ей-ĕтт-v-ĕр, кая-й-ăтт-v-ăр, тăв-ай-ăтт-v-ăр | çи-ей-м-ĕтт-v-ĕр, кая-й-м-ăтт-v-ăр, тăв-ай-м-ăтт-v-ăр |
| | 3 | çи-ей-ĕчч-ĕ-ç, кая-й-ĕчч-ĕ-ç, тăв-ай-ĕчч-ĕ-ç | çи-ей-м-ĕчч-ĕ-ç, кая-й-м-ĕчч-ĕ-ç, тăв-ай-м-ĕчч-ĕ-ç |

## Килĕшӳ наклоненийĕ

Аффикссем
Наклонени – -ин
Хирĕçлев асп. – -м

| Хисеп | Сăпат | Çирĕплетӳ аспекчĕ | Хирĕçлев аспекчĕ |
|---|---|---|---|
| Пĕррелле | 1 | çи-й-ĕп-ин, кай-ăп-ин тăв-ăп-ин | çи-м-ĕп-ин, кай-м-ăп-ин, ту-м-ăп-ин |
| | 2 | çи-й-ĕсĕ-н, кай-ăсă-н, тăв-ăсă-н | çи-м-ĕсĕ-н, кай-м-ăсă-н, ту-м-ăсă-н |
| | 3 | çи-й-v-ин, кай-v-ин, тăв-v-ин | çи-м-v-ин, кай-м-v-ин, ту-м-v-ин |
| Нумайлă | 1 | çи-й-ĕп-ĕр-ин, кай-ăп-ăр-ин, тăв-ăп-ăр-ин | çи-м-ĕп-ĕр-ин, кай-м-ăп-ăр-ин, ту-м-ăп-ăрин |
| | 2 | çи-й-ĕсĕ-v-р, кай-ăсă-v-р, тăв-ăсă-v-р | çи-м-ĕсĕ-v-ĕр, кай-м-ăсă-v-р, ту-м-ăсă-v-р |
| | 3 | çи-й-ĕ-ç-ин, кай-ĕ-ç-ин, тăв-ĕ-ç-ин | çи-м-ĕ-ç-ин, кай-м-ĕ-ç-ин, ту-м-ĕ-ç-ин |

## Хушу наклоненийĕ

| Хисеп | Сăпат | Çирĕплетӳ аспекчĕ | Хирĕçлев аспекчĕ |
|---|---|---|---|
| Пĕррелле | 1 | çи-е-м, кай-а-м (каям), тăв-а-м | çи-е-м мар, кай-а-м (каям) мар, тăв-а-м мар; ан çи-е-м, ан кай-а-м (каям), ан тă-в-ам |
| | 2 | çи-v-v, кай-v-v, ту-v-v | ан - и-v-v, ан кай-v-v, ан ту-v-v |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | 3 | çи-тĕр-v, кай-тăр-v, ту-тăр-v | ан çи-тĕр-v, ан кай-тăр-v, ан ту-тăр-v |
| Нумайлă | 1 | çи-е-v-р, кай-а-v-р, тăв-а-v-р | çи-е-v-р мар, кай-а-v-р (каяр) мар, тăв-а-v-р мар; ан çи-е-v-р, ан кай-а-v-р (каяр), ан тăв-а-v-р |
| | 2 | çи-v-v-йĕр, кай-v-v-ăр, тăв-v-v-ăр | ан çи-v-v-йĕр, ан кай-v-v-ăр, ан тăв-v-v-ăр |
| | 3 | çи-ччĕр-v, кай-ччăр-v ту-ччăр-v | ан çи-ччĕр-v, ан кай-ччăр-v, ан ту-ччăр-v |

Хушу наклоненийĕн хирĕçлев аспекчĕ аффикс хушăннипе (морфологи мелĕпе) пулмасть. Хирĕçлев пĕлтерĕшне ан, мар татăксемпе палăртаççĕ (*çием мар, ан çи, ан çитĕр*).

**Глагол аспекчĕсем**

| Аспектсем | Мĕнле аффикс е татăк хушăннипе пулать | Глаголăн мĕнле формисенче | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1. Çирĕплетӳ | Глагол тĕпĕ (аффикссăр форма) | | лар, кил |
| 2. Хирĕçлев | -мас(-мес) | Хальхи вăхăт форминче | лар-мас-тăп, кил-мес-тĕп |
| | | Темиçе иртнĕ вăхăт форминче | лар-мас-тăм, кил-мес-тĕм |
| | -ма(-ме) | Пĕрре иртнĕ вăхăт форминче | лар-ма-рăм, кил-ме-рĕм |
| | -м | Пулас вăхăтра | лар-м-ăп, кил-м-ĕп |
| | | Ĕмĕт наклоненийĕнче | лар-м-ăттăм, ил-м-ĕттĕм |
| | | Килĕшӳ наклоненийĕнче | лар-м-ăпин, ил-м-ĕпин |
| | ан, мар (татăксем) | Хушу наклоненийĕнче | ан лар, ан ил, ларам мар, илем мар |
| | мар, çук (татăксем) | Пулас причасти форминче | ларас мар, ларас çук; илес мар, илес çук |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 3. Пултараслăх | **-ай (-ей)** | | лар-ай-атăп (орф. лараятăп) ил-ей-етĕп (орф. илеетĕп) |
| 4. Пултарайманлăх | **-аймас (-еймес)** <br> **-айма (-ейме)** <br> **-айм (-ейм)** | Хальхи вăхăт форминче <br> Пĕрре иртнĕ вăхăт форминче <br> Пулас вăхăтра | лар-аймас-тăп ил-еймес-тĕп <br> лар-айма-рăм ил-ейме-рĕм <br> лар-айм-ĕ ил-ейм-ĕ |

## ГЛАГОЛĂН СĂПАТСĂР ФОРМИСЕМ
## (Инфинитив, причасти, деепричасти)

### Инфинитив

Ĕç пĕлтерĕшне наклонени, вăхăт, сăпат, хисеп пĕлтерĕшĕсемпе çыхăнтармасăрах кăтартакан глагол формине и н ф и н и т и в теççĕ. Тĕслĕхсем: калама, каламашкăн, вĕренме, вĕренмешкĕн, ĕçлеме, ĕçлемешкĕн, савăнма, савăнмашкăн.

### Инфинитивăн çителĕклĕх форми

Инфинитив форми çумне -лăх (-лĕх) аффикс хушăнать: ĕçлемелĕх, савăнмалăх, çимелĕх, вĕренмелĕх. Чăваш чĕлхи ăслăлăхĕнче ăна инфинитивăн çителĕклĕх форми теççĕ.

### Причасти

Глагол паллисене çухатман, çав вăхăтрах паллă ятне çывăх тăракан глагол формине п р и ч а с т и теççĕ.

**Анлă усă куракан (тухăçлă) причастисем**

| Причасти формисем | Мĕнле аффикс хушăнса пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Хальхи причасти | -акан (-екен) | çыракан, пĕлекен, вулакан, çăвакан, тĕвекен, çиекен |
| 2. Пулас причасти | -ас (-ес) | çырас, пĕлес, вулас, çăвас, тĕвес, çиес |
| 3. Иртнĕ причасти | -нă (-нĕ) | çырнă, пĕлнĕ, вуланă, çунă, тӳнĕ, çинĕ |
| 4. Пулмалли причасти | -малла (-мелле) | çырмалла, пĕлмелле, вуламалла, çумалла, тӳмелле, çимелле |

### Сайра усӑ куракан (тухӑҫсӑр) причастисем

| Причасти формисем | Мӗнле аффикс хушӑнса пулать | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1. Яланхи причасти | -ан(-ен) | ҫыран, пӗлен, вулан, ҫӑван, тӗвен, ҫиен |
| 2. Пулма пултаракан причасти | -и | ҫыри, пӗли, вули, ҫӑви, тӗви, ҫийи, ҫыри-ҫырми, пӗли-пӗлми, ӗҫли-ӗҫлеми |
| 3. Юрилӗх причастийӗ | -анҫи(-енҫи) | 1) ҫыранҫи, пӗленҫи, вуланҫи, ҫиенҫи |
| 4. Ҫителӗклӗх причастийӗ | -иш<br>-малӑх (-мелӗх) | 2) ҫывриш, вулиш, пӗлиш, итлиш<br>вуламалӑх, ҫимелӗх, ҫырмалӑх, асӑнмалӑх, канмалӑх |

### Причастисен палӑрту формисем

1. Хальхи причасти: а) ҫыраканни, пӗлекенни
ӑ) ҫыраканскер, вулаканскер
2. Пулас причасти: а) ҫырасси, пӗлесси
ӑ) ҫырасскер, пӗлесскер
3. Иртнӗ причасти: а) ҫырни, пӗлни
ӑ) ҫырнӑскер, пӗлнӗскер
4. Пулмалли причасти: а) ҫырмалли, пӗлмелли
ӑ) ҫырмалласкер, пӗлмеллескер

### Причастисем вӗҫленни

#### Хальхи причасти

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тӗп | ӗҫлекен | ӗҫлекенсем | ӗҫлекенни | ӗҫлекенскер |
| Кам. | ӗҫлекенӗн | ӗҫлекенсен | ӗҫлекеннин | ӗҫлекенскерӗн |
| Пару | ӗҫлекене | ӗҫлекенсене | ӗҫлекеннине | ӗҫлекенскере |
| Вырӑн | ӗҫлекенте | ӗҫлекенсенче | ӗҫлекеннинче | ӗҫлекенскерте |
| Туху | ӗҫлекентен | ӗҫлекенсенчен | ӗҫлекеннинчен | ӗҫлекенскерте |
| Пӗрл. | ӗҫлекенпе | ӗҫлекенсемпе | ӗҫлекеннипе | ӗҫлекенскерпе |
| Ҫукл. | ӗҫлекенсӗр | ӗҫлекенсемсӗр | ӗҫлекеннисӗр | ӗҫлекенскерсӗ |
| Пирке | ӗҫлекеншӗн | ӗҫлекенсемшӗн | ӗҫлекеннишӗн | ӗҫлекенскерш |

#### Пулас причасти

| | | |
|---|---|---|
| Тӗп | вӗренесси | вӗренессисем |
| Кам. | вӗренессин | вӗренессисен |
| Пару | вӗренессине | вӗренессисене |
| Вырӑн | вӗренессинче | вӗренессисенче |
| Туху | вӗренессинчен | вӗренессисенчен |
| Пӗрл. | вӗренессипе | вӗренессисемпе |

| | | |
|---|---|---|
| Çукл. | вĕренессисĕр | вĕренессисемсĕр |
| Пирке | вĕренессишĕн | вĕренессисемшĕн |

### Иртнĕ причасти

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тĕп | кайни | килни | кайнисем | кайнăскер |
| Кам. | кайнин | килнин | кайнисен | кайнăскерĕн |
| Пару | кайнине | килнине | кайнисене | кайнăскере |
| Вырăн | кайнинче | килнинче | кайнисенче | кайнăскерте |
| Туху | кайнинчен | килнинчен | кайнисенчен | кайнăскертен |
| Пĕрл. | кайнипе | килнипе | кайнисемпе | кайнăскерпе |
| Çукл. | кайнисĕр | килнисĕр | кайнисемсĕр | кайнăскерсĕр |
| Пирке | кайнишĕн | килнишĕн | кайнисемшĕн | кайнăскершĕн |

### Пулмалли причасти

| | | |
|---|---|---|
| Тĕп | вылямалли | вылямаллисем |
| Кам. | вылямаллин | вылямаллисен |
| Пару | вылямаллине | вылямаллисене |
| Вырăн | вылямаллинче | вылямаллисенче |
| Туху | вылямаллинчен | вылямаллисенчен |
| Пĕрл. | вылямаллипе | вылямаллисемпе |
| Çукл. | вылямаллисĕр | вылямаллисемсĕр |
| Пирке | вылямаллишĕн | вылямаллисемшĕн |

### Пулас причастин сăпат формисем

| | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| 1 сăпат | вулассăм, итлессĕм | вулассăмăр, итлессĕмĕр |
| 2 сăпат | вулассу, итлессӳ | вулассăр, итлессĕр |
| 3 сăпат | вуласси, итлесси | вуласси, итлесси |

### Деепричасти

Сăпат, вăхăт, хисеп, наклонени тăрăх улшăнман, ĕçĕн паллине кăтартакан глагол формине деепричасти теççĕ.

**Авалах пулса кайнă деепричастисем**

| Деепричастисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. -са (-се) аффикс хушăннипе пулаканнисем | çырса, пĕлсе, вуласа, çуса, тӳсе, çисе |
| 2. -сан (-сен), -сассăн (-сессĕн) аффикс хушăннипе пулаканнисем | çырсан, пĕлсен, вуласан, çусан, тӳсен, çисен; çырсассăн, пĕлсессĕн, вуласассăн, çусассăн, тӳсессĕн, çисессĕн |
| 3. -а (-е) аффикс хушăннипе пулаканнисем | çыра, пĕле, вула, çăва, тĕве, çие |

**Хальтерех пулса кайнӑ деепричастисем**

| Деепричастисем | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| 1. -иччен аффикс хушӑнса пулаканнисем | ҫыриччен, пӗличчен, вуличчен, ҫӑвиччен, тӗвиччен, ҫийиччен |
| 2. -массерен (-мессерен) аффикс хушӑнса пулаканнисем | ҫырмассерен, пӗлмессерен, вуламассерен, ҫумассерен, тӳмессерен, ҫимессерен |
| 3. -нӑҫем (-нӗҫем), -нӑҫемӗн (-нӗҫемӗн) аффикс хушӑнса пулаканни | ҫырнӑҫем(ӗн), пӗлнӗҫем(ӗн), вуланӑҫем(ӗн), ҫунӑҫем(ӗн), тӳнӗҫем(ӗн), ҫинӗҫем(ӗн) |
| 4. -уҫӑн (-ӳҫӗн) аффикс хушӑнса пулаканнисем | ҫыруҫӑн, пӗлӳҫӗн, вулуҫӑн, ҫӑвуҫӑн, тӗвӳҫӗн, ҫийӳҫӗн |

## Ӗҫ ячӗ

Ӗҫ ячӗ — глагол тӗпӗ ҫумне *-у* (*-ӳ*) аффикс хушӑнса пулнӑ форма: *тӑву, кулу, пулу, ҫапу, ҫӳрӳ, аку, вӑрану, ӗҫӳ, ҫийӳ*.

Асӑрхӑр.: ӗҫ ятне *-у* (*-ӳ*) аффикслӑ япала ячӗпе пӑтраштармалла мар.

## НАРЕЧИ

*Наречи* — ӗҫӗн паллине е тепӗр паллӑн паллине кӑтаратакан пуплев пайӗ.

Наречи ушкӑнӗсем

| Ушкӑнӗсем | Ыйтӑвӗсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1. Мӗнлелӗх наречийӗсем | мӗнле? епле? | аран, апла, капла, ҫапла, сасартӑк, хӑвӑрт, харӑс, хуллен, ерипен, тӑрук, чӗвӗн, самай, тӑтӑш, ҫарран |
| 2. Вӑхӑт наречийӗсем | хӑҫан? | куллен, ҫуллен, ялан, халь, пӗлтӗр, кӑҫал, паян, ӗнер, паҫӑр, кӗҫӗр, ӳлӗм, вара, анчах, виҫмине, тӑватмине, тахҫан, тин, пирвай, пӗркун |
| 3. Вырӑн наречийӗсем | ӑҫта? ӑҫтан? | унта, кунта, унтан, кунтан, лере, лерен, ӑҫта, ӑҫтан |
| 4. Пиркепе тӗллев наречийӗсем | мӗн пирки? мӗншӗн? | юри, ытахальтен, ахаль, кӑлӑх/ах/, ма, темме, ятне |
| 5. Виҫепе степень наречийӗсем | мӗн чухлӗ? мӗн таран? | кӑшт, ытла, питӗ, пайтах, йӑлт/ах/, пач/ах/, пӑртак, тӳпеми, пушшех, самай, вуҫех, пӗртте, тата/х/, шӑлами |

**Наречисен пулăвĕ**

| Пулăвĕ енчен ушкăнлани | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Пĕрремĕшле наречисем | аран, сасартăк, харăс, кăшт, ытла, питĕ, йăлт, тата, ма, ĕлĕк, ĕнер |
| 2. Аффикс хушăннă сăмахсен форми çирĕпленсе (хытса) ларнипе пулнисем | çуллен, куллен, виçмине, тăватмине, шăлами, ятне, лере, малашне, пĕртте |

**Наречисен танлаштару формисем (степенĕсем)**

| Танлаштару формисем | Мĕнле пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Танлаштаруллă форма | *-рах (-рех), -тарах (-терех)* аффикс хушăннипе | а) <u>мĕнлелĕх нар</u>. — анлăрах, капларах, ерипентерех, хăвăртрах, тăрукрах<br>ă) <u>вырăн нар</u>. — кунтарах, леререх, унтарах, таçтарах<br>б) <u>вăхăт нар</u>. — ĕлĕкрех, авалтарах, хальтерех, тинтерех, тăтăшрах, анчахрах<br>в) <u>висепе степень нар</u>. — ытларах, тӳпемирех, самайрах, пĕртакрах |
| 2. Вăйлă форма | наречие икĕ хут каланипе | аран-аран, харăс-харăс, кĕç-кĕç, тек-тек, тин-тин, хаeasy-халь, хăвăрт-хăвăрт |

**Наречисен улшăнăвĕ**

I. Тулли улшăну

(Аффикссем мĕнпур наречисем çумне хушăнаççĕ)

| Мĕнле аффикс хушăнать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Иртнĕ вăхăт сĕмне тăвакан **-ччĕ (-ччĕ)** | паянччĕ, пĕлтĕрччĕ, анчахчĕ, малтаччĕ, пайтахчĕ, юриччĕ, татахчĕ, лереччĕ |
| 2. Вăйлату сĕмне тăвакан **-ах (-ех)** | пачах, ахалех, вуçех, каплах, кулленех, паянах, кĕçех, текех, ерипенех, анчахах, тинех, юриех |

II. Тулли мар улшăну

(Аффикссем мĕнпур наречисем çумне хушăнмаççĕ)

| Мĕнле аффикс хушăнать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1.Мĕнлелăх сĕмне тăвакан **-ăн (-ĕн)** аффикс | ахаллĕн, ерипен, кĕретĕн, пăртакăн, харăссăн, пуçхĕрлĕн, вăраххăн |

| | |
|---|---|
| 2. Хăш-пĕр падеж аффиксĕсем: | |
| а) туху пад. | ӳлĕмрен, ĕлĕкрен, паянтан (пуçласа), авалтан, паçăртан, ĕнертен |
| ă) пĕрлелĕх пад. | паянпа (ыран), кăçалпа (пĕлтĕр), тăватминепе (пыратăп) |
| б) çуклăх пад. | ырансăр (килмест), виçминисĕр (каймастпăр), пĕлтĕрсĕр (пуçне) |
| в) пирке пад. | паяншăн (ĕçлеместпĕр), ӳлĕмшĕн, ыраншăн |
| 3. Танлаштаруллă степень аффиксĕ **-рах (-рех)**, **-тарах (-терех)** | |
| а) мĕнлелĕх наречийĕсем | апларах, капларах, çапларах, ерипентерех, тăрукрах, хăвăртрах, хуллентерех е хулленрех |
| ă) вырăн наречийĕсем | кунтарах, леререх, унтарах, таçтарах, маларах, кайрарах |
| б) вăхăт наречийĕсем | часрах, ĕлĕкрех, авалтарах, анчахрах, хальтерех, паçăртарах, тинтерех, пирвайтарах, тăтăшрах |
| в) виçепе степень наречийĕсем | самайтарах, ытларах, тӳпемирех, пăртакрах |
| 4. **-и, -скер, -хи** палăрту аффиксĕсем | апли апла та, апласкер, çапласкер, малти, лери, паянхи, ыранхи, паçăрхи, яланхи, ĕлĕкхи, авалхи, хальхи, пирвайхи, çулленхи, кĕçĕрхи, кулленхи, пĕркунхи, виçминехи |
| 5. -чен (-ччен) тăсăмлăх аффиксĕ | хальччен, паянччен, ыранччен, вăрахчен |

**Палăрту форминчи наречисен вĕçленĕвĕ**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Тĕп | пĕлтĕрхи | паçăрхи | хальхи |
| Кам. | пĕлтĕрхин | паçăрхин | хальхин |
| Пару | пĕлтĕрхине | паçăрхине | хальхине |
| Вырăн | пĕлтĕрхинче | паçăрхинче | хальхинче |
| Туху | пĕлтĕрхинчен | паçăрхинчен | хальхинчен |
| Пĕрл. | пĕлтĕрхипе | паçăрхипе | хальхипе |
| Çукл. | пĕлтĕрхисĕр | паçăрхисĕр | хальхисĕр |
| Пирке | пĕлтĕрхишĕн | паçăрхишĕн | хальхишĕн |

***Паян, ыран* наречисен хăш-пĕр падеж формисем**

| | | |
|---|---|---|
| Пару | паяна çитрĕ, | ырана хăвармастпăр |
| Туху | паянтан пуçласа, | ырантан пуçласа |
| Пĕрл. | паянпа ыран, | ыранпа паян |
| Çукл. | паянсăр килеймест, | ырансăр каймастпăр |
| Пирке | паяншăн ĕнерех ĕçленĕ | ыраншăн ан кулян |

**Улшăнман наречисем**

Улшăнман наречисем — пачах нимĕнле аффикс йышăнман наречисем: *патне*, *ўпне*.

**Час-часах усă куракан наречисем**

авал /вăхăт/
анчах /вăхăт/
апла /мĕнлелĕх/
апла-капла /мĕнлелĕх/
аран /мĕнлелĕх/
ахаль /пирке/
ăçта /вырăн/
вара /вăхăт/
виçмине /вăхăт/
вуçех /виçе/
епле /мĕнлелĕх/
ерипен /мĕнлелĕх/
ĕлĕк /вăхăт/
ĕнер /вăхăт/
ĕнтĕ /вăхăт/
йăлт/ах/ /виçе/
кай /вырăн/
кайран /вырăн/
капла /мĕнлелĕх/
кая /вырăн/
кăлăх /пирке/
кăçал /вăхăт/
кăшт /виçе/
кĕрет /мĕнлелĕх/
кĕç /вăхăт/
кĕç-кĕç /вăхăт/
кĕçĕр /вăхăт/
куллен /вăхăт/
кунта /вырăн /
кунтан /вырăн/
лерен /вырăн/
мал /вырăн/
малашне /вăхăт
малта /вырăн/
малтан /вырăн/
ниçта /вырăн/
ниçтан /вырăн/
пайтах /виçе/
паçăр /вăхăт/
пач/ах/ /виçе/
паян /вăхăт/
пăртак /виçе/
пĕлтĕр /вăхăт/
пĕркун /вăхăт/
пĕрмай /виçе/
пĕртте /виçе/
пирвай /вăхăт/
пит/ĕ/ /виçе/
пуçхĕрлĕ /мĕнлелĕх/
пушшех /виçе/
пушшĕ /виçе/
самай /виçе/
сасартăк /мĕнлелĕх/
çапла /мĕнлелĕх/
çарран /мĕнлелĕх/
çуллен /вăхăт/

| | |
|---|---|
| так/ах/ /пирке/ | ӳпне /мĕнлелĕх/ |
| таçта /вырăн/ | халь /вăхăт/ |
| татах /виçе/ | харам /мĕнлелĕх/ |
| таçтан /вырăн/ | харăс /мĕнлелĕх/ |
| тăватмине /вăхăт/ | хăвăрт /мĕнлелĕх/ |
| тăнч /мĕнлелĕх/ | хуллен /мĕнлелĕх/ |
| тăрук /мĕнлелĕх/ | час /вăхăт/ |
| тек /вăхăт/ | чĕвен /мĕнлелĕх/ |
| темме /пирке / | шав /м ĕнлелĕх/ |
| тĕк /мĕнлелĕх/ | шăлами /виçе/ |
| темме /пирке/ | ыран /вăхăт/ |
| тӳпеми /виçе/ | ытахальтен /пирке/ |
| ултмине /вăхăт/ | ытла /виçе/ |
| унта /вырăн/ | юри /пирке/ |
| унтан /вырăн/ | ялан /вăхăт/ |
| ӳлĕм /вăхăт/ | ятне /пирке/ |
| ӳлĕм /вăхăт/ | |

| | |
|---|---|
| 2. витрелетсе | çĕрлесе |
| малтанласа | çирĕмлесе |
| пинлесе | çăпçелетсе |
| витĕрлесе | çӳпçелетсе |
| ирлесе | харăслатса |
| кĕретлетсе | чĕреслетсе |
| кĕтӳлетсе | ятарласа |
| саккаслатса | |

2-мĕш ушкăна кĕртнĕ сăмахсене хăш-пĕр чĕлхеçсем *глаголăн деепричасти форми* тесе калаççĕ.

## ЕВĔРЛЕВ СĂМАХĔ

Çутçанталăкра пулакан сас-чĕве, шăв-шава, тĕрлĕ сăнлăхсемпе хусканусене евĕрлесе калакан пуплев пайне **евĕрлев сăмахĕ** теççĕ.

| Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Сас-чĕве евĕрлекен сăмахсем | мăр-мăр, чĕвĕл-чĕвĕл, нарт-нарт, шăкăл-шăкăл, шăнкăр-шăнкăр, шарт, пат, çат, шанк, янн, шари-и-и, ту-ту-ту, кăчăрт-кăчăрт |
| 2. Сăнлăха евĕрлекен сăмахсем | йăлтăр, мăч-мăч, яри, йăлтăр-ялтăр, йăлйăл, кăнн т. ыт. те |

## ХЫÇСĂМАХ

Вĕçленекен сăмаха предложенири ытти сăмахсемпе çыхăнтарма пулăшакан пуплев пайне **хыçсăмах** теççĕ.

**Хыçсăмахсем умĕнчи сăмахсем тĕрлĕ падежра тăни**

| Падежсем | Хыçсăмахсем |
|---|---|
| Тĕп падеж | урлă, витĕр, таран, тавра, пирки, валли, евĕр, пек, май, тăрăх, тери, хута, яхăн |
| Пару падежĕ | хирĕç, пула, кура, яхăн, çити, çитиччен |
| Туху падежĕ | пуçне, пуçласа. вара, урăх |
| Пĕрлелĕх падежĕ | пĕрле, юнашар |
| Çуклăх падежĕ | пуçне |

**Хыçсăмахсем**

валли *(тĕп, кам., пару п.):* юлташ валли, юлташа валли, пирĕн валли, шкул валли, шкула валли, ман валли, мана валли

вара *(туху п.):* иртен вара, килнĕрен вара. унтан вара, хĕллерен вара

витĕр *(тĕп, кам. п.):* вăрман витĕр, ун витĕр, хула витĕр, ял витĕр, çумăр витĕр, чӳрече витĕр

евĕр *(тĕп, кам., п.)*: кайăк евĕр, сан евĕр, вуланă евĕр, пĕр евĕр

евĕрлĕ *(тĕп, кам. п.):* машина евĕрлĕ, ман евĕрлĕ, кӳршĕ евĕрлĕ, сан евĕрлĕ, ун евĕрлĕ

каçа *(тĕп п.)*: çу каçа, хĕл каçа, кун каçа

каçипе *(тĕп п.)*: çу каçипе, хĕл каçипе, кун каçипе

кура *(пару п.):* сана кура, юлташа кура, ăна кура, учителе кура, ĕçленине кура, тăрăшнине кура

май *(тĕп, пару п.):* çула май. сăмах май, çул май, вуланă май

пек *(тĕп п. кам п.):* вăрман пек, пирĕн пек, пĕр пек, сан пек, улăп пекех, каннă пек, вулам пек, кирлĕ пек

пĕрле *(пĕрл. п.)*: юлташпа пĕрле, манпа пĕрле, пиччепе пĕрле

пирки *(тĕп п., кам. п.)*: çумăр пирки, сан пирки, ĕç пирки, шăрăх пирки, йывăр пирки, ун пирки

пула *(пару п.)*: çумăра пула, сана пула, вĕсене пула, тĕрлĕ сăлтава пула

пуçласа *(туху п.):* иртен пуçласа, ырантан пуçласа, кĕркуннерен пуçласа, санран пуçласа

пуçне *(туху п., çуклăх п.):* манран пуçне, мансăр пуçне, аттесĕр пуçне, аттерен пуçне

çинчен (*тĕп п., кам. п.)*: сан çинчен, концерт çинчен калаç, ăмăртăва хутшăнасси çинчен

çити (*пару п.*): вăрмана çити, хулана çити, Атăл хĕрне çити

çитиччен *(пару п.*): тĕп хулана çитиччен, вĕçне çитиччен, яла çитиччен, вырăна çитиччен

тавра (*тĕп., кам. п.):* костер тавра, сан тавра, клуб тавра, ман тавра, кӳлĕ тавра

таран, таранччен (*тĕп п.*): чĕркуççи таран, мăй таран, пултарнă таран, май килнĕ таран, пĕлнĕ таранччен, икĕ çухрăм таранччен

тăрăх (*тĕп. п., пару п.*): юмах тăрăх, Атăл тăрăх, доклад тăрăх, урам тăрăх, рама тăрăх

тери (*тĕп.п.*): çав тери, тем тери, мĕн тери, вăл тери

тесе (*тĕп п.*): начальник тесе, çитрĕм тесе, çумăр тесе

урăх (*туху п.*): санран урăх, манран урăх

урлă (*тĕп п., кам. п., пару п.*): уй-хир урлă, ун урлă, сан урлă, хапха урлă, хаçат урлă, çул урлă, çула урлă

хатĕр (*тĕп п.*): çав хатĕр, ку хатĕр

хирĕç (*пару п.*): ире хирĕç, уява хирĕç, каçа хирĕç, çĕнĕ çула хирĕç

хута (*тĕп п.*): çĕр хута, кун хута

юнашар (*пĕрл. п.*): аннепе юнашар, санпа юнашар, манпа юнашар, клубпа юнашар

яхăн (*тĕп п., пару п.*): çулталăк яхăн, çулталăка яхăн, эрнене яхăн, пĕр километра яхăн, эрне яхăн, сехете яхăн

Асăрхăр! Хăш-пĕр хыççăмахсем (*витĕр, вара, урлă, урăх, юнашар*) ытти пуплев пайĕсемпе омонимлă пулаççĕ. Тĕслĕхсем:

вара (*наречи*): вара кил-ха, вара вулăпăр, вара кинона кайăпăр

витĕр (*паллă ячĕ)*: витĕр курăнать, витĕр куç, витĕрех йĕпетрĕ, витĕр пĕçернĕ çăкăр

пĕрле (*наречи*): пĕрле сӳтсе яврăмăр, пĕрле утса çӳрерĕмĕр, пĕрле кайрăмăр, пĕрле çыраççĕ

урăх (*паллă ячĕ):* урăх япала, урăх çул, урăх кĕнеке, урăх майсем

урлă (*паллă ячĕ):* урлă урам, урлă ампар, урлă пăчкă, урлă сăмах

юнашар (*паллă ячĕ):* юнашар ял, юнашар кӳлĕ, юнашар пурăнатпăр

хирĕç (*паллă ячĕ):* хирĕç ен, хирĕç килекен машина, хирĕç сăмах, хирĕç план

## СОЮЗ

Предложенин пӗр йышши членӗсене, хутлӑ предложенири уйрӑм предложенисене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтаракан пулӑшу сӑмахӗсене союзсем теҫҫӗ

| Союзсен ушкӑнӗсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| Сыпӑнуллӑ союзсем: | |
| 1) сыпӑнтару с. | тата, ни-ни, та (те) |
| 2) уйӑру с. | е, е-е, пӗр-пӗр, пӗрре-тепре, те-те |
| 3) хирӗҫлев с. | анчах, ҫавах, ҫапах, атту, унсӑрӑн |
| Пӑхӑнуллӑ союзсем: | |
| 1) услови с. | пулсан, енчен, ешӗл, эхер |
| 2) тӗллев с. | тесе |
| 3) тӗллевпе услови с. | тесен |
| 4) пирке с. | мӗншӗн тесен, ма тесен, тесе |
| 5) килӗшӳллӗ с. | пулсан та, пулин те, хуть |

### Союзсем

анчах (*хирӗҫлев*): Уйӑх ҫутатать, анчах ӑшӑтмасть. Анне кӑшт кулса илчӗ, анчах ҫавӑн хыҫҫӑн унӑн сӑнӗ салхуланчӗ.

атту (*хирӗҫлев*): Ӑшӑрах тӑхӑнӑр, атту чирлетӗр.

е-е (*уйӑру*): Предложенчи вӗҫӗне е точка, е ыйту палли, е кӑшкӑру палли лартаҫҫӗ.

ешӗл (*услови*): Ешӗл хӗвел хӗрелсе анать пулсан, ҫанталӑк пӑсӑласса. (*Хал. сӑн*)

ма тесен (*пирке*): Ялти халӑх Петӗре
Хисепленӗ чӗререн.
Ма тесен кӑкри ҫинче
Тӑнӑ орден ялтӑрса (*Г. Ефимов*)

мехер (*услови*): Мехер малтисем ҫӗнтернӗ пулсан, паян ҫак сӑмах пулас ҫукчӗ ман. (*Патман*)

мӗншӗн тесен (*пирке*): Ӗнер эпӗ шкула килеймерӗм, мӗншӗн тесен чирлерӗм.

ни-ни (*сыпӑнтару*): Ни унталла, ни кунталла кайма пӗлмерӗ урама тухнӑ Миша.

пӗр-пӗр (*уйӑру*): ...пӗр кӗрет те пӗр тухать. Пӗр хӗрелсе, пӗр шуралса каять вӑл.

пӗрре-тепре (*уйӑру*): Пӗрре ҫумӑр пӗлӗчӗсем хупласа илеҫҫӗ, тепре сарӑ хӗвел пӑхса ачашлать (*Турхан*). Пӗрре пӗр енне, тепре тепӗр енне куҫаҫҫӗ вылякансем хӑма урай тӑрӑх.

пулин те (*килĕшÿ*): Çумăр чарăнчĕ пулин те, çанталăк сивĕ-ха.

пулсан (*услови*): Çил вăйлă пулсан та, утă часах типмелле. Кампа та пулин ирĕксĕрех калаçмалла пулсан, пĕтрĕ вара Уралов... (*Хв. Уяр*)

пулсан та (*килĕшÿ):* Хĕвел каç енне сулăннă пулсан та, çанталăк ăшă.

çавах (*хирĕçлев*): Лида хĕрелсе кайрĕ, çавах аллине илмерĕ (*К.Пайраш*)

çапах (*хирĕçлев*): Кĕр çитрĕ, çапах ăшă-ха.

та (те) (*сыпăнтару*): Çиччĕ виç те пĕрре кас.

тата (*сыпăнтару*): Кĕнекесем тата тетрадьсем илтĕм.

тесе (*тĕллев, пирке*): Ыран кинона каяс тесе билетсене паянах илсе хутăмăр.

тесен (*тĕллевпе услови*): Сывлăхлă пулас тесен ирхине гимнастика тумалла.

те-те (*уйăру*): Те çумăр çунă, те сывлăм ÿкнĕ.

хăть (хуть) (*килĕшÿ*): Кирек мĕнле пулсан та пыратăп, хăть çумăр шарлаттарса çутăр, хăть юр... (*В.Алентей*) Хуть ирпеле, хуть кăнтăрла пыр çав хырсем патне–кайăк хăйĕн юратнă вырăнĕнчех (*С.Элкер*).

ытах (*услови*): Ытах çанни кĕске теес пулсан, манăн пурçăн кĕпем татах та пур (*И.Тукташ*).

эхер (*услови*): Эхер çĕр тĕпне анса кайма май пулсан, çак самантрах анса кайнă пулăттăм.

эхер те мехер (*услови*): Эхер те мехер çумăрсем вăхăтра çуса тăнă пулсан, пахча çимĕçсене пĕлтĕрхи пекех пухса илнĕ пулăттăмăр.

Асăрхăр! Хăш-пĕр союзсем (*тата, анчах, хăть, (хуть)* ытти пуплев пайĕсемпе омонимлă пулаççĕ. Тĕслĕхсем:

тата (*наречи*): Эпĕ тата вуларăм. Çумăр татах çурĕ. Тата кирлĕ, парăр.

тата (*татăк):* каларĕ тата, ил тата, мĕншĕн илместĕн

анчах (*наречи*): Анчах кунтаччĕ вăл, таçта çухалчĕ. Анчахрах çитрĕмĕр.

анчах (*татăк*): Халь анчах куртăм. Паян анчах сутаççĕ.

## ТАТĂК

Предложени членĕсене е пĕтĕм предложение çĕнĕ сĕм паракан пулăшу сăмахĕсене татăксем теççĕ.

## Татăксен пулăвĕ

| Пулăвĕ тăрăх мĕнле уйрăлаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Сĕм авалах пулса кайнисем | çех, çеç, ак, ав, -и, -им, -ши, -ши, иç, чи |
| 2. Тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен пулнисем: | |
| а) глаголсенчен | пулсан, пулин, иккен |
| б) местоименисенчен | мĕн, çав, çак |
| в) наречисенчен | анчах, тата, вара, ĕнтĕ, халь |

## Татăксен ушкăнĕсем

| Татăксен ушкăнĕсем (пĕлтерĕшĕ тăрăх) | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| I. Модаллĕх татăкĕсем: | |
| 1) çирĕплетӳ т. | ара, ăхă, ия, мĕн, иккен |
| 2) ыйту т. | -и, -ши, -им, -а (-е), нивушлĕ |
| 3) услови т. | -тăк (-тĕк) |
| 4) иккĕленӳ т. | путех, тен, -тăр (-тĕр) |
| 5)хирĕçлев т. | ан, мар, çук |
| II. Çĕнĕ пĕлтерĕш сĕмне хушакан татăксем: | |
| 1) кăтарту т. | акă, авă, веç, вăт, вăн |
| 2) тĕрĕслетӳ т. | шăп, лăп, лап, шăп та шай, шăп та лăп |
| 3) уйăру т. | анчах, кăна, çеç, çех. пулин, пулсан, хуть |
| III. Эмоципе экспресси татăкĕсем: | |
| 1) вăйлату т. | та (те), чи, чăн |
| 2) çемçетӳ т. | -ха, -çке |

## Татăксем

а (*ыйту)*: А, эс пĕлетĕн иккен? Мĕн пулчĕ сана, а?

-а, (-е) (*ыйту)*: каятăн-а? килетĕн-е? Пĕлетĕн-е?, паян клубра кино пулать.

ав(ă) ( *кăтарту*): Авă ял клубĕ курăнать.

ак(ă)( *кăтарту*): Акă пирĕн шкул. Акă манăн юлташ.

ан (*хирĕçлев*): ан кай, ан шавла, ан тавлаш, ан ашкăнăр

ара (*çирĕплетӳ*): Ара, унта тем те пур.

ахăр *(иккĕленӳ*): паллаймарĕ ахăр

ахăртнех *(иккĕленӳ*): ахăртнех çирĕплетеймĕç

вăн (*кăтарту*): Вăн, колхоз пĕви курăнать. Вăн мĕн хăтланаççĕ вĕсем.

вăт (*кăтарту*): Вăт çапла пулса иртрĕ. Вăт мĕн каласа хучĕ вăл.

вĕт (*кăтарту*): Çумăр чарăнчĕ вĕт. Эсĕ вĕт ăна лайăх пĕлетĕн

-и (*ыйту)*: вулать-и, каять-и, пĕлместĕн-и, çак анчах-и, паян-и

иккен (*çирĕплетӳ*): килчĕç иккен, ыран каятпăр иккен, пĕлмен иккен

-им (*ыйту)*: кайнă-им, вуланă-им, пĕлетĕн-им, мантăн-им, ыран-им

имĕш *(иккĕленӳ*): çĕрле çумăр çунă имĕш

ия (*çирĕплетӳ*): Ия, паянах каятпăр. Ия, çур сехетрен пуçланать.

кăна (*уйăру*): Виçĕ кун кăна юлчĕ, машина кăна кирлĕ. Халĕ вунă сехет кăна. Тапрантăмăр кăна.

лăп (*тĕрĕслетӳ*): Лăп виçĕ кун иртрĕ. Лăп мана валли.

луччă (*уйăру*): Луччă ху кай. Луччă хамăр тăватпăр.

мар (*хирĕçлев*): Кирлĕ мар, çӳллĕ мар, вулас мар, каям мар. Намăс мар-и сана?

-мĕн (*çирĕплетӳ*): Ĕнер тухса кайнă-мĕн. Машинăпа аван-мĕн. Кӳршĕ ялтан-мĕн

нивушлĕ (*ыйту)*: Нивушлĕ хăваласа çитейместпĕр? Нивушлĕ çумăр пулать?

никак (няк) (*иккĕленӳ*): Сан каймалла никак( няк).

пулсан (*уйăру*): Уншăн пулсан мĕн. Саншăн пулсан тем тăвăп.

çеç (*уйăру*): кайрĕ çеç, килчĕç çеç, вунă сехетре çеç, ĕнер çеç.

çех (*уйăру*): вăхăтлăха çех, паянлăха çех, эсĕ çех килмерĕн

-çке (*çемçетӳ*): пĕлетĕн-çке, ытла пысăк-çке, эс қаларăн-çке

çук (*хирĕçлев*): килте çук, никам та çук, вăхăт çук, каяс çук, ытарма çук илемлĕ, калама çук аван, ĕçлес çук

та (те) (*вăйлату*): вăл та пĕлет, эпĕ те кайрăм, иккĕшĕ те маттур

тата (*вăйлату*): вула тата, ил тата, мĕн илместĕн, укçа татах та пур

та (те) пулин (*иккĕленӳ*): Кам та пулин каласа патăр. Мĕн те пулин тупса вулăпăр.

-тăк (-тĕк) (*услови*): Вулас-тăк вулас. Пĕлет-тĕк калатăр.

-тăр (-тĕр) (*иккĕленӳ*): кайнă-тăр, килнĕ-тĕр, пĕлет-тĕр, илчĕç-тĕр

тем (*иккĕлену*): Тем, ырра мар пуль ку. Тем (ĕн), çумăр çăвас пек.

— Эсĕ кинона пыратăн-и?

— Тем-çке.

тен (*иккĕлену*): Тен, эсĕ пĕлетĕн. Тен, вăл хăех каласа парĕ.

-ха (*çемçету*): кил-ха кунта, çук-ха, пĕчĕк-ха, ача-ха эс

-халь (*çемçету*): Пăх-халь мĕн хăтланать вăл.

хăть (хуть) (*уйăру*): Эсĕ хуть вуласа тухрăн. Эсир çырăнса илтĕр-и хăть? Пĕлетĕн-и хăть?

чăн (*вăйлату*): чăн пысăк, чăн хитре, чăн паттăр салтак

чи (*вăйлату*): чи пысăк, чи вăйлă, чи тарăн вырăн

шăп (*тĕрĕслету*): шăп мана валли, шăпах вăхăтра çитрĕмĕр, шăп вун ик сехетре

шăп та лăп (*тĕрĕслету*): шăп та лăп мана валлиех-çке, шăп та лăп манăн размер

шăп та шай (*тĕрĕслету*) : шăп та шай сан валли, шăп та шай вăхăтра çитрĕмĕр

-ши (*ыйту*): килчĕ-ши, кайрĕ-ши, пур-ши, çăвать-ши, пĕчченех-и

эппин (*çирĕплету*): пĕлнĕ эппин эсĕ, эппин, каям-ха эппин, эсĕ те мана хирĕç

Асăрхăр! Хăш-пĕр татăксем (*пулсан, çук, тем, халь, та (те)*) ытти пуплев пайĕсемпе омонимлă пулаççĕ. Тĕслĕхсем:

пулсан (*союз):* Пурте килчĕç пулсан, ĕçе тытăнар. Çумăр çумасть пулсан, эпир экскурсие каятпăр.

çук (*паллă ячĕ):* çук çын, çук çын çукшăн кулянать, çукки çукшăн кулянать

та (те) (*союз*): Звонок пулчĕ те, урок пуçланчĕ. Илемлĕ те хăтлă костюм. Ирпе кайрăм та каçхине килтĕм.

халь (*наречи*):халь ăшă, халь ун пек пулмасть, халь апла мар, халь ялта пурăнать

тем (*местоимени):* тем тумалла ĕнтĕ, тем каларĕ, тем çинчен те пуплерĕмĕр

-ха, -çке, -и, -ши, -им, -шим, -мĕн, -тем, -тăр (-тĕр), -иç татăксене дефиспа çырмалла: вула-ха, вăл та-ха, аван-çке, эсĕ те-çке, пур-и? сывах-ши? вăл та-ши? тавраннă та-мĕн, пĕлнĕ-тем, ĕлкĕрет-тĕр, кунтах-иç.

## МЕЖДОМЕТИ

Туйăма, кăмăл хусканăвне, хистеве пĕлтерекен сăмахсене междометисем теççĕ.

| Междометисен ушкăнĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1.Туйăм (эмоци) междометийĕсем | ах, эх, урра, хурах, э-ха-хай, ых, уф, ай-тур-тур, ву-у, ай-яй, эккей |
| 2. Хистев междометийĕсем | ну, эй, вĕси, хас, чух-чух, хаç, кăшша, на, ме, прис, тр-р-р, чип-чип-чип, кĕс-кĕс, тс-с, чим, атя |
| 3. Кăмăллăх междометийĕсем | салам, тавтапуç, сывпул, тавсье, аван-и, сывах-и, ырă каç |

**Междометисем**

ай (*эмоци*)
ай-ай (*эмоци*)
ай-вай (*эмоци*)
ай-тур-тур (*эмоци*)
ай-уй (*эмоци*)
алло! (*хистев*)
апай-турух (*эмоци*)
аçа çапасшĕ*(*эмоци*)
аçа çаптăр*(*эмоци*)
атьăр (*хистев*)
атя (*хистев*)
ах (*эмоци*)
ах-турух (*эмоци*)
ах-тур-тур(*эмоци*)
ăх (*эмоци*)
вай-вай (*эмоци*)
йыт туртасшĕ(*эмоци*)
кай! (*хистев*)
кай-кай-кай! (*хистев*)
марш (*хистев*)
ме(*хистев*)
мейĕр(*хистев*)
мур илесшĕ (*эмоци*)
ну (*хистев*)
ну (*хистев*)
ой (*эмоци*)
ой-ой (*эмоци*)
ох (*эмоци*)
салам* (*кăмăллăх*)
стой! (*хистев*)
сыв пул* (*кăмăллăх*)
çĕр çăтасшĕ*(*эмоци*)
çĕр çăтмасна*(*эмоци*)
тавси (*кăмăллăх*)
тавтапуç* (*кăмăллăх*)
тур çырлах*(*эмоци*)
тс-с-с (*хистев*)
уф (*эмоци*)
ух (*эмоци*)
фу (*эмоци*)
фу-у-у(*эмоци*)
ха (*эмоци*)
хă (*эмоци*)
чим (*хистев*)
чимĕр (*хистев*)
ш-ш-ш (*хистев*)
ых, ы-ых (*эмоци*)
эй (*эмоци*)
эккей (*эмоци*)
эх (*эмоци*)
э-э-эх (*эмоци*)
э-ха-хай (*эмоци*)

Çăлтăрпа (*) паллă тунă сăмахсене хăш-пĕр тĕпчевçĕсем междометисем тесе шутламаççĕ. Сасăçем вăрăммăн илтĕннине кăтартакан междометисенче икĕ-виçĕ пĕр пек саспалли çырмалла, вĕсем хушшине дефис лартмалла: тс-с-с, ы-ых, и-и-и, аха-а, у-у-у, ай-ай.

СИНТАКСИС – чӗлхе наукин пуплев епле йӗркеленни ҫинчен вӗрентекен пайӗ.

| Синтаксис единицисем | |
|---|---|
| Сӑмах майлашӑвӗ – пӗр ӑнлавпа ҫыхӑннӑ хӑй пӗлтерӗшлӗ икӗ е темиҫе сӑмах пӗрлешӗвӗ. Унӑн паллисем:<br>1) тулли пӗлтерӗшлӗ икӗ е ытларах сӑмах форминчен йӗркеленет;<br>2) пайӗсем пӑхӑнулла ҫыхӑнура тӑраҫҫӗ;<br>3) вӗҫленӳллӗ интонациллӗ пулмасть;<br>4) тулли тата тулли мар пӗлтерӗшлӗ сӑмахсен пӗрлешӗвӗ сӑмах майлашӑвӗ пулмасть: *уяв чух, анне валли.* | Предложени – вӗҫленнӗ уйрӑм шухӑша палӑртакан пӗр сӑмах е сӑмахсен пӗрлешӗвӗ. Унӑн паллисем:<br>1) вӗҫленнӗ уйрӑм шухӑша палӑртать;<br>2) вӗҫленӳллӗ интонациллӗ пулать; |

| Сӑмах майлашӑвӗн тытӑмӗ | |
|---|---|
| Ансӑр сӑмах майлашӑвӗ – хӑй (тулли) пӗлтерӗшлӗ икӗ сӑмах пӗрлешӗвӗ: *ҫӑмламас упа, шурӑ юр, вӑрмана кӗр, хаҫат валли ҫыр.* | Анлӑ сӑмах майлашӑвӗ – хӑй (тулли) пӗлтерӗшлӗ виҫӗ е ытларах сӑмах пӗрлешӗвӗ: *ҫавра ҫӑкӑр чӗлли, аслӑ урампа пыр.* |

| Анлă сăмах майлăшăвĕн тытăмĕ | | |
|---|---|---|
| №№ | Сăмах майлашăвĕн тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Тĕп пайĕ – сăмах, пăхăнулли – сăмах майлашăвĕ. | *çĕнĕ / чул çурт* |
| 2. | Тĕп пайĕ сăмах майлашăвĕ, пăхăнаканни – сăмах. | *çутă кăвак / тӳпе* |
| 3. | Тĕп пайĕ те, пăхăнулли те – сăмах майлашăвĕ. | *чăваш тĕрриллĕ / пурçăн кĕпе* |

| Сăмах майлашăвĕн пайĕсене çыхăнтаракан грамматика хатĕрĕсем | | |
|---|---|---|
| 1. | Пайĕсен вырăнĕ-йĕрки | *çутă ĕмĕт, шăнкăр-шăнкăр шыв, виçĕ çул, йывăç кĕреçе, ку кĕтес, шухăшласа калаç, çитме васка, йăл-йăл кулă* |
| 2. | Падеж аффиксĕсем [-ăн(-ĕн), -а(-е), -та(-те), -ра(-ре), -че, -ран(-рен), -тан(-тен), -чен, -па(-пе), -пала(-пеле), -палан(-пелен), -сăр(-сĕр), -шăн(-шĕн)] | *вăрманта пурăн, пӳлĕмрен тух, урамра выля, юлташпа калаç, чуна савăнтар, кăмпасăр таврăн, юлташшăн тăрăш* |
| 3. | Камăнлăх аффиксĕ [-ĕ(-и) ] | *сĕтел ури, пӳрт кĕтесĕ* |
| 4. | Ытти аффикссем [-лă(-лĕ), -чен, -лăх(-лĕх)] | *чечеклĕ улăх, кĕпелĕх пурçăн, çуллаччен пурăн* |
| 5. | Хыç сăмахсем [чух, хыççăн, çĕре, валли, çинчен, умĕн, пирки, тĕле, евĕр, пек, май] | *хаçат валли çыр, çумăр хыççăн тух, çиле май пыр, кино пирки калаç, ултта тĕлне пыр, ман çинчен кала, улăп пек паттăр, аслати евĕр сасă* |

## Хутсăр предложени

| Предложенисене каланин тĕллевне кура ушкăнлани | | | |
|---|---|---|---|
| Ыйтуллă предложенисем | Ыйтусăр предложенисем | | |
| Мĕн çинчен те пулин ыйтнине пĕлтерессĕ: *Эсир чăваш халăхĕн паянхи ĕç-хĕл, ăс-хакăл, культура шайне мĕнле хакланă пулăттăр?* | Калуллă предложенисем мĕн çинчен те пулин каласа парассĕ: *Тин кăна вăраннă хĕвел çĕр питне ăшшăн супăрларĕ.* (М.Андр.) | Хистевлĕ Предложенисем мĕн те пулин тума хистессĕ: *Илсе çÿре-ха пире, хаклă Кирилл Константинович, тепĕр хут авалхи Греци çĕр-шывĕ тăрăх, Египет фараонĕсем çинчен каласа кăтарт.* (П.Аф.) | Ĕмĕт, сунăм пĕлтерĕшлĕ предложенисем *Эс килессе пĕлсессĕн хапха умне тухăттăм, пирĕн тĕле çитсессĕн хирĕç утса пырăттăм.* (Т.Вер.) |

| Предложенин тĕп членĕсем | |
|---|---|
| Подлежащи – предложенири *кам? мĕн?* ыйтура тăракан сăмахсем. *Чи çÿллĕ тусен тăррине çил йăва çавăрнă, ĕмĕрсем хушши унта пурăнса чулсене якатса янă, шăтарса кĕнĕ.* (Ю.Скв.) | Сказуемăй – *подлежащи ĕçне е пĕр-пĕр паллине кăтартса мĕн тăвать? мĕн вăл? кам вăл? вăл мĕнле?* т. ыт. *ыйтусенче тăракан тĕп член.* *Сайра хутра çеç пĕлĕт ăшĕнчен юмахри хуп-хура хĕвел пек ту тăрри кăшт пăхса* илет *те каллех* çухалать. (Ю.Скв.) |

| Подлежащи пулăвĕ | | |
|---|---|---|
| №№ | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
| 1. | Япала ячĕ | *Хура* аист – *вăрманта вăрттăн пурăнакан* |

| | | |
|---|---|---|
| | | *чарлан пек кайăк.* (Н.Сл.) |
| 2. | Местоимени | *Çак кунран пуçласа* эпĕ *пĕр тĕпрен ÿсекен икĕ шурă хурăна яланах тимлесе сăнама тытăнтăм.* (Г.Еф.) |
| 3. | Паллă ячĕ | *Çăкăртан* асли *те çук,*<br>*Çăкăртан* хакли *те çук.* (В.Пр.) |
| 4. | Хисеп ячĕ | *Тĕркĕшнĕ май утă лавĕ çинчен* иккĕшĕ *те шуса анчĕç.* (В.Ал.) |
| 5. | Глаголăн сăпатсăр формисем (причасти, инфинитив) | Тăрăшни *нихăçан та сая каймасть çав.* (В.Ал.*);* Касма *çăмăл,* ÿстерме *йывăр.* Илесси *çăмăл,* парасси *йывăр.* (Ват.сăм.) |
| 6. | Еврлев сăмахĕ | Шăмпăрр! *илтĕнсе каять шăплăхра.* (Г.Еф.) |
| 7. | Сăмахсен пĕрлешĕвĕ | *Унтан* Каврушпа Карачăм *иккĕшĕ те йывăç тураттисем çине улăхса утлана-утлана ларчĕç. (Д. Чалт.)* |

| Сказуемăй пулăвĕ | | |
|---|---|---|
| №№ | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
| 1. | Сăпатлă формăри глагол | *Çерем çинче пĕр хура курак ушкăн шăнкăрч хушшинче уткаласа* çÿрет. *Кисловодскпа сывпуллашнă май Зиновий юлашки хут турбаза кил картине* кĕчĕ. (Ю.Скв.) |
| 2. | Сăпатсăр формăри глагол (причасти) | *Усала хирĕç ман ятпа çирĕппĕн* тăмалла. (Г.Еф.) *Пятигорск таврашĕнчи инçе курăнакан тÿрем тавралăхра саплăкăн-саплăкăн пĕлĕт мĕлкисем хытса* тăнă. (Ю.Скв.) |
| 3. | Япала ячĕ | *Тăри – вĕçĕмсĕр кăвак инçете юратакан* кайăк. (В.Ал.) *Ашшĕ вăрăм сăмсаллă шурă* карттуспа. (И.Ег.) |
| 4. | Хисеп ячĕ | *Амăртура мала тухакансем –* виççĕмĕшсем. *Акă эсĕ* çирĕмре. (Ст.Лаш.) |
| 5. | Еврлев сăмахĕ | *Кушак тяппи* тяп-тяп. *(Ч.х.с.); Çаран –* ян! та ян! (В.Энт.) |
| 6. | Местоимени | *Паян класра дежурнăй* эсĕ. *Ку кĕнеке* манăн. |
| 7. | Сăмахсен пĕрлешĕвĕ | *Манăн та пусăрăнчăк кăмăл* çĕкленме пуçларĕ. *Унпа çуммăн тăрса кăшт* çамрăкланса кайрăм-ши? (И.Егор.) *Çил* çукпа пĕрех. *(В.Ал.)* |

| Предложенин кĕçĕн членĕсем | | |
|---|---|---|
| Определени – япала ятне ăнлантаракан кĕçĕн член: *Зинови ури айĕнче вĕтĕ чулсем юхса шăкăртатрĕç.* (Ю.Скв.) | Дополнени – ĕçе е мĕнлелĕхе кăтартакан сăмаха ăнлантарса падеж ыйтăвĕсенче тăракан кĕçĕн член: *Çирĕклĕх шывне вăрăм çўç пек усăнакан туратлă çирĕксем хупласах хунă.* (Ю.Скв.) | Обстоятельство – ĕç мĕнлелĕхне, вăхăтне, вырăнне, сăлтавне, тĕллевне т.ыт.те кăтартакан кĕçĕн член: Урамра *чечек шăваракан хĕрсем çеç тулли лейкăсем* йăтса газонсем хушшипе *утаççĕ.* (Ю.Скв.) |

| Определени пулăвĕ | | |
|---|---|---|
| №№ | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
| 1 | Япала ячĕ | *Кайăк юрриллĕ вăрман* çынсен *савăнăçĕпе янăрать.* (Г.Еф.) |
| 2. | Паллă ячĕ | **Хурчка** аçи *йăвине çўллĕ йывăç тăррине вырнаçтарать. (Н.Игн.)* |
| 3. | Хисеп ячĕ | **Петюкпа** *пĕрле* пĕр *тĕпрен ўсекен* икĕ *хурăн патне кайса килтĕмĕр.* (Г.Еф.) |
| 4. | Местоимени | Хамăрăн *ачалăха аса илме каникулсенче хурăнсем патне кайса килеттĕмĕр.* (Г.Еф.) Леш *чăрăш йĕкелĕ вара ку таранччен* манăн *сĕтел çинче выртать.* (Н.Сл.) |
| 5. | Евĕрлев сăмахĕ | Пăлтăр та *пăлтăр пултăранăн*<br>*Папка та ярас вăхăчĕ.*<br>*Ан çилленĕр, ваттисем,*<br>*Выляс-кулас та вăхăчĕ.* (Хал. юр.) |
| 6. | Сăпатсăр формăри глагол (причасти) | Тытас *чĕр чуна асăрхасан хăлат çĕр çинелле урисене малалла тăсса чул пек ўкет.* (Н.Игн.) *Турат çинче* ларакан *кайăк çумран вĕççе* иртекен *хурт-кăпшанка сывлăшра тытать.* (Н.Игн.) |

| Дополнени пулăвĕ |
|---|

| №№ | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Япала ячĕ | *Урама тухсанах сивĕ* пите *çулăм пек пĕçертсе илет.* (В.Ал.) |
| 2. | Паллă ячĕ | *Улăхра курсан чечек*<br>*Ешĕл çуркунне.*<br>*Ан васка* эсĕ *татма*<br>*Чи* илемлине. |
| 3. | Хисеп ячĕ | *Илюк шкулта аван вĕреннĕ, уроксенче яланах «тăваттă» та «пиллĕк» илнĕ.* (Л.Аг.) |
| 4. | Местоимени | *Сĕве кукринче миçе пулăç ларать!* Кашнин *вăлта яма ятарласа тунă çур утрав пур.* (А.Кăл.) *Кĕре хирĕç уйрăмах хĕрӳ вăхăт пуçланать* унщăн. (Ю.Сил.) |
| 5. | Глаголăн сăпатсăр форми (причасти) | *Уçланкă варринче* çĕршĕннипе *чалăшнă вĕллесем вырнаçнă.* (В.Ен.) |

| Обстоятельство пулăвĕ | | |
|---|---|---|
| №№ | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
| 1. | Япала ячĕ | Тӳпере *тăрисем мĕн тери янăравлăн, мĕн тери хĕпĕртесе юрă шăрантараççĕ.* (В.Ал.) |
| 2. | Паллă ячĕ | *Униççе карчăк пӳрчĕн чӳрече кантăкĕ* шап-шурă *шăннă.* (В.Ал.) |
| 3. | Хисеп ячĕ | Çиччĕ *виç те* пĕрре *кас.* (Ват. сăм.) |
| 4. | Местоимени | Темшĕн *шăпах çак лĕпĕш канăç памасть мана.* (Н.Сл.) Анчах тăххăрта *кил вара.* (В.Игн.) |
| 5. | Наречи | Кăçал *кĕрт тарăн çав.* (Т.Еф.) |
| 6. | Евĕрлев сăмахĕ | *Бухгалтер сĕтел умне* хуллен *утса пычĕ те* ярт *тăсăлса тăчĕ.* (В.Ал.) *Ĕне кăна витинче* кăмтăрт-кăмтăрт *тутарать!* (Г.Еф.) |
| 7. | Глаголăн сăпатсăр форми (деепричасти, инфинитив) | *Хĕллехи йăвинчен хĕвел çинче хĕртĕнме мăнтăркка пурăш* йăраланса *тухать.* (Н.Сл.) *Лăпкă çанталăкра тӳперен çаврăнса анакан юр пĕрчисене* сăнама *ытла та лайăх.* (В.Ал.) *Савăнăç вăл кулленхи ĕç-пуçсем* хушшипе систермесĕр *килет.* (Г.Еф.) |

Обстоятельствăсен ушкăнĕсем

| №/№ | Пĕлтерĕш ушкăнĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Мĕнлелĕх обстоятельстви | *Малти вар шырланĕнче карласа юхакан çурхи шыв сасси чŷречерен* шăппăн-шăппăн *илтĕнет.* (К.Чул.) |
| 2. | Вырăн обстоятельстви | *Хаяр, арăш-пирĕш çанталăкра эпĕ* наряда *уйрăмах кăмăллăн каяттăм.* (В.Ал.) |
| 3. | Вăхăт обстоятельстви | *Юпа уйăхĕнчи юр* çĕрле *е* ирхине *шŷсе çемçелнĕ çĕр питне тăрăшсах шурă пĕркенчĕкпе витет.* (М.Кип.) |
| 4. | Пирке обстоятельстви | *Çапла вăрман тăрăх аташса çŷресен-çŷресен* канма *лартăм.* (В.Ал.) |
| 5. | Виçе обстоятельстви | *Чŷк уйăхĕнчи юр вара* часах *ирĕлсе пĕтмест, хăш чух икĕ-виçĕ эрне хушши ура айĕнче кăчăртатса выртать.* (М.Кип.) |

| Хутсăр предложенисене<br>тĕп членĕсем пуррипе çуккине кура ушкăнлани | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Икĕ тĕп membersлă предложенисенче тĕп членĕсем иккĕшĕ те пулаççĕ. | *Шăнкăр-шăнкăр çăлкуççен шĕлтĕртетĕвне тăнласа яштака* хурăнсем *ухăна-ухăна ачаш шевлепе* вылянă. (Н.Иль.) |
| 2. | Пĕр тĕп членлă предложенисенче тĕп членсенчен пĕри çеç пулать. | *Паян тумалли ĕçе ырана ан* хăвар. (В.сăм.) |

| Пĕр тĕп членлă предложенисем | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Подлежащисĕр предложенисем | Калаçасчĕ *ман çынпа пĕрре тăват-пилĕк çул каяллахи пек – çак ăшăмри хăватсăр, чунтан.* (Ю.Скв.) |

| | | |
|---|---|---|
| 2. | Сказуемăйсăр предложенисем | *Хурама çулçи пек çулçăллă, пысăк кĕрен сапакаллă* каштансем...(Ю.Скв.) |

| Подлежащисĕр предложенисем | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Паллă мар сăпатлă предложенисем | *Мухтавлă хĕре кĕмĕл медаль* памалла тунă. (А.Арт.) |
| | | *Ватă çерçие хывăхпа* улталаймăн. *Тытман упа тирне* ан сӳ. (В.сăм.) |
| 2. | Сăпатсăр предложенисем | *Тем пекех* таврăнас килнĕ *унăн тăван çĕр-шывне.* (А.Арт.) *Ăна ĕçрен тухма* йывăр пулать... (П.Ал.) |
| | | *Уйра* шăп. *(Х.Уяр); Пӳртре* таса, çутă. *(Илп.)* |
| | | Тĕттĕмленсе ларчĕ *ĕнтĕ (А.Арт.); Каçпа Ухтивана* пĕçертсе пăрахрĕ. *(Х.Уяр.)* |

| Сказуемăйсăр предложенисем | | | |
|---|---|---|---|
| №№ | Предложени тĕсĕсем | Тĕп членĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Ят предложенисем (япала ячĕпе ун ушкăнне кĕрекен сăмахсем çеç пулаççĕ). | Япала ячĕ | *Ту çинче çеç пулакан янкăртан та янкăр, кăн-кăвак* тӳпе. *Кисловодскра çеç пулакан пĕр сулăм çилсĕр* сывлăш. (Ю.Скв.) |
| 2. | Предложенире япала ячĕн ушкăнне кĕмен сăмахсем те пулаççĕ (тулли мар предложени). | Япала ячĕ | *Тавра курăм хĕрринче – капмар пĕлĕт пек купаланса тăракан ĕмĕр ирĕлми пăрлă* тусем. (Ю.Скв.) |

Тулли мар предложени тесе пĕр-пĕр сиктерсе хăварнă члена çăмăллăнах кĕртсе лартма май пур предложение калаççĕ.

| Тулли мар предложенисем | | |
|---|---|---|
| №№ | Тулли мар | Тĕслĕхсем |

| | | |
|---|---|---|
| | предложенисен тĕсĕсем | |
| 1. | *Тулли мар* предложенири сиктерсе хăварнă сăмахсем текстран е калаçуран паллă. | –*Ку сирĕн мĕнле ял пулчĕ?*<br>–**Куракьел.**<br>–**Унта** *çитме миçе çухрăм пулать?*<br>–Виççĕ. (Х.Уяр.) |
| 2. | Хутлă предложенин пĕр пайĕ *тулли мар* пулма пултарать. | *Куç хитрине юратать,* тута – тутлине. (В.çăм.) |
| 3. | Юнашар тăракан уйрăм хутсăр предложенисем шухăшĕпе тачă çыхăннă чух *тулли мар* пулма пултараççĕ. | *Акă пристань. Каччă чунне лăплантарас тесе пристане тухмарĕ.* Каютăрах куçне хупса ларчĕ. *(М. Юх.)* |
| 4. | Хăш-пĕр *тулли мар* предложенисенче ĕçне тăваканни глагол сăпатĕнчен паллă пулнипе подлежащине каламасăр хăвараççĕ. | *Эх,* пыраттăмăр *вара çапса çăвакан çумăра хирĕç.* (В.Ал.); *Касса* илетĕн *те пĕр-пĕр якарах турата шаккаса шанкине ÿкеретĕн, пулас шăхлич валли хуппинчен чĕлĕх* тăватăн. (А.Ем.) |

## Кăткăсланнă предложенисем

Предложенисем пĕр йышши членсемпе, уйрăм тăран членсемпе, кÿртĕм конструкцисемпе, чĕнÿсемпе кăткăсланма пултараççĕ.

| Пĕр йышши членсем – ытларах чухне пĕр ыйтурах тăракан, предложенин пĕр членĕпе çыхăнакан сăмахсем | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложени членĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Подлежащи | *Яштак* чиесем, çĕмĕрт йывăççисем, *çатрака туратлă* улмуçисем *шап-шурă тумпа витĕннĕ.* (Л.Агак.) |
| 2. | Сказуемăй | Шавлать, кашлать *сĕм вăрман.*(К.Ив.) *Юратнă кĕтесĕм çамрăклăх* пиллерĕ, *ĕçе* хăнăхтарчĕ, *ĕçре* пиçĕхтерчĕ, *пурнăç сукмакĕ çине* кăларчĕ. («Ком. ял.») |
| 3. | Определени | Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх *йăранĕ ирĕкпе çĕнелнĕ* |

| | | |
|---|---|---|
| | | *пурăнăçран тарĕ.* (Çеçпĕл.) |
| 4. | Дополнени | Валем, купа, капансем *лартса тухрĕç сарлака улăх варрине. Пурăш ўсен-тăрансен* тымарне те, хурт-кăпшанкăна та, ăмана та, шăшие те, шапана та *юратса çиет.* (Х.Уяр.) |
| 5. | Обстоятельство | *Хура аист сулхăнра кăна хура курăнать, хĕвел çинче* симĕссĕн, кăваккăн, йăм хĕрлĕн *йăлтăртататъ.* (Н.Сл.) |

| Пĕр йышши членсен çыхăнăвĕ | |
|---|---|
| Союзсăр çыхăну | Союзлă çыхăну |
| Мĕн ĕлĕкрен пирĕн мăн асаттесем ўсен-тăрансен уссине пĕлсе тăнă, вĕсемпе тĕрлĕ чир-чĕртен сипленме пĕлнĕ. (О.Еф.) | *Вăл* е *сăлтавсăрах ахăлтатса* кулса ярать, е *тата кунĕ-кунĕпех пĕр чĕнмесĕр тарăн* шухăша кайса ларать. (П.Аф.) |

| Пĕр йышши членсем союзсемпе çыхăнни | | |
|---|---|---|
| Сыпăнуллă союзсем | | Тĕслĕхсем |
| Сыпăнта-Ракан | Та (те) | *Шкул ачисем ирхи апат* çирĕç *те кĕнекесем илсе садри йăрăс тирексем айне тухса* ларчĕç. (Г.Еф.) |
| | Тата | *Е.В. Владимиров – паллă* критик, тĕпчевçĕ, сăмах ăслăлăхĕсен тухтăрĕ тата педагог. (А.Меф.) |
| | Ни | *Çак* ни вырăс, ни чăваш *хĕр ачин калаçăвĕ юлташсем хушшинче чыса та, мăнкăмăллăха та ўстеретчĕ.* (П.Аф.) |
| Хирĕç-Лекен | Анчах | *Вăл хăлхине тăратса* итлет, анчах *калаçăва* хутшăнмасть. (Х.Уяр.) |
| | Çапах | *Юман темĕн те* тўсет, çапах *çўлеллех* ўсет. (А.Арт.) |

| | | |
|---|---|---|
| | Унсăрăн | *Оленька яланах кама та пулин юрататъ, унсăрăн пурăнма та пултараймасть.* (А.Чех.) |
| | Ахальлĕн | *Юрать-ха тухрăм, ахальлĕн сана та кураймастăм.* (А.Лаз.) |
| Уйăр-Акан | Е-е | *Вăл кăнтăрла* çывăрать е *Атăл хĕрне* анать. *Çынсене курсан вăл* е пăрăнса утать, е *çĕрелле пăхса иртсе* каять. (Х.Уяр.) |
| | Пĕрре-тепре | *Хĕр Зинови умĕнче ĕçне пăрахсах пуç тутрине* пĕрре хытарса çыхнă пек, тепре *пушатнă пек кçаркаларĕ.* (Ю.Скв.) |
| | Пĕр-пĕр | *Сÿс хÿреллĕ хурçă йытă* пĕр кĕрет те пĕр тухать. (К.Ив.) |
| | Те-те | Те кулать, те макăрать *вăл – уйăрса илеймерĕм. (В.Петр.)* |
| Пăхăну-ллă союзсем | Пулин те, пулсан та | Уйăх çутатать пулин те, ăшăтмасть. (Ватт. сăм.) Пилеш çиме йÿçĕ пулсан та, усăллă. |

| Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсем хушшине чарăну палли лартасси | | | |
|---|---|---|---|
| Запятой | Тире | Икĕ точка | Точкăпа запятой |
| Пĕр йышши членсем пĕр евĕрлĕрех япаласене, пулăмсене, ĕç-хĕле сăнлаççĕ пулсан вĕсене запятой лартса уйăраççĕ:<br>------------------------<br>Упасем, пурăшсем, чĕрĕпсем *çуркуннеччен пĕр вăранмасăр шăтăкра* | Пĕр йышши членсем пĕр-пĕрне хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулсан вĕсем хушшине тире лартаççĕ:<br>------------------------<br>Мулкачсем, пăшисем, кашкăрсем *сÿлевĕççем юр вителĕк çинех* выртаççĕ – | Пĕр йышши членсенчен пĕри пĕлтерĕшĕпе ыттисенчен анлăрах пулсан ун хыççăн икĕ точка лартаççĕ:<br>------------------------<br>*Çав хушăра хуçа часрах мĕн тумаллисене* тумаваскать: *ăна-кăна* илсе | Анлă пĕр йышши членсем хушшине точкăпа запятой лартаççĕ:<br>------------------------<br>*Акă вăл, тем асăрханă пек, аяккалла* чăмрĕ *те самантрах çÿлелле çĕкленсе* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| *сывăраççĕ.* (Н.Сл.) | чирлемеççĕ. (Г.Орл.) | кĕрет, *апат лартса* парать. (Х.Уяр.) | *инçех мар ӳсекен хыр турачĕсен хушшинче* çухалчĕ; *унтан тепĕр йĕкел йăтса тухса каллех хăйĕн кивĕ вырăнне, тăрри хуралнă хыр çине,* таврăнчĕ. (Г.Орл.) |

**Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем** – пĕлтерĕшĕ енчен пĕр йышши членсене пĕтĕмлетекен сăмахсем. Вĕсем пĕр йышши членсемпе пĕр ыйтура тăраççĕ, предложенин пĕр членĕпе çыхăнаççĕ.

| Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсене чарăну паллипе уйăрасси | | |
|---|---|---|
| №№ | Пĕтĕмлетӳ сăмахĕн вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Пĕр йышши членсем умĕнче чухне пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ. | *Мĕнпур тавралăх вуншар тĕслĕ катрамран тăрать тейĕн: ешĕл калча, йăмăх хура çул, сарăхĕрлĕ çулçăсем, тĕк пек шурă çăмăл пĕлĕтсем...*(П.Аф.) |
| 2. | Пĕр йышши членсем хыçĕнче чухне пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем умĕн тире лартаççĕ. | *Вĕсем хушшинче тăхран, сар пăрчкан, кĕпшĕл, сăнчас, шăлинкурăс, пуса та майра кайăкĕсем* – йăлтах *пур пулас.* (Ю.Скв.) |
| 3. | Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем пĕр йышши членсем умĕн тăнă чух предложени вĕçленмест пулсан умĕн икĕ точка, хыççăн тире лартаççĕ. | *Хĕлле пур* йывăç та: *юман та, çăка та, хурăн та* – пурте *шапшурă юр айĕнче.* (Н.Сл.) |

| Предложенири уйрăмлатакан сăмахсем – интонаципе уйрăмлатнă сăмахсем | | |
|---|---|---|
| №№ | Уйрăмлатнин сăлтавĕсем | Тĕслĕхсем |

| | | |
|---|---|---|
| 1. | Интонаципе уйрӑмлатни предложенири сӑмахсен ҫыхӑнӑвне тӗрӗс палӑртма май парать. | *Пуҫсем тӑрринче, тӗнче пӗтнӗ пек, ҫил кӗрлет-ахӑрать, алӑ тӑратсан алла касса каяссӑн туйӑнать.* (Х.Уяр.) |
| 2. | Интонаципе уйрӑмлатакан сӑмахсем хӑйсем умӗнчи сӑмахсен пӗлтерӗшне уҫса параҫҫӗ, тӗрӗслетсе кӑтартаҫҫӗ. | *Вӑл утланнӑ лашана тӳнтер кӗрӗк тӑхӑнса хӑратнӑ ача, Ваҫук тусӗ, ун патне халь ура ярса та пусман.* (Х.Уяр.) |
| 3. | Интонаципе уйрӑмлатни ҫеҫ пӗр сӑмаха тепринпе ҫыхӑнма май парать. | *Пӗр ҫын кӑна – кукамай – хӑйӗн пурнӑҫ тӗрӗслӗхӗпе, йывӑр шӑпипе ман кӑмӑл-туйӑма, ӑс-пуҫа нумай пуянлатрӗ.* (В.Петр.) |

| Уйрӑмлатнӑ сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ. | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложенин хӑш членӗпе ҫыхӑнать | Тӗслӗхсем |
| 1. | Подлежащипе (е унӑн ушкӑнӗпе) | *Микка, пӗрмаях чир-чӗрпе асапланаканскер, пит имшеркке ӳсет.* (Ст.Асл.) |
| 2. | Сказуемӑйпа (е унӑн ушкӑнӗпе) | *Лида кӗнекесем, тетрадьсем хурса тултарнӑ сӗтел умӗнче тӑрать –* хура вӑрӑм платйӗпе, кӑвак тутӑрпа. (А.Арт.) |
| 3. | Дополненипе (е унӑн ушкӑнӗпе) | *Ҫав ҫӑкӑр-тӑварпа сӗтел хушши* пире, ватӑсене, *яланах хапӑл пултӑр.* (Г.Еф.) |
| 4. | Обстоятельствӑпа (е унӑн ушкӑнӗпе) | Ту сӗвеклӗхӗнче, йӑмрана хурӑнсен сулхӑнӗнче, *чӗркӗмӗл пек шӑнкӑртатса юхать шурӑ чул айӗнчен тапса тӑракан ҫӑл шывӗ.* (Г.Еф.) |

| Уйрӑмлатнӑ членсене чарӑну паллисемпе уйӑрасси | | |
|---|---|---|
| №№ | Чарӑну палли лартасси | Тӗслӗхсем |
| 1. | Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой е тире лартса уйӑраҫҫӗ. | *Чикӗ леш енчи мул хуҫисен тарҫисем* – наркӑмӑш чӗлхеллӗ сутӑнчӑк ҫыравҫӑсем – *пиртен куҫӑнах мӑшкӑллатчӗҫ.* (А.Эсх.) |

| | | |
|---|---|---|
| | | *Ухтиван килтен тухса кайнă çулхи кĕркунне, пĕр тĕттĕм каçхине, Яриле старик уй варрипе ялалла юрттарса пынă* (Х.Уяр.) |
| 2. | Хăш чухне шухăш уçăмлăхĕшĕн предложенин пĕр-пĕр сыпăкне умĕнхи сăмахсенчен уйрăмлатса каланă чух сав сыпăк умне тире лартаççĕ, хыççăн нимĕн те лартмаççĕ. | *Чирлĕ Хветуç хăйĕн ывăлĕсем* - хăйĕн телейĕ *çине пăхса пĕр-икĕ хутчен вăйсăррăн кулса илчĕ.* (Л.Агак.) |
| 3. | Тепĕр чух предложенин сыпăксене интонаципе уйрăмлатса та, уйрăмлатмасăр та калама юрать. Унашкал сыпăксене чарăну паллипе уйăрсан та, уйăрмасан та юрать. | *Вăрман урлă каçнă чух Çемене хăйсен кӳршĕ хĕрарăмĕ,* Варук инке, *пушă лавпа хуса çитрĕ.* (А.Арт.) |

## Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем

Калаканĕ хăйĕн шухăшне мĕнле хакланине (çирĕплетнине, иккĕленнине, кăмăлланине т.ыт.те.) палăртакан сăмахсене кӳртĕм сăмахсем теççĕ.

| Кӳртĕм сăмахсен пĕлтерĕшĕ | | |
|---|---|---|
| №№ | Пĕлтерĕшĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Калаканни хăй шухăшĕ çине епле пăхни (çирĕплетни, иккĕленни, кăмăллани т.ыт. те) | Тен, *вăл аслисенчен те ытла ĕçлет пуль.* (Х.Уяр.) Шел, *сурăхĕ лайăхчĕ: улаччĕ, йăвашчĕ, кĕтӳрен тавраннă-таврăнман Палюк аллине пырса шăршлатчĕ.* (Х.Уяр.) |
| 2. | Шухăша пĕтĕмлетнине палăртни | Тӳррипе каласан, *аслă тухтăрне те мĕн те пулин памаллаччĕ ĕнтĕ.* (Х.Уяр.) |
| 3. | Шухăш йĕркине палăртни | *Валентин паян калама çук телейлĕ, мĕншĕн тесен,* пĕрремĕшĕнчен, *вăл халĕ çак ирĕклĕ çĕр çинче,* иккĕмĕшĕнчен, *хăйĕн юратнă ĕçне тума* |

| | | |
|---|---|---|
| | | *пултарать.* (А.Арт.) |
| 4. | Сăмах е шухăш камран тухнине палăртни | Эп астăвасса, *Шупашкар урамĕнче пĕр харăс икĕ-виçĕ çынран ытла çÿреместчĕ...* (Х.Уяр.) |

| Кÿртĕм сăмахсемпе предложенисене чарăну паллипе уйăрасси | | |
|---|---|---|
| №№ | Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
| 1. | Сказуемăй умĕн тăнă чух кÿртĕм сăмахсене запятойпа уйăраççĕ. | Чăн та, *иксĕмĕр те çамрăк, пурнăç тĕпелне иртсе курман, ун кĕрекине ларса курман-ха.* (А.Арт.) |
| 2. | Сказуемăй хыççăн унпа юнашар тăнă чух кÿртĕм сăмахсене запятойпа уйăрмаççĕ. | *Самоходка çурт умнех килсе чарăннă* иккен. (А.Арт.) |
| 3. | Кÿртĕм предложенисене икĕ енчен те запятой е тире лартса уйăраççĕ е скобка ăшне хупаççĕ. | *Ваçука хăнана чĕнмесен те* (хăнасем тăрăх çÿреме çамрăк-ха вăл) *пĕри те тепри кĕрсе тухма йыхăраççĕ.* (Х.Уяр.) |
| 4. | Кÿртĕм сăмахсем предложенин пĕр-пĕр кĕçĕн членĕпе çыхăннă чух вĕсене çав кĕçĕн членĕпе пĕрле предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ. | *Укол тунă хыççăн пулас, аманнă çын вăраммăн сывласа ячĕ.* (Л.Аг.) |
| 5. | Кÿртĕм предложение уйрăм предложени пек йĕркеленĕ чух ăна скобкăна хупаççĕ, чарăну паллине скобка ăшне лартаççĕ. | *Такам ăна пуçĕнчен çатлаттарнă.* (Тен, пан улмийĕ улмуççи тăрринчен çапла ÿкнĕ?) (Х.Уяр.) |
| 6. | Кÿртĕм сăмахсем предложени — шухăшĕпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннине кăтартма сказуемăй хыççăн унпа юнашар тăнă чух та вĕсене запятойпа уйăраççĕ. | *Урхи мучи, пар-ха хăвăнне, сан хăватлă пулаканччĕ, пĕрер туртса ярар-ха,* эппин. *(А.Арт.)* |

| Чĕнӳ – кама е мĕне чĕнсе каланине пĕлтерекен сăмах. Вăл нимĕнле члена та пăхăнмасть, нимĕнле ыйтура та тăмасть. Тытăмĕ енчен ансăр тата анлă пулать. | |
|---|---|
| Ансăр | Анлă |
| Эсĕ, мăнукăм, çынсем патне кай та вĕсене телей мĕнле тупмаллине, сивве яланлăхах мĕнле çĕнмеллине каласа кăтарт. (Юхма.) | Пĕчĕк ывăлăм Ванюш, *куншăнах пуçна ан ус.* (Л.Сар.); *Асамат кĕперĕ, савăнтар пире.* (И.Чер.) |

Чĕнӳ пулăвĕ.

| №№ | Мĕнле сăмахсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Çынна пĕлтерекен сăмахсенчен | *Ан кулян,* анне, *ан пăшăрхан,* *терĕ Олег хуллен. – Хам тĕрĕс мар тунине йăлтах ăнлантăм. (А.Лаз.); Çавах та мĕн пĕлес килет сирĕн,* тăванăм, *мĕншĕн канăçа çухатнă?* (Г.Еф.) |
| 2. | Тĕрлĕ япаласемпе пулăмсене палăртакан сăмахсенчен | Ырлăх! *Мĕн тери тăнăç та тарават* тӳпе! *Пăхса тăранайми инçет*! Шăплăх та лăпкăлăх! Виçесĕрлĕх! (Х.Алев.) Çумăр! *çу эс хытăрах, çитĕнесчĕ хăвăртрах.* (И.Чер.) |
| 3. | Çын ячĕсенчен | *Ватăлтăм эпĕ,* Андрей Васильевич, *сасартăках ватăлса лартăм. Вунçиччĕре те мар пек туятăп хама кас-кас.* (Х.Аш.) *Çул çинче хăрушă мар-и,* Ухатер пичи? (Х.Уяр.) |

| Чĕнĕвĕн предложенири вырăнĕ | | |
|---|---|---|
| Предложени пуçламăшĕнче | Предложени варринче | Предложени вĕçĕнче |
| Кĕçени, *мĕн калаçатăн эсĕ, лăплан-ха,* | *Пăрăн,* чиперкке, *алăк çумĕнчен, пурпĕрех эсĕ* | *Асту, йывăççем нумайрах лартма тăрăш,* |

| | | |
|---|---|---|
| *тархасшăн. (Х.Аг.);* Сĕм вăрман, *сан ырлăхна ытарма çук! Тав сана. (Г.Еф.)* | *тăвас тенĕ пек пулмасть... (А.Арт.); Тух,* савни, *чечек парнелĕп, чечекпе пĕрле – чуна. (А.Лук.)* | тусăм. *(В.Ал.); Мухтав сана,* тертлĕ Хура çăкăр! *Мухтав сана,* тырă ăсти! *(А.Вороб.)* |

Хутлă предложени – икĕ е ытларах предикативлă пайран тăракан пĕрлĕх. Чăваш чĕлхинче хутлă предложенисене çыхăну хатĕрне пăхса ушкăнлаççĕ: союзсăр хутлă, сыпăнуллă хутлă, пăхăнуллă хутлă предложенисем.

| Хутлă предложени тĕсĕсем | | |
|---|---|---|
| №/№ | Предложени тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Союзсăр хутлă предложени – интонаципе çыхăнакан предикативлă пайсен пĕрлĕхĕ. | *Пĕрисем купăспа ушкăнăн-ушкăнăн иртсе каяççĕ, теприсем пĕр вырăна пухăнса тăнă та такмакласа ташша илтереççĕ.* (Г.Еф.) |
| 2. | Сыпăнуллă хутлă предложени – сыпăнуллă союзсемпе çыхăнакан предикативлă пайсен пĕрлĕхĕ. | *Сана эпĕ хамăн мĕнпур шалу укçине парса тăрăп, анчах эсĕ мана каялла илсе ан кай.* (С.Элк.); *Вăл уйрăм ларакан ăвăс айне тарса кĕме хăтланчĕ* те, *сывлăш хумĕ пачах урăх еннелле сулăнтарса ячĕ.* (Д.Горд.) |
| 3. | Пăхăнăллă хутлă предложени – пăхăнуллă союзсемпе, союзла сăмахсемпе, хыççăмахсемпе, аффикссемпе, вырăнĕ-йĕркипе çыхăнакан предикативлă пайсен пĕрлĕхĕ. | *Çăварне тутăр вĕççĕпе хупланă* пулин *те ӳсĕрнĕ сасă чылаях аякра илтĕннĕ.* (Л.Аг.) *Йăван таврăннă* чух *унăн пӳртĕнче кӳршĕ çамрăкĕ Павăл тата Муççа ывăлĕ Ванеç «Хыпар» хаçата вуласа лараççĕ.* (С.Элк.) |

Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем пĕр-пĕрне пăхăнмаççĕ, пĕри теприне ăнлантармасть, вĕсем сыпăнуллă çыхăнура тăраççĕ.

| Сыпăнуллă хутлă предложенисен тĕсĕсем | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложенисен тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Сыпăнтаракан союзлă (та(те), тата) сыпăнуллă хутлă предложени | *Эпир кашниех ăна тав тăватпăр* та, *пурте пĕрле пӳрте кĕпĕрленсе кĕретпĕр.* (А.Талв.) |
| 2. | Хирĕçлекен союзлă (анчах, çапах, унсăрăн, атту, ахальлĕн) сыпăнуллă хутлă предложени | *Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ,* анчах *Василий Квасов аллине нимĕнле пысăк ĕç те лекмен-ха.* (П.Аф.) |
| 3. | Уйăракан союзлă (пĕрре-тепре, те-те, е, е-е) сыпăнуллă хутлă предложени | Те *такам кăларса илнĕ ăна,* те *паçăр урампа хытă чупнă чух кăларса ӳкерсе хăварнă.* (Л.Аг.) |

| Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем | |
|---|---|
| Союзсем | Тĕслĕхсем |
| Та (те) | *Тепĕр чух васкавлă ĕçсем пулатчĕç* те, *вуншар-вуникшер сехет те тăраттăм машина патĕнче.* (Л.Аг.) |
| Тата | *Çăлтăрсем йăлтăртатаççĕ,* тата *çĕн уйăх çурла пек курăнса тăрать. (Л.Аг.)* |

| Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложением | |
|---|---|
| Союзсем | Тĕслĕхсем |
| Анчах | *Вăл чăвашла аван калаçать,* анчах *унăн çемçен тухакан сăмахĕсенче вырăс чĕлхи акценчĕ Палăрать.* (Ç.Элк.) |
| Çапах | *Витнĕ йĕтем çинче пaçăрах тĕттĕмленчĕ,* çапах *çынсем хунар çутипе те пулин авăн çапаççĕ.* (А.Арт.) |
| Унсăрăн | *Пур çĕрре те хамăн çитмелле,* унсăрăн *йĕрке пулмасть.* (А.Арт.) |

| Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем | |
|---|---|
| Союзсем | Тĕслĕхсем |
| Те-те | *Те сывлăм вăйлă ӳкнĕ, те çумăр çуса кайнă.* (Л.Аг.) |
| Е-е | *Е шартлама сивĕ тăрать, е тапхăр-тапхăр тăман кутăн-пуçăн çаврăнать.* (Г.Орл.) |
| Пĕрре-тепре | *Левенĕн шурă вăрăм пӳрнисем клавишсем тăрăх* пĕрре *питĕ хăвăрт вĕлтĕртетсе чупаççĕ,* тепре *вăл вăраххăн, меллĕн темиçе аккорд илсе харăс-харăс пусать.* (А.Арт.) |
| Ни-ни | *Кĕнекен пĕр хĕррине çеç тĕксе пăхнипе Хветутăн* ни *ăшĕ канмасть,* ни *кĕнекин вăрттăнлăхне пĕлмест вăл.* (Х.Уяр.) |

| Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвĕсем | |
|---|---|
| Çыхăну тĕсĕсем тата вĕсене палăртакан союзсем | Тĕслĕхсем |

| | |
|---|---|
| Хутсăр предложенисем умлăнхыҫлăч е пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕҫсемпе пулăмсене сăнлани. Та (те), тата. | *Пирĕн палатăран пĕри килне тухса кайрĕ те, ун вырăнне ҫав кунах ҫĕнĕ ҫынна килсе ячĕҫ.* (А.Талв.) |
| Хутсăр предложенисем хирĕҫлев пĕлтерĕшне (хăш-пĕр чух мĕнле те пулин хушма сĕме) палăртни. Анчах, ҫапах, ахальлĕн, атту, унсăрăн. | *Кăмăлласа кулни мана кăштах лăплантарчĕ,* ҫапах *эпĕ ҫав кулла хăнăхса ҫитеймерĕм-ха.* (А.Арт.) |
| Пĕр хутсăр предложенири ĕҫ е пулăм тепĕр предложенири ĕҫĕн результачĕ пулнине кăтартни. Та (те). | *Анчах эпĕ пĕр хыпарсăр ҫухалтăм* та – *вăл сан ҫураҫнă хĕрӳ пулса тăчĕ.* (А.Арт.) |
| Хутсăр предложенисем икĕ е темиҫе ĕҫрен пĕри пурнăҫланмаллине, ҫав ĕҫсенчен пĕрин ҫинче чарăнмаллине кăтартни. Е-е, те-те. | *Те ҫынсене пахчисене ҫырма хĕрринелле тăснă, те ҫырми пахча картисем ҫумне сĕвĕннĕ. (В.Элпи.)* |
| Хутсăр предложенисем умлăнхыҫлăн улшăнса пыракан ĕҫсене палăртни. Пĕрре-тепре. | *Пĕрре чухăнсем ҫĕнтерсе пыма тытăнаҫҫĕ пек* – тепре *пуянсем усалтарах кăшкăраҫҫĕ.* (Юхма.) |

Сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси

| №/№ | Чарăну палли | Чарăну палли лартмалли условисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1 | Запятой | Хутсăр предложенисем пĕр вăхăтра е умлăнхыҫлăн пулса иртекен ĕҫсене сăнлаҫҫĕ. | *Тӳпе маччи ерипен хĕрелсе-хĕрелсе пычĕ* те, *вăрман тăррисене вут хыпса илчĕ.* (Г.Еф.) |
| 2 | Тире | Хутсăр предложенисем хирĕҫле пĕлтерĕшлĕ пулсан. | *Тăшман салтакĕсем тепĕр хут ҫĕкленме тăчĕҫ* те – *ҫав вăхăтра сылтăм енче совет танкĕсем курăнса кайрĕҫ. (А.Арт.)* |
| | | Хутсăр предложенисенчи ĕҫсем хăвăрт е кĕтмен сĕртен | *Юсаса е туса хăварнă хыҫҫăн кăмакана хутса пăхаҫҫĕ* те – *тĕтĕмĕ мăрьерен мар, кăмака* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | пулнине палăртаççĕ. | *çăварĕнчен тухать е арçури пек шăхăрать. (Г.Еф.)* |
| | | Хыççăнхи хутсăр предложенири ĕç умĕн тăраканнин результачĕ е следствийĕ пулнине кăтартать. | *Пичĕ тăсăкларах та – сăмси те, çамки те, янахĕ те пĕчĕк тутипе виçеллĕ, килĕшӳллĕ. (Ю.Скв.)* |

Союзсăр хутлă предложени пайĕсем пĕр-пĕринпе интонаци пĕрлĕхĕпе çыхăнаççĕ, вĕсем хушшинчи пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене те интонаци палăртать. Предикативлă пайĕсем пĕлтерĕш енчен мĕнле çыхăннине кура союзсăр хутлă предложенисем е сыпăнуллă хутлă предложение, е пăхăнуллă хутлине аса илтереççĕ ( )

| Союзсăр хутлă предложенисене тытăмĕ енчен ушкăнлани | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Пĕрешкел тытăмлă предикативлă пайсенчен тăраççĕ. | *Ял çуммипе çап-çутă Çарăмсан юхса выртать, ун икĕ айккипе чăлт шурă çĕмĕртлĕх ырă шăршипе хăй патне туртать.* (П.Аф.) |
| 2. | Расна тытăмлă предикативлă пайсенчен тăраççĕ. | *Çав вăхăтра Илюк тăрса ларса алăк çине пăхма тытăнчĕ: кам килме пултарать кун пек вăхăтра?* (Л.Аг.) |

| Союзсăр хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси | | | |
|---|---|---|---|
| №№ | Чарăну паллисем | Хăçан лартаççĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Запятой | Предикативлă пайĕсем пĕр евĕрлĕрех ĕçсене е пулăмсене сăнлаççĕ. | *Правлени çурчĕн чӳречисем пĕр вăхăт хĕмленсе йăлкăшрĕç, унтан вĕсем тĕксĕмленсе хуралчĕç.* (Л.Аг.) |
| 2. | Икĕ точка | Предикативлă пайĕсенчен пĕри теприне мĕн енчен те пулин ăнлантарать. | *Тăван çĕр-шывран аякра пурăнакан салтаксен йăли çапла вăл: пĕр енчи çынсене* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | *тĕл пулсан яланах хăйсен çĕр-шывĕ çинчен юратса асăнаççĕ.* (А.Арт.) |
| 3. | Тире | Предикативлă пайĕсенчи ĕçсем пĕрин хыççăн тепри хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулса иртнине кăтартаççĕ. | *Сержант каласа та пĕтереймерĕ – пӳлĕм стенисем витĕр снаряд çурăлмасăр шăхăрса тухса кайрĕ.* (А.Арт.) |
| | | Хутсăр предложенисем пĕр-пĕрне хирĕçлеççĕ. | *Кун хыççăн кун, эрне хыççăн эрне иртрĕ – дивизи çав-çавах вырăнтан хускалманха.* (С.Павл.) |
| | | Хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе следстви, условипе результат, вăхăтпа результат пĕлтерĕшĕсемпе çыхăнаççĕ. | *Хӳхĕм хĕрĕн хĕрлĕ сăнĕ шуралнăçемĕн шуралса пынă, сарă кăтрисем кăвакарнă – вăл вăхăтсăр ватăла пуçланă.* (А.Арт.) |
| 4. | Точкăпа запятой | Хутсăр предложенисен калăпăшĕ пысăк тата вĕсен ăшĕнче запятойсем пулаççĕ. | *Шăрантарса пăхакан хĕвел ăшшинче пĕтĕм çут çанталăк чĕрĕлнĕ; юр айĕнчен тин кăна тухнă çĕр ирĕккĕн сывласа, пăсланса выртать, сукмак хĕрринчи тункатасем çумĕнче çĕлен калчи çемçешке симĕс чĕлхине кăларнă.* (Ю.Скв.) |

Пăхăнуллă хутлă предложени тесе предикативлă пайĕсем пăхăнулла çыхăнура тăракан хутлă пĕрлĕхе калаççĕ. Пăхăнуллă хутлă предложенире тĕп тата пăхăнуллă пайсем пур. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайче мĕн енчен те пулин ăнлантарса парать, ăна пăхăнать. Унăн ыйтăвĕ тĕп пайĕнчен тухса тăрать. Çыхăну хатĕрĕсем яланах пăхăнуллă пайĕнче пулаççĕ. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕ умĕн, хыççăн, ун варринче тăма пултарать. Тĕп пайĕ пăхăнулли ăшне кĕрсе параймасть, пăхăнулли тĕп пайĕн варринче тăма пултарать.

Пăхăнуллă хутлă предложенисене (ПХП) çыхăну хатĕрĕсене пăхса ушкăнлаççĕ: 1) союзлă ПХП; 2) союзла сăмахлă ПХП; 3) хыç сăмахлă ПХП; 4) аффикссемлĕ ПХП; 5) пайĕсем вырăнĕ–йĕркипе çыхăннă ПХП.

Пăхăнуллă хутлă предложенисен ушкăнĕсем

| №/№ | ПХП тĕсĕсем | Çыхăну хатĕрĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1 | Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем. | Пăхăнуллă союзсем: тесе, тесен, пулсан, пулсан та, пулин те; ешĕл, ехер, хуть (хăть), тăк (тĕк), мĕншĕн тесен. | *Вăрçă тухман пулсан епле чаплă туй кĕрленĕ пулĕччĕ кĕçĕр пирĕн ялта* (З.Нест.) |
| 2 | Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | Союзла сăмахсем: кам, мĕн, ăçта, хăçан, мĕншĕн т. ыт. те. | Кам *хура-шур курман, вăл çын хуйхи-суйхине те ăнланмасть.* (Ват. сăм.) |
| 3 | Хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | Хыç сăмахсем: чух, хыççăн, çинчен, пек, ĕвĕр, май, тĕле, çĕре, валли т. ыт. те. | *Кируш пасартан тăвалла урампа ярмăрккă енне хăпарнă* май *вăл ĕнер хăйпе пĕрле çĕр выртнă икĕ яштака çынна тĕл пулчĕ.* (А.Талв.) |
| 4 | Аффикссемлĕ пăхăнуллă хутлă предложенисем. | Падеж, деепричасти аффиксĕсем, -и субстантиваци аффиксĕ. | 1) *Ыйхăран шарт сиксе вăраннă пек туртăнса илетĕп те хамăр паталла икĕ аркăлла вăрăм кĕпе тăхăннă хĕрарăм уксакласа килнине куратăп.* (К.Турх.)<br>2) *Кашкăрĕ куçран çухалсан тин хытса ларнă чĕлхе хускалчĕ.* (М.Кип.)<br>3) *Савăл сухаллă янахĕ чалăшшăн çĕклесе пĕр енчен тепĕр енне пăркаланни* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | *Кируша мăнаçлă хур аçине аса илтерчĕ.* (А.Талв.) |
| 5 | Пайĕсен вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă пăхăнуллă хутлă предложенисем | Пайсен вырăнĕ-йĕрки | *Рая шкулти ăсату каç валли аппăшĕ укаллă пурçăнран çĕленĕ кĕпине утюгпа якатма пуçларĕ.* (Л.Сачк.) |

Пăхăнуллă предложенисене (ПП) пĕлтерĕш енчен ушкăнлани

| №/№ | Пăхăнуллă предложенисен тĕсĕсем | Ыйтăвĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1 | Подлежащи пĕлтерĕшлĕ ПП. | Подлежащи ыйтăвĕсем | Мĕн акатăн, *çав шăтать.* (В.с.) *Машина кĕтмен çĕртен килсе тухни Ванюшка шухăшĕсене татрĕ.* (Л.Аг.) |
| 2 | Сказуемăй пĕлтерĕшлĕ ПП. | Сказуемăй ыйтăвĕсем | Çини мĕнле, *ĕçлени çавнашкал.* (В.с.) |
| 3 | Дополнени пĕлтерĕшлĕ ПП. | Дополнени ыйтăвĕсем | *Ыйхăран шарт сиксе вăраннă пек туртăнса илетĕп те* хамăр паталла икĕ аркăллă вăрăм кĕпе тăхăннă хĕрарăм уксахласа килнине *куратăп.* (К.Турх.) |
| 4 | Определени пĕлтерĕшлĕ ПП. | Определени ыйтăвĕсем | *Тăна кĕме ĕлкĕрнĕ Иванкка* вĕçĕмсĕр ахлатса пĕр вырăнта çаврăнса çўрекен старик пăрахнă *(мĕнле чула?) чула çатăрласа тытрĕ.* (М.Юхма.) |
| 5 | Обстоятельство пĕлтерĕшлĕ ПП. | Обстоятельство ыйтăвĕсем | Саламни иккĕмĕш бригада уйне, Автан çырми патне, пырса кайнă хыççăн *(хăçан?) Андрей* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | *хăйне чи телейлĕ çын пек туйрĕ.* (А.Арт.) |

| Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси | | |
|---|---|---|
| №№ | Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
| 1. | Союзла сăмахсемпе, *мĕншĕн тесен* союзпа çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене тĕп предложенирен запятой лартса уйăраççĕ. | *Кам хура-шур курман, вăл çын хуйхи-суйхине ăнланмасть. (В.сăм.); Эпĕ хирĕç нимĕн те калаймастăп, мĕншĕн тесен хитрелĕх çинчен калаçма, уйрăмах ăна ăста куçĕпе пахалама е тиркеме чăн-чăнах хитре çын кăна пултарать.* (Ю.Скв.) |
| 2. | Ытти союзсемпе е хыççăмахсемпе, е урăх мелсемпе çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене хутлă предложени пĕлтерĕшĕ ыйтман чухне тĕп предложенирен запятойпа уйăрмаççĕ. | *Аякранах курăнса хăратса тăтăр тесе Ивук унăн хуппине те каçах шуратса хучĕ* (Х.Уяр); *Ыратни иртсе кайиччен Ванюшка ним чĕнмесĕр маччаналла пăхса выртрĕ.* (Л.Аг.) |
| 3. | Пăхăнуллă хутлă предложенири хăш-пĕр сăмахсем хутлă пĕрлĕхĕн хăш пайне кĕнине кăтартма кирлĕ чухне пăхăнуллă хутлă предложение тĕп предложенирен запятойсемпе уйăраççĕ. | Каçхине, *виçĕ угăмран çынна паллаймн тĕттĕмленсен/ Актаев урама тухрĕ.* (А.Арт.) |
| 4. | Пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшине вĕсен иккĕшĕн те сказуемăйĕсем *–и* аффикс йышăннă чухне тире лартаççĕ. | *Ыратсассăн тем те калăн: юн* юхни – *шыв* юхни *мар.* (П.Хус.) |
| 5. | Пĕлтерĕшпе пăхăнуллă предложенипе тĕп предложение иккĕшне те ăнлантаракан сăмахсене пăхăнуллă предложенирен запятойпа уйăрмаççĕ, тĕп | *Кун пек çынсем,* çил хăш еннелле хытăрах вĕрет, *çавăнталла тайăлаççĕ.* (Х.Уяр.) |

| | | |
|---|---|---|
| | предложение кăна ăнлантараканнисене уйăраççĕ. | |

| Пăханăуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ | | |
|---|---|---|
| №№ | Вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Тĕп предложени умĕнче | Йĕтем çинчи халăх киле кайса пĕтсен *Петр Михалч пĕр-пĕччененех çулне-йĕрне пăхмасăрах килнелле танккарĕ.* (А.Арт.) |
| 2. | Тĕп предложени варринче | *Ванюшка каялла пăхрĕ* те нимĕç салтакĕсем халăх çинелле пынине *курчĕ.* (Л.Аг.) |
| 3. | Тĕп предложени хыçĕнче | *Никам та астумасть* вĕсене авал кам лартса хăварнине. (Т.Пет.) |

| Урăх çын сăмахĕсене палăртмалли мелсем | | |
|---|---|---|
| №№ | Тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче урăх çын сăмахĕсене ним улăштармасăр калаççĕ. | *Старик ăна илтмĕш пулчĕ, чĕлĕмне паклаттарса шăл витĕр каларĕ:* «Аçу та хăй ĕмĕрне хăмла картинче irttерчĕ». (А.Арт.) |
| 2. | Тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем калаçу мĕн çинчен пынине палăртаççĕ. Урăх çын сăмахĕсем улшăнма пултараççĕ. | Кунта интереслĕ тĕл пулусем пулма пултарни çинчен *каласа пачĕ Валентин.* (А.Арт.) |

| Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче чарăну палли лартасси | | | |
|---|---|---|---|
| №№ | Тӳрĕ пуплевĕн вырăнĕ | Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
| 1. | Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем умĕнче | Тӳрĕ пуплев хыççăн ыйту палли е кăшкăру палли, е запятой тата тире лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ, автор сăмахĕсене пĕчĕкрен пуçласа çыраççĕ. | *«Хамăр ята çухатасран хăрана пуль çав», – терĕ мана магазин хуралçи Эптюш Валентинович. (Х.Уяр.)* |
| 2. | Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем хыçĕнче | Автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ, тӳрĕ пуплеве пысăкран пуçласа çыраççĕ, ун вĕçне ыйту палли, кăшкăру палли е точка лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ. | *Кунти чăвашсем мĕншĕн тĕне кĕмесĕр юлнă тенине хирĕç шкул умĕнчи карчăксем кулкаласа çапла ответлерĕç:* «Эпир вырăссем хăйсем те тĕне кĕме пăрахасса кĕтсе пурăннă». (Х.Уяр.) |
| 3. | Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем варринче | Автор сăмахĕсен пĕрремĕш пайĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ, тӳрĕ пуплев хыççăн запятой, ыйту палли е кăшкăру палли тата тире лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ, автор сăмахĕсене пĕчĕкрен çыраççĕ, хыççăн икĕ точка лартаççĕ. | *Çамрăк тăмани калать:* «Ак эпĕ ăна хăрах урапа çаклатам та тепринпе часрах йывăçран ярса тытам», – *тет. (И.Яков.)* |
| 4. | Автор сăмахĕсем тӳрĕ пуплев варринче | 1) Автор сăмахĕсем хутсăр е хутлă предложени пулакан тӳрĕ пуплеве татаççĕ пулсан тӳрĕ пуплевĕн пĕрремĕш пайĕ хыççăн запятойпа тире, тӳрĕ пуплевĕн иккĕмĕш пайĕ хыççăн точка, ыйту палли е кăшкăру палли лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ. | «*Кун пеккине мар тӳснĕ,* – терĕ Актаев, – *Саксонире сахал мар чул ватнă» (А.Арт.)* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | 2) Автор сăмахĕсем тӳрĕ пуплеври уйрăм предложенисем хушшинче тăраççĕ пулсан автор сăмахĕсем хыççăн точкăпа тире лартаççĕ, тӳрĕ пуплевĕн иккĕмĕш пайне пысăкран пуçласа çыраççĕ. Тӳрĕ пуплевĕн пĕрремĕш пайĕ хыççăн та, иккĕмĕш пайĕ хыççăн та тивĕçлĕ чарăну паллисем лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ. | *«Эпир çапăçăпăр-ха,* – терĕ каччă кăнтăрлахи сăмахсене аса илсе. – *Е çĕнтерӳ пулĕ унта, е ...» (А.Арт.)* |

*Хушса пани*

**Фонетикăпа графика тишкерĕвĕ**

Фонетикăпа графика тишкерĕвĕн йĕркипе паллашма «вăлтасем», «ачалла» тата «тӳпе» тĕслĕхсене илетпĕр.

I. *Вăлтасем* [вълдазэм'] — 8 сасă, 8 саспалли. Виçĕ сыпăк: *вълдазэм'*. *Вьл* — витĕнтернĕ хупă сыпăк; *да* — витĕнтернĕ уçă сыпăк; *зэм'* — витĕнтернĕ хупă сыпăк. Ударени юлашки сыпăк çине ӳкет.

Сингармонизм законĕ ку сăмах форминче пăсăлнă. 1-мĕшпе 2-мĕш сыпăксем сингармонизм законне пăхăнаççĕ, сыпăксенчи сасăсем пурте хытă (сыпăк сингармонизмĕ пăсăлман). *-Зэм'* сыпăк сингармонизм законне пăхăнмасть. [з] — хытă хупă сасă, чăваш чĕлхинче унăн çемçе мăшăрĕ çук. Ку сăмах форминче рет килĕшĕвĕ те пăсăлнă (аффиксри е сасса пула).

[в] — хупă фонема; тутапа калакан, янăравлă, хĕсĕнчĕк, кĕске, хытă хупă сасă.

[ъ] — уçă фонема; вăта ретри, вăта пусăмри, тутапа каламан уçă сасă.

[л] — хупă фонема; чĕлхе тӳрчĕн малти пайĕпе калакан, янăравлă, çурма питĕрĕнчĕк, кĕске, хытă хупă сасă.

[д] — хупă фонема; чĕлхе тӳрчĕн малти пайĕпе калакан, шавлă, питĕрĕнчĕк, янăракан, хытă хупă сасă.

[а] — уçă фонема; вăта ретри, аялти пусăмри, тутапа каламан уçă сасă.

[з] — хупă фонема; чĕлхе тӳрчĕн малти пайĕпе калакан, шавлă, хĕсĕнчĕк, янăракан, ялан хытă хупă сасă.

[э] — уçă фонема; малти ретри, вăта пусăмри, тутапа каламан уçă сасă.

[м'] — хупă фонемоид; тутапа калакан, янăравлă, çурма питĕрĕнчĕк, кĕске, çемçе хупă сасă.

II. *Тӳпе* [т'ӳб'э] — 4 сасă, 4 саспалли. Икĕ сыпăк: *т'ӳ-б'э*. *Т'ӳ* — витĕнтернĕ уçă сыпăк, *б'э* — витĕнтернĕ уçă сыпăк. Ударени юлашки сыпăк çине ӳкет.

*Т'ӳб'э* сӑмах сингармонизм законне пӑхӑнать. Икӗ сыпӑкӗ те ҫемҫе (сыпӑк сингармонизмӗ пӑсӑлман). Рет килӗшӗвӗ те пур: 1-мӗш сыпӑкра малти ретри уҫӑ сасӑ, иккӗмӗшӗнче те ҫав ретриех.

[т'] -- хупӑ фонема; чӗлхе тӳрчӗн малти пайӗпе калакан, шавлӑ, питӗрӗнчӗк, янӑраман, ҫемҫе хупӑ сасӑ.

[ӳ] -- уҫӑ фонема; малти ретри, ҫӳлти пусӑмри, тутапа калакан уҫӑ сасӑ.

[б'] -- аллофон (*б* фонемӑн ҫемҫе аллофонӗ); тутапа калакан, шавлӑ, питӗрӗнчӗк, янӑракан, ҫемҫе хупӑ сасӑ.

[э] -- уҫӑ фонема, малти ретри, вӑта пусӑмри, тутапа каламан уҫӑ сасӑ.

III. *Ачалла* [ач,ал:а] -- 5 сасӑ, 6 саспалли. Виҫӗ сыпӑк: *а-ч,ал-ла*; *а* -- витӗнтермен уҫӑ сыпӑк, *ч,ал* -- витӗнтернӗ хупӑ сыпӑк, *ла* -- витӗнтернӗ уҫӑ сыпӑк.

Асӑрхаттару. Ку тӗслӗхре *л*: сасса пӗр вӑрӑм фонема тесе пӑхатпӑр пулин те, сыпӑкланӑвӑн пӗтӗмӗшле йӗрки тӑрӑх ун пек вӑрӑм хупӑ сасӑсем ҫурмалла пайланаҫҫӗ: *ап-па*, *ат-те*, *шак-ка*, *вут-та*, *вӑй-йи*, *вырӑс-сем*, *куҫ-ҫа* (<*куҫ-са*), *сак-кӑр*. *Ач,ал:а* тӗслӗхре ударени юлашки сыпӑк ҫине ӳкет.

Фонетика енчен илсен, *ач,ал:а* хутӑш сӑмах шутланать, анчах сингармонизм законӗшӗн вӑл хытӑ сӑмах. Кунта рет килӗшӗвӗ пур: кашни сыпӑкӗнчи уҫӑ сасӑсем пӗр ретрисемех.

[а] -- уҫӑ фонема; вӑта ретри, аялти пусӑмри, тутапа каламан уҫӑ сасӑ.

[ч,] -- хупӑ фонема; чӗлхе тӳрчӗн малти пайӗпе калакан, шавлӑ, янӑракан, ялан ҫемҫе аффриката.

[л:] -- хупӑ фонема; чӗлхе тӳрчӗн малти пайӗпе калакан, янӑравлӑ, ҫурма питӗрӗнчӗк, вӑрӑм, хытӑ хупӑ сасӑ.

## Морфема тишкерӗвӗн йӗрки

1. Пуплев пайӗ. Пӗрремӗшле е иккӗмӗшле сӑмах.

2. Сӑмах тӗпӗ.

3. Сӑмах тымарӗ. (Ответа ҫак тымартан пулнӑ ытти сӑмахсемпе ҫирӗплетсе памалла.)

4. Сӑмах тӑвакан аффикссем хӑшӗсем? (Ответа ҫак аффикссем хушӑннипе пулнӑ ытти сӑмахсемпе ҫирӗплетсе памалла.)

5. Сӑмаха улӑштаракан аффикссем хӑшӗсем? Вӗсен пӗлтерӗшӗсем. (Ответа ҫав аффикслӑ ытти сӑмахсемпе ҫирӗплетсе памалла.)

6. Форма тăвакан аффикссем хăшĕсем? Вĕсен пĕлтерĕшĕсем мĕнле?

Морфемăсене çак паллăсемпе палăртмалла:

1) ирĕклĕ тымар (и. т.) — 

2) çыхăнчăк тымар (ç. т.) — 

3) сăмах тăвакан аффикс (с. т. аф.) — 

4) сăмаха улăштаракан аффикс (с. у. аф.) — 

5) форма тăвакан аффикс (ф. т. аф.) — 

«Ăслăлăхçăпа» япала ячĕн тишкерĕвĕ

1. Япала ячĕ. Иккĕмĕшле сăмах.

2. Сăмах тĕпĕ — ăслăлăхçă.

3. Сăмах тымарĕ — *ăс*. Ку тымартан пулнă сăмахсем: *ăслă* (паллă ячĕ), *ăсла* (глагол), *ăславçă* (япала ячĕ).

4. Сăмах тăвакан аффикссем: *-лă*, *-лăх*, *-çă*. Ку аффикссем хушăнса пулнă иккĕмĕшле сăмахсем нумай:

*-лă* — паллă ячĕ тăвакан аффикс, вăл пахалăха, япалан мĕн пуррине кăтартакан аффикс: *чаплă*, *вăйлă*, *хăватлă*, *хисеплĕ*;

*-лăх* — паллă ячĕ çумне хушăнса, абстрактлă пĕлтерĕшлĕ япала ячĕ тăвакан аффикс: *тĕрĕслĕх*, *хаваслăх*, *çăмăллăх*;

*-çă* — пĕр-пĕр япалапа çыхăннă ĕçе тăваканни ятне кăтартакан аффикс, япала ячĕсем çумне хушăнать: *пулăçă*, *калавçă*, *юмахçă*, *çĕнтерӳçĕ*.

5. *-па* — çыхăнтару аффиксĕ, пĕрлелĕх падежĕн аффиксĕ: *юлташпа*, *шăллăмпа*, *салтакпа*, *кĕнекепе*.

«Кĕçĕнреххисенчен» паллă ячĕн тишкерĕвĕ

1. Паллă ячĕ. Пĕрремĕшле сăмах.

2. Сăмах тĕпĕ — *кĕçĕн*.

3. Сăмах тымарĕ — *кĕçĕн*.

4. Сăмах тăвакан аффикс çук.

5. Çыхăнтару (синтаксис) аффиксĕ *-чен*. Туху падежĕн аффиксĕ: *ватăраххисенчен*, *пĕчĕкреххисенчен*, *çамрăкраххисенчен*.

6. Морфологи аффиксĕсем:

*-и* — палăрту формин аффиксĕ: *ватăраххи*, *пĕчĕкки*, *çамрăкраххи*, *çамрăкки*;

*-сен* — нумайлă хисеп аффиксĕ: *ватăраххисене*, *çамрăккисенчен*, *пĕчĕккисенче*;

*-рех* — танлаштаруллă форма аффиксĕ: *çамрăкрах*, *пĕчĕкрех*, *ватăрах*.

«Виççĕмĕртенехчĕ» хисеп ячĕн тишкерĕвĕ

1. Хисеп ячĕ.

2. Сăмах тĕпĕ — *виççĕмĕр*.

3. Сăмах тымарĕ — *виç*.

5. Çыхăнтару аффиксĕ *-тен*; туху падежĕн аффиксĕ: *тăватсăмăртан*, *иксĕмĕртен*.

6. Морфологи аффиксĕсем:

(*с*) — хушма сасă (интерфонема);

*-ĕм-ĕр* — шут хисеп ячĕн сăпатлă форми: *иксĕмĕр*, *виççĕмĕр*, *ултсăмăр*;

*-ех* — вăйлату формин аффиксĕ: *иксĕмĕрех*, *виççĕмĕрех*, *тăватсăмăрах*;

*-чĕ* — иртнĕ вăхăт формин аффиксĕ: *иккĕччĕ*, *виççĕнччĕ*, *тăватсăмăрччĕ*.

«Вĕсенче» местоимени тишкерĕвĕ

1. Местоимени. Пĕрремĕшле сăмах.

2. Сăмах тĕпĕ — *вĕсен*.

3. Сăмах тымарĕ — *вĕ*.

5. Çыхăнтару аффиксĕ *-че*. Вырăн падежĕн аффиксĕ:

6. Морфологи аффиксĕ:

*-сен* — нумайлă хисеп аффиксĕ.

«Шутламастпăр» глаголăн тишкерĕвĕ

1. Глагол. Иккĕмĕшле сăмах.

2. Сăмах тĕпĕ — *шутла*.

3. Сăмах тымарĕ — *шут*.

4. Сăмах тăвакан аффикс *-ле*: *ĕçле*, *хисепле*, *тикĕтле*.

5. Çыхăнтару аффиксĕсем:

*-п* — 1 сăпат аффиксĕ: *çыратăп*, *вулатăп*, *ларатăп*;

*-ăр* — нумайлă хисеп аффиксĕ: *çыратпăр*, *вулатпăр*, *ĕçлеместпĕр*.

6. Морфологи аффиксĕсем:

*-мас* — хирĕçлев аспекчĕн аффиксĕ: *каймастпăр*, *вуламастпăр*, *вĕренместпĕр*;

*-т* — хальхи вăхăт аффиксĕ: *ĕçлетпĕр*, *ĕçлеместпĕр*, *каймастпăр*.

## Сӑмах пулӑвӗн тишкерӳ йӗрки

1. Пуплев пайӗ.

2. Иккӗмӗшле сӑмах мӗнле мелпе (морфологи м., лексикӑпа синтаксис м. е пӗр пуплев пайӗнчи сӑмах тепӗр пуплев пайне куҫнипе) пулнӑ?

3. Морфологи мелӗпе пулнӑ иккӗмӗшле сӑмахсен модельне ҫырӑр, 2—3 тӗслӗхпе ҫирӗплетӗр. Пуплев пайӗсен ячӗсене кӗскетсе ҫырӑр: япала ячӗ — ЯЯ, паллӑ ячӗ — ПЯ, хисеп ячӗ — ХЯ, местоимени — М., глагол — Г., наречи — Н, евӗрлев сӑмахӗ — ЕС.

4. Лексикӑпа синтаксис мелӗпе пулнӑ сӑмахсене икӗ-виҫӗ тӗслӗхпе ҫирӗплетӗр.

5. Пӗр пуплев пайӗнчи сӑмах тепӗр пуплев пайне куҫнин мелӗсене (субстантиваци, адъективаци, вербализаци) кӑтартӑр, икӗ—виҫӗ тӗслӗхпе ҫирӗплетӗр.

*Хӑмлаҫӑ*, *ҫырулӑх*, *улмуҫҫи*, *сӗтел-пукан*,
*ҫамрӑк* сӑмахсен тишкерӗвӗ

1. *Хӑмлаҫӑ* — иккӗмӗшле сӑмах.

2. Морфологи мелӗпе пулнӑ: ЯЯ + аф. (*хӑмла* + -*ҫӑ*).

1. *Ҫырулӑх* — иккӗмӗшле сӑмах.

2. Морфологи мелӗпе пулнӑ: Г + аф. + аф. (ҫыр-у-лӑх): *пӗлӳлӗх*, *суйлавҫӑ*, *ҫӗнтерӳҫӗ.*

1. *Улмуҫҫи* — иккӗмӗшле сӑмах, хутлӑ сӑмах.

2. Икӗ тымар пӗрлешнипе пулнӑ: *улмуҫҫи* < *улма йывӑҫҫи*: *ҫуртри*, *хутруҫҫи*, *тӑвайкки*.

1. *Сӗтел-пукан* — иккӗмӗшле сӑмах; мӑшӑр сӑмах.

2. Икӗ тымар пӗрлешнипе пулнӑ: *сӗтел* + *пукан*: *атӑ-пушмак*, *сӗтел-пукан*, *ӗлӗк-авал*.

1. *Ҫамрӑк* — иккӗмӗшле сӑмах.

2. *Ҫамрӑк* паллӑ ячӗ субстантиваци мелӗпе япала ятне куҫнӑ: *паттӑр*, *чухӑн*, *йӑнӑш*.

## Морфологи тишкерӗвӗн йӗрки

### Япала ячӗ

1. Пуплев пайӗ.
2. Пӗрремӗшлӗ е иккӗмӗшле сӑмах.
3. Пайӑр е пайӑр мар ят.

4. Иккĕмĕшле сăмахăн пулăвĕ.

5. Камăнлăх форми: а) сăпат, б) хисеп.

6. Япала ячĕн хисепĕ.

7. Падеж.

8. Палăрту форми (пур пулсан).

«Юлташăмпа» сăмах тишкерĕвĕ

1. *Юлташăмпа* — япала ячĕ.

2. Пĕрремĕшле сăмах. Истори енчен пăхсан, иккĕмĕшле сăмах; *юл* — сăмах тымарĕ, -*таш* — сăмах тăвакан аффикс. Ку аффикспа пулнă сăмахсем: *хурăнташ*, *ентеш*, *кинтеш*.

3. Пайăр мар ят.

4. *Юлташăмпа* — камăнлăх аффиксне йышăннă сăмах. -*Ăм* — пĕрремĕш сăпат аффиксĕ, пĕрреллĕ хисепре. Тĕслĕхсем: *тусăм*, *тăванăм*, *кĕнекем*.

5. *Юлташăмпа* — пĕрреллĕ хисепре.

6. Пĕрлелĕх падежĕнче; тĕслĕхсем: *тусăмпа*, *кĕнекемпе*, *тăванăмпа*.

7. Палăрту аффиксне йышăнман.

**Паллă ячĕ**

1. Пуплев пайĕ.

2. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

3. Сăмах тĕпĕ.

4. Иккĕмĕшле паллă ячĕн пулăвĕ.

5. Хăш формăра (танлаштаруллă е вăйлă)?

6. Падеж (кăтартма пур пулсан).

7. Палăрту форми (пур пулсан). Палăрту форминчи паллă ячĕсен хисепĕ, падежĕ.

«Пысăкраххисемпе» сăмах тишкерĕвĕ

1. *Пысăкраххисемпе* — паллă ячĕ.

2. Пĕрремĕшле сăмах.

3. Сăмах тĕпĕ — *пысăк*.

4. Танлаштаруллă степеньре.

5. Пĕрлелĕх падежĕнче.

6. Палăрту форминче -*и* аффикс йышăннă; нумайлă хисепре, пĕрлелĕх падежĕнче.

**Хисеп ячĕ**

1. Пуплев пайĕ.
2. Пĕр сăмахран е сăмахсен çыхăнăвĕнчен тăрать?
3. Тулли е вак хисеп ячĕ?
4. Форма тăрăх хăш ушкăна кĕрет?
5. Сăпат (пур пулсан).
6. Хисеп.
8. Падеж.

«Иксĕмĕрпе» сăмах тишкерĕвĕ

1. *Иксĕмĕрпе* — хисеп ячĕ.
2. Пĕр сăмахран тăрать.
3. Тулли хисеп ячĕ.
4. Хисеп ячĕн сăпатлă форми.
5. Пĕрремĕш сăпат форми, вĕçленет.
6. Пĕрлелĕх падежĕнче.

**Местоимени**

1. Пуплев пайĕ.
2. Сăмах тĕпĕ.
3. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.
4. Иккĕмĕшле сăмах пулăвĕ.
5. Хăш ушкăна кĕрет?
6. Хăш пуплев пайĕ вырăнне усă курнă?
7. Сăпат. Хисеп. Падеж.
8. Палăрту форми (пур пулсан).

«Хăшĕсенче» сăмах тишкерĕвĕ

1. *Хăшĕсем* — местоимени.
2. Сăмах тĕпĕ — *хăш.*
3. Пĕрремĕшле сăмах.
4, 5. Ыйту местоименийĕ.
6. Япала ячĕ вырăнне усă курнă.
7. Нумайлă хисепре, вырăн падежĕнче.

**Глагол**

1. Пуплев пайĕ.
2. Глагол тĕпĕ.
3. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

5. Аспект (çирĕплетӳ, хирĕçлев, пултараслăх, пултарайманлăх).

6. Сăпатлă форма (наклонени, вăхăт, сăпат, хисеп).

7. Сăпатсăр глагол:

Инфинитив.

Причасти. Анлă е сайра усă куракан причасти. Палăрту форми. Наклонени, вăхăт, сăпат, хисеп, падеж (пур пулсан).

Деепричасти. Мĕнле аффикспа пулнă. Пĕлтерĕшĕ.

«Сасăламарăмăр» сăмах тишкерĕвĕ

1. *Сасăламарăмăр* — глагол.

2. Глагол тĕпĕ — *сасăла*.

3. Иккĕмĕшле сăмах. Ку глагол «сасă» сăмах çумне -ла аффикс хушăнса пулнă.

5. Хирĕçлев аспектĕнче.

6. Сăпатлă глагол. Кăтарту наклоненийĕнче, пĕрре иртнĕ вăхăтра, пĕрремĕш сăпатра, нумайлă хисепре.

## Наречи

1. Пуплев пайĕ.

2. Сăмах тĕпĕ.

3. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах.

4. Пĕлтерĕшĕ тăрăх хăш ушкăна кĕрет?

5. Танлаштару форми (пур пулсан).

«Анчах» сăмах тишкерĕвĕ: *Анчах хуларан çитрĕ*

1. *Анчах* — наречи. Асăрх.: ку сăмах тĕрлĕ контекстра союз та, татăк та пулать.

2. Сăмах тĕпĕ *анчах*.

3. Пĕрремĕшле сăмах.

4. Вăхăт наречийĕ.

5. Танлаштару форми — *анчахрах*.

## Евĕрлев сăмахĕ

1. Пуплев пайĕ.

2. Мĕне евĕрлет — сасса е сăнлăха.

Тĕслĕхсем: *Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать.*

1. *Шăнкăр-шăнкăр* — евĕрлев сăмахĕ.

2. Сасса евĕрлет.

*Шартах сикрĕ.*

1. *Шартах* — евӗрлев сӑмахӗ. Вӑйлату аффиксне *-ах* йышӑннӑ.
2. Сӑнлӑха евӗрлет.

**Хыҫсӑмах**

1. Пуплев пайӗ.
2. Пӗлтерӗшӗ.
3. Мӗнле падеж форми хыҫҫӑн тӑрать.
4. Улшӑнакан е улшӑнман хыҫсӑмах.

Тӗслӗхсем: *Ҫиле хирӗҫ утма йывӑр.*

1. *Хирӗҫ* — хыҫсӑмах.
2. Вырӑн ҫыхӑнӑвне пӗлтерет.
3. Япала ячӗн пару падеж форми хыҫҫӑн тӑрать.

Сӑпса *пекрехскер.*

1. Пекрехскер — хыҫсӑмах.
2. Евӗрлӗхе кӑтартать.
3. Япала ячӗн тӗп падеж форми хыҫҫӑн тӑрать.
4. Улшӑнакан хыҫсӑмах: танлаштаруллӑ форма аффиксне (пекрех) тата палӑрту аффиксне *-скер* йышӑннӑ (*пекрехскер*).

**Союз**

1. Пуплев пайӗ.
2. Сыпӑнуллӑ е пӑхӑнуллӑ союз.
3. Пӗлтерӗшӗ тӑрӑх хӑш ушкӑна кӗрет: а) сыпӑнтару, уйӑру е хирӗҫлев; ӑ) пирке, тӗллев, услови, тӗллевпе услови, килӗшӳ.

Тӗслӗх: *Уйӑх ҫутатать, анчах ӑшӑтмасть.*

1. *Анчах* — союз.
2. Сыпӑнуллӑ союз, хирӗҫлев союзӗ.

**Татӑк**

1. Пуплев пайӗ.
2. Пӗлтерӗш тӑрӑх хӑш ушкӑна кӗрет.
3. Улшӑнакан е улшӑнман татӑк.

Тӗслӗх: *Эпир ӗҫрен хӑрас ҫук.*

1. *Ҫук* — татӑк.
2. Хирӗҫлев татӑкӗ.
3. Улшӑнакан татӑк: ҫукчӗ (иртнӗ вӑх. аф. йышӑннӑ), ҫуках (вӑйлату аффиксне йышӑннӑ).
4. *Хӑрас* сӑмахпа (глаголпа) ҫыхӑннӑ.

**Междомети**

1. Пуплев пайӗ.
2. Хӑш ушкӑна кӗрет.

Тӗслӗх: *Чух-чух-чух*! — *йыхӑрать пӗчӗк Мишша сыснасене.*

1. *Чух-чух-чух* — междомети.
2. Хистев междометийӗ, йыхӑрнине пӗлтерет.

Тупмалли

Ум сăмах.................................................................................. 3
Чăваш Республикин саккунĕ. «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» .................................................................................. 4
Чăваш Республикин Аслă Совет Призидиумĕ Чăваш чĕлхин кунне туса хурасси çинчен йышăннă постановлении .............. 6
Чăваш халăхĕн йышĕ .................................................................................. 7
Чăваш чĕлхи – тĕрĕк чĕлхи .................................................................................. 8
Чăваш чĕлхине тĕпченин кĕске историйĕ ......................... 11
I. Раççей тĕпчевçисем ..................................................................................
II. Ют çĕр-шыв тĕпчевçисем .................................................................................. 31
Чăваш чĕлхин пирвайхи грамматикисем ......................... 32
XVIII ĕмĕрти чăваш словарĕсем .................................................................................. 34
Лексикологи .................................................................................. 36
Фразеологи .................................................................................. 44
Лексикографи .................................................................................. 45
Диалектологи .................................................................................. 48
Фонетика .................................................................................. 50
Графика .................................................................................. 56
Орфографи .................................................................................. 59
Морфемика .................................................................................. 60
Морфонологи .................................................................................. 64
Сăмах пулăвĕ .................................................................................. 67
Морфологи .................................................................................. 70
Япала ячĕ ..................................................................................
Паллă ячĕ .................................................................................. 85
Хисеп ячĕ .................................................................................. 89
Местоимени .................................................................................. 91
Глагол .................................................................................. 96
Наречи .................................................................................. 110
Евĕрлев сăмахĕ .................................................................................. 114
Хыç сăмах .................................................................................. 115
Союз .................................................................................. 117
Татăк .................................................................................. 118
Междометии .................................................................................. 121
Синтаксис .................................................................................. 123
Синтаксис единицисем ..................................................................................
Сăмах майлашăвĕн тытăмĕ ..................................................................................
Анлă сăмах майлашăвĕн тытăмĕ .................................................................................. 124
Сăмах майлашăвĕн пайĕсене çыхăнтаракан грамматика хатĕрĕсем ..................................................................................
Предложенисене каланин тĕллевне кура ушкăнлани ......... 125
Предложенин тĕп членĕсем ..................................................................................

Подлежаши пулӑвӗ ....................................................................
Сказуемӑй пулӑвӗ ....................................................................... 126
Предложенин кӗҫӗн членӗсем ........................................................ 127
Определени пулӑвӗ ....................................................................
Дополнени пулӑвӗ ....................................................................
Обстоятельство пулӑвӗ ............................................................. 128
Обстоятельствӑсен ушкӑнӗсем ....................................................... 129
Хутсӑр предложенисене тӗп членӗсем пуррипе ҫуккине кура ушкӑнлани ........................................................................
Пӗр тӗп членлӑ предложенисем ......................................................
Подлежащисӗр предложенисем .......................................................... 130
Сказуемӑйсӑр предложенисем ..........................................................
Тулли мар предложенисем ..........................................................
Кӑткӑсланнӑ предложенисем .......................................................... 131
Пӗр йышши членсен ҫыхӑнӑвӗ ........................................................ 132
Пӗр йышши членсем союзсемпе ҫыхӑнни ..........................................
Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсем хушшине чарӑну палли лартасси ........................................................................ 133
Пӗтӗмлетӳ сӑмахӗсене чарӑну паллипе уйӑрасси .......................... 134
Предложенири уйрӑмлатакан сӑмахсем — интонаципе уйрӑмлатнӑ сӑмахсем ........................................................................
Уйрӑмлатнӑ сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ ...................................................... 135
Уйрӑмлатнӑ членсене чарӑну паллисемпе уйӑрасси ............
Кӳртӗм сӑмахсемпе предложенисем .................................................... 136
Кӳртӗм сӑмахсен пӗлтерӗшӗ ..........................................................
Кӳртӗм сӑмахсемпе предложенисене чарӑну паллипе уйӑрасси ........................................................................ 137
Чӗнӳ ........................................................................ 138
Чӗнӳ пулӑвӗ ........................................................................
Чӗнӗвӗн предложенири вырӑнӗ ........................................................
Хутлӑ предложении ........................................................................ 139
Хутлӑ предложении тӗсӗсем ..........................................................
Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисен тӗсӗсем ...................................... 140
Сыпӑнтаракан союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисем ....
Хирӗҫлекен союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисем ......... 141
Уйӑракан союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисем ............
Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложении пайӗсем хушшинчи шухӑш ҫыхӑнӑвӗсем ........................................................................
Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисенче чарӑну паллисем лартасси ........................................................................ 142
Союзсӑр хутлӑ предложенисене тытӑмӗ енчен ушкӑнлани... 143
Союзсӑр хутлӑ предложенисенче чарӑну паллисем лартасси ........................................................................
Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложении .......................................................... 144

Пăхăнуллă предложенисене (ПП) пĕлтерĕш енчен ушкăнлани ... 146
Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси... 147
Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ ... 148
Урăх çын сăмахĕсене палăртмалли мелсем ...
Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче чарăну пали лартасси ... 149
Хушса пани ... 151
Фонетикăпа графика тишкерĕвĕ ...
Морфема тишкерĕвĕн йĕрки ... 152
Сăмах пулăвĕн тишкерӳ йĕрки ... 155
Морфологи тишкерĕвĕн йĕрки ...

Учебное издание

Сергеев Леонид Павлович

Андреева Евдокия Александровна

# Чувашский язык.

Справочник

*На чувашском языке*

Редактор А.Е. Горшков

Подписано в печать 18.01.2007 г.
Формат 60x84/16. Печать оперативная. Бумага писчая.
Усл. печ. л. 10,0, Тираж 100 экз. Заказ № 106

ГОУ ВПО «Чувашский государственный
педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО ««Чувашский государственный
педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Учебное издание

[illegible]

[illegible]

Чувашский язык

[illegible]

[illegible]

Редактор А.Е. Г[illegible]

Подписано в печать [illegible] г.
Формат 60x84/16. Печать оперативная. Бумага газетная.
Усл. печ. л. 10,0. Тираж 200 экз. Заказ № 10[illegible]

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38